






# ЯЛАВ

СЕНТЯБРЬ 1962



*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ЯЛАВ

Чăваш писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре кăларакан илемлĕ литературă тата общество̆па политикă журналĕ

№ 9 (395)
СЕНТЯБРЬ 1962

*XXXV çул тухать*

Уйăп МИШШИ

## Чапллă çĕнтерӳ

Тĕлĕнсе пĕтерейменччĕ
Пĕр карапĕ çĕкленсен,
Кĕç те вĕç тепри çĕкленчĕ,
Сывлăш пӳлĕнчĕ çынсен.

Ай, çĕршыв! Ай, вăй-хăват та!
Тĕлĕнтертĕн-çке, чăнах:
Вирхĕнчĕ «Восток-4»
«Восток-3» хыççăнах.

Пĕринче, ав, Николаев,
Ав, Попович тепринче.
Иккĕне вĕçмешкĕн лайăх
Çут тĕнче уçлăхĕнче.

Саламларĕ, алă çупрĕ
Пĕтĕм халăх ик яша.
Космосра шырарĕ-тупрĕ
Украинец чăваша.

Çĕр çинче пулсассăн, паллă,
Çын çынна-и, тупатех.
Куçлă уй, вăрман хăлхаллă,
Çул шырамăн-ха питех.

Çук, тет, тусăм, кăшт суятăн,
Çĕр çинче те тепĕр чух
Аташатăн та каятăн,
Çул пĕлмен — çула ан тух.

Космосра вара кусенĕн,
Юмахри пек темелле:
Ик ракетă, шăп тĕл пенĕн,
Çитрĕç-тухрĕç пĕр тĕле!

Хăй тусне Павло тĕл пулчĕ,
Ăшшăн çиçрĕ йăл кулли.
Ырă сунчĕ, алă сулчĕ:
Здоровеньки, тет, булы!

Ырă кун! — тет Андриянĕ,
Кил, вĕçер, тет, юнашар!
Икĕ тус пĕрле пулсан-и,
Йывăрри те йывăр мар.

Иксĕр çеç пĕрле-и халĕ,
Тӳпене вĕçнĕренпе
Пĕтĕм халăх чун-хавалĕ,
Чун-чĕрийĕ сирĕнпе.

Сирĕнпе Тăван çĕршывăр,
Шик ан пултăр чĕрĕрте.
Çĕнĕ-çĕнĕ çул-йĕр хывăр,
Çӳрĕр çын çитмен çĕрте!

Чиксĕр космос океанĕ,
Çук ун вĕçĕ те хĕрри.
Çавăнта çул хываканĕ
Çынсенчен чи паттăрри.

Вĕççĕр уçлăхĕ тĕнченĕн,
Çук ун тĕпĕ те тӳпи.
Çавăнта çул çӳрекенĕн
Пит телейлĕ-çке шăпи.

Чăн телейлĕ, паттăр пултăр
Икĕ йĕкĕт, икĕ яш.
Пĕр тăван пулса халь юлтăр,
Украинецпа чăваш.

Пĕр тăван мĕн пур пек халах
Пирĕн аслă пĕр йышра.
Ленин курнă çут малаллах
Уçăлса выртать умра.

Çав тăванлăхăн уявĕ
Кĕрлемест-им çĕршывра!
Çав малашлăхăн ялавĕ
Вĕлкĕшмест-им Çĕр тавра!

Юнашар пыраççĕ таччăн
Икĕ йĕкĕт космосра,
Пĕр тĕп шухăш икĕ каччăн,
Пĕр тĕллев кăна асра:

Çĕнтерес!
Тăван çĕршывăн
Хăватне çитĕнтерес!
Çĕр çине те ыррăн-сыввăн
Таврăнма вăй çитерес!

Ай, çынсем! Ай, вăй-хăват та
Çав çынсенĕн аллинче!
Таврăнчĕ «Восток-4»,
«Восток-3» Çĕр çинче!

Икĕ паттăрĕ те сывă,
Ак, çĕршыв ытамĕнче.
Савăнать Совет çĕршывĕ,
Тĕлĕнсе тăрать тĕнче.

*Август, 1962.*

ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПĔРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: 1. СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ, ЛЕТЧИК-КОСМОНАВТ АНДРИЯН ГРИГОРЬЕВИЧ НИКОЛЕВ ШУПАШКАРТИ ШКУЛ АЧИСЕМ ХУШШИНЧЕ; 2. ВИÇÇĔМĔШ КОСМОНАВТ АНДРИЯН НИКОЛАЕВ ХАЙĔН КОСМОСРИ ТĂВАННЕ ПАВЕЛ ПОПОВИЧА МУСКАВРАН УЗИН ХУЛИНЕ АСАТСА ЯРАТЬ; 3. АНДРИЯН НИКОЛАЕВ АЛЬКЕШРИ ИЛЕМЛĔ ТĔРĔСЕН ФАБРИКИНЧЕ.

Ӳкерчĕкĕсене П. Ефремов тунă.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
«13» октября 1962 г.
№



Андриян Николаев хăйĕн Мускаври хваттерĕнче КПСС Чăваш Обкомĕн секретарĕпе П. Чичикин юлташпа тĕл пулчĕ. Туслă калаçу, ăшă кулă, асаилу...



Андриян Николаева Шупашкар ĕççыннийĕсем, чăвашсен йăлипе, çăкăр-тăварпа кĕтсе илеççĕ.

# „КУН ПЕККИНЕ ХУЛА КУРМАНЧЧĔ"

**«КАЛАÇАТЬ МУСКАВ!»**

Çак икĕ сăмаха эпир куллен пĕрре кăна мар илтетпĕр. Çак сăмахсемпе эпир Тăван çĕршывăмăрăн чĕре таппине хамăр кăкăмăрта туятпăр, вара пĕтĕм пурнăç, кулленхи хĕрӳ ĕç пулас малашлăхпа — коммунизмпа — çыхăнса тĕвĕленнине яр уççăн куратпăр.

«Калаçать Мускав!»

Çак кун вара яланхи сăмахсем те пачах çĕнĕ хăватпа, çĕнĕ вăй-хăватпа, Этемлĕх халиччен каламан туйăмпа янраса кайрĕç те, чĕресенче совет халăхĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕн тĕшши çуралчĕ. Кăçалхи августăн вун пĕрремĕшĕнчи Мускав хыпарĕ совет халăхĕн нихçан иксĕлми вăй-хăватне татах тепĕр хут яр уççăн кăтартса пачĕ. Чăваш ывăлĕ Андриян Николаев — виççĕмĕш космонавт — тĕнче уçлăхне вĕççе хăпарни халăх хушшинче космос ракети хăвăртлăхĕпе сарăлчĕ. Уçса хунă чӳречесенчен шавлă урамсене радиоприемниксен сасси шăранса тухрĕ, площадьсенче халăх кĕпĕрленчĕ, ТАСС пĕлтернĕ кашни хыпара çынсем пĕр-пĕрне кала-кала кăтартрĕç, ниçта кайса кĕми савăнса ӳкрĕç, савăнăçăн вĕçĕ-хĕрри те пулмарĕ.

Августăн вун пĕрремĕшĕ Шупашкарта.

Автобус Советсен площадĕнче чарăнчĕ. Вырăна çитнисем анса юлма васкарĕç, теприсем автобуса кĕрсе вырнаçрĕç. Çав вăхăтра площадьри репродукторсенчен ТАССăн çĕнĕ пĕлтерĕвĕ илтĕнме пуçларĕ. Машинă ерипен хускалчĕ, анчах пассажирсем шофера кăштах та пулин тăхтама ыйтрĕç, çĕнĕ хыпара пурте итлесшĕн пулчĕç. Вара Андриян Николаев космосра вĕçни çинчен итлесе пĕтермесĕр те автобус вырăнтан хускалмарĕ, площадьри çуран çынсем те пĕр утăм та тумарĕç. Ку вара халăх хăйĕн тăван ывăлне чысланине, унпа мăнаçланса мухтаннине пĕлтерчĕ.

Урамра та, килти сĕтел хушшинче те, магазинсемпе клубсенче те, парксемпе кинотеатрсенче те — пур çĕрте те Андриян Николаевăн вĕçевĕ çинчен кăна калаçрĕç; радиоприемниксем мĕн çурçĕр иртиччен чарăнмарĕç. Пурне те Космос, Николаев, «Восток-3» интереслентерчĕ. Кун каçалана сулăннă çĕре урамсемпе çуртсем çинче хĕрлĕ хăмачсемпе транспарантсем, тепĕр кунне ирхине Андриян Николаев портречĕсем курăнма пуçларĕç. Шупашкар хаклă хăнана тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленни малтанхи кунах сисĕнчĕ. Вырсарникун, августăн 12-мĕшĕнче, Тăваттăмĕш космонавт Павел Попович тĕнче уçлăхне тухрĕ. Чăваш ывăлĕпе украинă халăх ывăлĕ виçĕ талăк хушши космосра пĕрле вĕççе тĕнчене тĕлĕнтерчĕç, Совет халăхĕн чапне çăлтăрсем патне çĕклерĕç, пĕтĕмĕшпе илсен тăватă миллион та улт çĕр пин километр тăршшĕ çул хыврĕç, хамăр çĕр çине ăнăçлă анса ларчĕç, Çĕршыв умĕнчи задание ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Ку вăл август уйăхĕнче пулчĕ.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче — вырсарникун — Андриян Николаев космоса вĕççе хăпарни шăп виçĕ эрне иртсен — пирĕн хаклă хăна Шупашкара килсе çитрĕ.

Çак куна Шупашкар çыннисем кăна мар, пĕтĕм республикă куç пек кĕтрĕ, республикă Виççĕмĕш космонавтпа тĕл пулма хатĕрленчĕ. Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, колхозсемпе совхозсенчи ял хуçалăх ĕçченĕсем, строительсемпе механизаторсем — пурте, пурте ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç, Андриян Николаева чыслăн кĕтсе илес ĕмĕтпе ырми-канми тăрăшрĕç.

Сентябрĕн иккĕмĕшĕ Шупашкар ĕççыннийĕсемшĕн пысăк савăнăç илсе килчĕ. Пĕтĕм хула халăхĕ урамсемпе площадьсене тухрĕ, Шупашкар аэропортĕнчен пуçласа Советсен площачĕ таранах — вунă кипометр хушши — ĕç çыннисен стени ӳссе ларчĕ. Çанталăкĕ вара Шупашкар çыннисен туйăм-шухăшне тĕрĕслесе пĕлесшĕн пулнăн туйăнчĕ, ир çинче ирех шăпăртатса çумăр çума тытăнчĕ. Анчах Андриян Николаева кĕтсе илме тухнă ĕç çыннисем çумăрлă çанталăкран шикленмерĕç, уяв тумне тăхăннă пиншер çынсем чечек çыххисемпе, хĕрлĕ ялавсемпе, космонавтсен портречĕсемпе урама тухрĕç.

Хулари çирĕм пĕрремĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсемпе Кăнтăр поселок çыннисем Виççĕмĕш космонавта аэропортра кĕтнĕ вăхăтра Советсен площадĕнче хула çыннисем чаплă митинга пухăнчĕç. Акă кĕçех хула çийĕн кĕмĕл тĕслĕ «ИЛ-14» самолет ярăнса иртрĕ. Тепĕр самантран вăл аэропорта анса ларчĕ, самолет алăкĕ умĕнче Андриян Григорьевич Николаев курăнчĕ. Чаплă хăнана кĕтсе илме пухăннă çынсем ăна тăвăллăн алă çупса, «Урра» кăшкăрса кĕтсе илчĕç, пур çĕрте те саламлă сăмахсем янраса тăчĕç. Шупашкар çыннисем Космос геройне, чăвашсен йăлипе, çăкăр-тăварпа, кăпăклă чăваш сăрипе чаплăн кĕтсе илчĕç.

Çак кун Андриян Николаев иртсе пынă Шупашкар урамĕсем чĕрĕ чечек кавирĕпе витĕнчĕç. Кашни çын аллинче тенĕ пекех чечек çыххисем пулчĕç, Космонавт ларса пыракан машинăна та чечек çыххинчен тунăн туйăнчĕ. Çавăн чухлĕ чечек Шупашкарта ӳсме пултарнине ĕненес те килмест. Космос геройĕ Советсен площадьне пырса кĕрсен пĕр вăхăт «урра» кăшкăрни, чи ăшă сăмахсемпе саламлани янраса тăчĕ, кашни



Виççĕмĕш космонавт — Андриян Николаев ларнă машинă Ленин проспекчĕпе пырать.

Андриян Григорьевич Шупашкарти Советсен площадĕнче



# *Н. С. Хрущев тата Л. И. Брежнев А. Г. Николаевпа П. Р. Попович космонавтсемпе телефонпа калаçни*

*1962 çулхи августăн 15-мĕшĕнче космонавтсем Андриян Григорьевич Николаев тата Павел Романович Попович Çĕр çине анса ларнă хыççăн темиçе сехетрен телефонпа Ялтăна, Н. С. Хрущевпа Л. И. Брежнев кинна çĕре шăнкăравлани.*

*Никита Сергеевич çав вăхăтра Англи парламенчĕн членĕпе Дж. Кронин господинпа калаçнă.*

*— Каçарăр мана,— тенĕ Н. С. Хрущев Кронина.— Манăн темиçе минутлăха пирĕн калаçăва татмалла пулать, космонавтсемпе калаçмалла. Кĕтме ыйтатăп. Кăмăлăр пулсан, тархасшăн, эпĕ космонавтсемпе калаçнă çĕре пыма пултаратăр.*

*Кронин господин çапла каланă: Эсир мана унта пыма ирĕк парсан, эпĕ телейлĕ пулатăп.*

*— Тархасшăн,— тенĕ Никита Сергеевич Хрущев.*

*Хрущев юлташ Л. И. Брежнева чĕннĕ. Леонид Ильич Никита Сергеевич патне пынă. Хрущев юлташ ăна Дж. Кронинпа паллаштарнă. Ун хыççăн вĕсем виççĕшĕ те кабинета телефон патне кайнă.*

*Малалла Н. С. Хрущев тата Л. И. Брежнев космонавтсемпе телефонпа калаçнине çырса илнине паратпăр.*



**Мускав. 1962 çулхи августăн 18-мĕшĕнче столицă ĕç çыннисем «Восток-3», «Восток-4» космос карапĕсен вĕçевне чысласа митинг ирттерчĕç. Ӳкерчĕкре: Мавзолей трибуни çинче.**

**Н. С. Хрущев:** Сывă-и, хаклă Николаев юлташ. Эсир мана лайăх илтетĕр-и?

**А. Г. Николаев:** Лайăх илтетĕп.

**Н. С. Хрущев:** Эпĕ сире питĕ лайăх илтетĕп. Эсир тĕнче уçлăхĕнче малтанхи кун вĕçнĕ чухнехи пекех хастар сассăра илтетĕп.

**А. Г. Николаев:** Спасибă, спасибă!

**Н. С. Хрущев:** Сире саламлама питĕ хавас. Эпĕ çав тери савăнатăп, туйăмсене палăртма мĕнле сăмахсем суйласа илмелле — пĕлместĕп.

**А. Г. Николаев:** Спасибă, Никита Сергеевич. Пысăк спасибă!

**Н. С. Хрущев:** Эсир пирĕн Тăван çĕршыва мухтава кăлартăр, Совет Союзĕнчи халăхсене тата хăвăр чăваш халăхне мухтава кăлартăр. Хăшпĕр çынсем, уйрăмах урăх çĕршывсенче, Совет Союзĕнчи нацисен йышне япăх пĕлеççĕ, Чăваш Автономиллĕ Республики пуррине пурте мар пĕлеççĕ. Халĕ Совет Союзĕнче чăвашсем пуррине, чăваш халăхĕ совет халăхĕсен аслă социализмлă çемйинче тивĕçлĕ вырăн йышăннине тата вăл коммунизм тăвас, техникăна аталантарас, тĕнче уçлăхне пăхăнтарас ĕçре хăй енчен чаплă çитĕнӳ тунине пĕтĕм тĕнче пĕлĕ.

**А. Г. Николаев:** Спасибă, Никита Сергеевич.

**Н. С. Хрущев:** Чăвашсем, мĕн пур совет çыннисем пекех, савăнаççĕ, сирĕн паттăр ĕçĕрпе мухтанаççĕ пулĕ, тесе шутлатăп.

**А. Г. Николаев:** Ырă сăмахсемшĕн сире, Никита Сергеевич, тав тăватăп.

**Н. С. Хрущев:** Эпĕ Донбасри рудниксенче ĕçленĕ чухне унта чăвашсем нумай ĕçлетчĕç, эпĕ вĕсене лайăх пĕлетĕп, чăваш ĕçчен халăх.

**А. Г. Николаев:** Никита Сергеевич, тепĕр хут спасибă ăшă сăмахăршăн, спасибă!

**Н. С. Хрущев:** Совет Союзĕнчи мĕн пур халăхсем — эпир пурте хамăр вăя паракан пĕрлехи аслă ĕçшĕн — коммунизм тăвас ĕçшĕн пыракан кĕрешӳре пĕрлешрĕç. Пирĕн халăхсем пĕрлехи вăйпа экономикăна, наукăна аталантараççĕ, культурăна çĕклеççĕ, коммунизм обществи ăнăçлăн тăваççĕ.

Андриян Григорьевич, калăр-ха, сирĕн вĕçев мĕнле иртрĕ тата эсир хăвăра мĕнле туятăр?

**А. Г. Николаев:** Никита Сергеевич, пĕлтерме ирĕк парсамăрччĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш секретарĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ юлташ!

Питĕ савăнса, Сире çапла пĕлтеретĕп: Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата Совет правительстви панă задание ăнăçлă пурнăçланă. «Восток-3» космос карапĕ тĕнче уçлăхĕнче виçĕ талăк вĕçрĕ. Виçĕ талăк хушши эпĕ хамăн пĕлĕтри тăванпа, «Восток-4» карапа тытса пынă Попович подполковникпа пĕрле вĕçрĕм. Мĕн пур системăсем йĕркеллĕ ĕçлерĕç, хама питĕ лайăх туятăп, çĕнĕ вĕçевсене хатĕр. Космонавт-летчик Николаев майор.

**Н. С. Хрущев:** Николаев юлташ! Ман шутпа, эсир асăрхамасăр виçĕ талăк вĕçрĕм тесе каларăр пулĕ. Эсир тăватă талăк вĕçрĕр.

**А. Г. Николаев:** Çапла, Никита Сергеевич, эпĕ тăватă талăк вĕçрĕм. Анчах Поповичпа пĕрле, летчиксем каланă пек, мăшăрлăн эпир виçĕ талăк хушши вĕçрĕмĕр. Эпир пĕрмаях радиопа тачă çыхăну тытрăмăр, пĕрмаях калаçрăмăр. Вĕçев питĕ лайăх иртрĕ.

**Н. С. Хрущев:** Сире тепĕр хут саламласа ырă сывлăх сунатăп. Питĕ хавас. Мухтанатăп. Калас пулать, сирĕншĕн питĕ хумхантăм.

**А. Г. Николаев:** Эпĕ, Никита Сергеевич, сирĕнтен сахалрах хумхантăм пулĕ.

**Н. С. Хрущев:** Тен, эсир сахалрах та хумханнă пулĕ. Эсир тĕнче уçлăхĕнче пулнă, çак вĕçеве тĕплĕн хатĕрленнĕ, эпĕ вара Çĕр çинче пулнă. Çак кунсенче, Çĕр çинче утса, эсир тĕнче уçлăхĕнче мĕнле вĕçни çинчĕн ялан шутласа çӳрерĕм. Эсир хăвăра мĕнле туйни çинчĕн, пирĕн космонавтсем Николаевпа Попович юлташсем мĕнле вĕçни çинчен шухăшларăм. Эсир хăвăра лайăх туйни, хавас пулни çинчен, техникă пĕр кăлтăксăр ĕçлени çинчен пĕлсен, эпĕ кăштах лăплантăм. Эпир пурте сирĕнпе мухтанатпăр, çак чаплă карапа тунă ученăйсемпе, инженерсемпе, техниксемпе, рабочисемпе мухтанатпăр.

**А. Г. Николаев:** Спасибă, Никита Сергеевич, спасибă!

**Н. С. Хрущев:** Сире Мускавра кĕтетĕп. Эсир Мускава çитнĕ тĕле эпĕ те унта пулатăп, сире Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Президиумĕн тата Правительствăн членĕсемпе, халăх представителĕсемпе пĕрле кĕтсе илетĕп. Сывă пул, çывăх кунсенче тĕл пуличчен. Телефон патне, тархасшăн, Попович юлташа чĕнĕр-ха.

**А. Г. Николаев:** Спасибă, Никита Сергеевич! Çывăх кунсенче Мускавра тĕл пуличчен. Трубкăна Попович подполковника паратăп.

**П. Р. Попович:** Алло, Никита Сергеевич!

**Н. С. Хрущев:** Сире итлетĕп, Павел Романович.

**П. Р. Попович:** Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш секретарĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ юлташ! Сире çакăн çинчен пĕлтерме хавас: ушкăнпа пĕрле вĕçме правительствă панă задание ăнăçлă пурнăçланă. «Восток-4» карап тата космонавт Андриян Николаев майор тытса пынă «Восток-3» карап виçĕ талăк пĕрле вĕçрĕç, пĕр-пĕринпе радио урлă çыхăну тытрĕç. Сывлăх питĕ лайăх. Партипе правительствăн кирек мĕнле заданине те пурнăçлама хатĕр. Подполковник Попович.

**Н. С. Хрущев:** Саламлатăп сире, Попович юлташ. Сирĕн сасă хастарлă янăранине, эсир: сывлăх питĕ лайăх, партипе правительствă паракан кирек мĕнле задание те пурнăçлама хатĕр, тесе пĕлтернине илтме хавас. Сире саламлатăп тата иксĕлми, лайăх, çирĕп сывлăх сунатăп.

**П. Р. Попович:** Пысăк спасибă, Никита Сергеевич.

**Н. С. Хрущев:** Щыро витаю вас. (Сире хытă ыталатăп).

**П. Р. Попович:** Спасибă, тĕл пуличчен.

**Н. С. Хрущев:** Эпĕ Николаев юлташа каларăм ĕнтĕ, эпир сире тивĕçлипе кĕтсе илĕпĕр. Эсир тунă çитĕнӳсемшĕн пĕтĕм халăх савăнать, уяв тăвать.

**П. Р. Попович:** Я перший радяньский космонавт Украины. (Эпĕ Украинăри пĕрремĕш совет космонавчĕ).

**Н. С. Хрущев:** Пĕтĕм Украинă уяв тăвать, теççĕ мана. Сирĕн аçу та мăйăхне Тарас Бульба пекех пĕтĕрсе хунă.

**П. Р. Попович:** Ман атте мăйăхне пĕтĕрет!

**Н. С. Хрущев:** Эпĕ сирĕн аçун фотоӳкерчĕкне «Правда» хаçатра куртăм. Вăл чăн-чăн Запорожье казакĕ. «Пар-ха утпа хĕç»,— тесе каланăн туйăнать.

**П. Р. Попович:** Вăл, Никита Сергеевич, Тарас Бульба пекех.

**Н. С. Хрущев:** Çапла, ун пекех. Питĕ хавас, Попович юлташ, сирĕнпе мухтанатăп, сирĕнпе пĕтĕм совет халăхĕ мухтанать. Украинă мухтанать. Украинецсем кăна мар, вырăссем те, Совет Союзĕнчи мĕн пур халăхсем, çĕр çинчи тӳрĕ кăмăллă мĕн пур çынсем, мĕн пур халăхсемпе мирлĕ пурăнма шутлакан çынсем мухтанаççĕ. Вĕсем çак паттăр ĕçпе акă мĕншĕн мухтанаççĕ: унăн пĕлтерĕшĕ нацишĕн кăна мар пысăк, унăн пĕлтерĕшĕ наци чиккинчен инçете тухать, вăл мĕн пур халăхсен ырлăхĕшĕн, мирпе прогресшăн тунă паттăр ĕç пулса тăрать.

**П. Р. Попович:** Пысăк спасибă. Эпĕ сире питĕ лайăх ăнлантăм.

**Н. С. Хрущев:** Сире ăнăçлăх сунатăп. Сире ывăнтармăп, халĕ канма кайăр, халĕ ĕнтĕ лайăххах канăр. Тĕнче уçлăхĕнче сирĕн шăплăх кунтинчен ытларах пулнă пулин те, эсир питĕ ывăнтăр пулĕ. Эпир сире çавăн пек шăплăх туса парăпăр тесе калама пултараймастпăр.

**П. Р. Попович:** Ку тĕрĕс. Кунта шăрăх, лере вара питĕ канлĕччĕ.

# КОСМОНАВТ-3

А. Г. Николаев кос навт-лётчик черетлĕ т нировкă хыççăн (ТА фотохроники).



Ҫаранти кушăркана кĕрхи курăк ҫиппе хуллен чăштăртатса ларать. Йăмра ҫулҫисем унта-кунтах чала кĕнĕ, сарăхсах ларнисем, татăлса, вĕлтĕртетсе ӳкеççĕ. Шыв хĕрринчи ҫӳçе тĕмисем хушшинчен, ҫук-ҫук та, кайăк-кăвакалсем ҫунаттисемпе шаплаттарса вĕçсе хăпараççĕ.

Пӳртре шăп. Пĕр вăтă сехет кăна ăмсанмалла пĕр виçеллĕн, тикĕссĕн шаккать.

Тик-так... Тик-так... Тик-так...

Миçе хут ĕнтĕ ҫĕнĕ сехет туянса пама тăман пулĕ ачисем амăшне, анчах вăл килĕшмест. Хаклă уншăн ҫак кивĕ, вăтă сехет. Ăна пăхса-çке вăл ирсерен тăнă. Фермăна утнă. Ĕне сунă. Ăна пăхса-çке вăл ачисене шкула пуçтарса кăларса янă...

Вĕсен кайăк чĕпписем пек вĕçсе саланчĕç ĕнтĕ ун ачисем. Пăхать те амăш тахçанхи тус евĕр хăнăхса ҫитнĕ сехет ҫине, нумайăшне, нумайăшне аса илет...

Ак, аслă ывăлĕ, Иван, ашшĕпе пĕрле Ҫавал ҫине пулла кайма хатĕрленет, пăхăсăн — Андрейкă та ура ҫинче. Ăна та илĕр! Ун та пулă тытас килет. Итлеттерет-итлеттеретех вĕт, пĕчĕкскер. «Атя, эппин, пуçтарăн», теççĕ пиччĕшĕпе ашшĕ, килĕшсе. Кама хывнă анчах! Ҫав тĕрлĕ ҫине тăраканскер. Ак халĕ пур: вĕçет!

У н т а... мар-и, сасартăк, вăл вĕçет! Юрă Гагаринпа, Герман Титовпа мар-и аслă тĕнче уçлăхне ҫул хывать!

Амăш чĕри, тем, канăçсăр. Сисĕмлĕ-çке амăш чĕри — вăл вĕсемпех. Тен, апла мар! Ҫулла, отпуска, яла килсе кайрĕ вĕт-ха, ăна-кăна нимĕн те шарламарĕ, кулать, шӳтлет çеç...

Кам вĕсене, ҫар ҫыннисене, пĕлет, темле службă вĕсен! Ак, Ваньă тесен вăт, Ваньăн йăлтах паллă: участок начальникĕ. Леспромхозра ĕçлет. Кире станцийĕнче пурăнать, хăйĕн çемйи. Андриянпа пĕрле Сĕнтĕрвăрринче вăрман техникумĕнче вĕренчĕ. Ҫулĕ-йĕрĕ вĕсен, ав, тĕрлĕрен пулчĕ. Пĕри — лесник, тепри — летчик.

Зина Шупашкарта. Юн илекен станцире медицинă сестри пулса ĕçлет. Врачсем, тавах турра, ырă калаççĕ ун пирки. Епле ан савăнтăр-ха ĕнтĕ амăшĕ! Чи кĕçĕнни — Петĕр — шофер. Ҫара кайса килчĕ, килтех халь...

Ҫапла ҫав, ача тени вĕçен кайăк чĕппипе пĕрех вăл. Халь ҫумра, юнашар, кур унтан — таçта инçетре. Ҫыру тавраш̆ĕ те самайранпах килмест ав...

Чӳрече умнерех куçса лармалла-и ĕнтĕ — почтальон курăнмасть-ши урамра! Ҫук, ни картишне кĕни, ни иртсе кайни курăнмасть. Ҫук, курăнмасть паян пысăк сумкă ҫакса ҫӳрекен Пелагея Филипповна Козина.

Тунсăхлать, хăш! сывласа илет Алексеевна. Сĕтел ҫинче выртакан куçлăхне илсе тăхăнчĕ. Петĕр валли чăлха ҫыхас. Эккей, тем паян алă пит кăнттам, ҫыхăнмасть чăлха. Вара тетрадь уçса хурать те амăшĕ, ҫырма тытăнать: «Сывă-и, хаклă, юратнă ывăлăм Андриян...»

Сасартăк ҫенĕхре ура сасси илтĕнсе каять. Алăкра — Пелагея Филипповна.

— Ҫыру илсе килтĕм, Анна Алексеевна. Андриянран пулас!..

Шывланать амăшĕн куçĕ. Вăл пĕрре сехет ҫине, тепре ывăлĕн стена ҫумĕнче ҫакăнса тăракан сăн ӳкерчĕкĕ ҫине пăха-пăха илет, канверта аллинче ҫавăркалать.

— Унран... Кăçал ҫулла киле килсе кайрĕ. Ҫук-ҫук та, килсе курса каять вара ҫапла тăван Шуршăл ялне. Манмасть ҫуралнă ҫĕршывне. Килсен, Ҫавал хĕррине кайса ҫӳрерĕ. Ача чухнехине, вăрҫă ҫулĕсене аса илчĕ. «Тавтапуç, анне,— тет,— эс пире йывăр вăхăтра вĕрентнĕ,..» — тет. Халĕ ав ҫырать: «Пушă вăхăт питĕ сахал. Вĕренӳ. Вĕçевсем. Службă. Эс ĕнтĕ ан айăп ту!»

## СУРДОКАМЕРĂРА ТАТА... ПУЛĂРА

Ҫапла, çăмăл мар ку службă!

Сурдокамерăна тӳлек юхан шывăн ҫыран хĕррипе танлаштарайман. Сурдокамерăра пуласси лăпкă кас пулăра ларасси мар. Унта ҫынсем космос шăплăхне хăнăхаççĕ. Ҫапах та, ман шутпа, пулăра ларассипе сурдокамерăра пуласси пĕр пеклĕхĕ те пурах пек туйăнать. Унта та, кунта та лăпкăлăх, шăплăх!

Тăван Ҫавал хĕрринче мар-и Андриян шăплăха хăнăхма вĕреннĕ!! Ача чухне вăл унта, вăлтана кăртăш, уланкă хыпасса кĕтсе, пулăра ларнă. Нихăçан та пулăран пушă алăпа таврăнман. Ун чухнех вăл лăпкă, чăтăмлă, тӳсĕмлĕ пулнă, ҫине тăма пĕлнĕ. Мĕн тери пулăшнă, мĕн тери кирлĕ пулнă пурте ку ăна каярахпа!

Сурдокамерăра та кирлĕ пулчĕ ку. Ниçта пĕр сас-чӳ кĕмен ҫĕрте, калама ҫук шăплăхра ҫыннăн кăмăл вăйне, ăсне, хăйне хăй тытма пĕлнине тĕрĕслеççĕ. Андриян та ку йывăр экзамена, Юрий Гагаринпа Герман Титов пекех, чыслăн тытать. Акă, вăл сурдокамерăра чухне дневнике ҫырнисем: «Хама хам аван туятăп». «Лăпкă ҫывăрнă». «Кăмăл хаваслă».

Мĕн вĕт-ха, вăл ҫав вăхăтра нумай кунсем хушши ҫын тĕсне те курман, ҫын сассине илтмен. Пулăра ларасси мар вара ку! Камерăра шалта çеç ҫутă. Тул енчен — нимĕн те ҫук: сасă та, ҫутă та, ытти те... Камерăн атмосфери те хăйĕн.

Сĕтел ҫинче — кнопкăсем, лампочкăсем. Андриян кнопкăсене пусать:

— Ҫĕр! Эпĕ — космонавт. Черетлĕ пĕлтерӳ.

Андриян термометр ҫине пăхать:

— Камерăра температурă 20 градус. Пусăм... Пĕрремĕш влагомер... 60 процент, иккĕмĕш — 58. Хама хам аван туятăп! Пурте йĕркеллĕ, ҫывăрма выртатăп...

Лăпкă пулăç паян, лăпкă космонавт.

## «ДУБЛЕР» ҪИНЧЕН

«Космонавт-виççĕ — тĕлĕнмелле тăнăç кăмăллă, чăтăмлă, паттăрла хăюллă ҫын,— тесе ҫырнă ун ҫинчен Герман Титов.—Иккĕленмелли ҫук, хăйĕн пулас вĕçевĕпе вăл эпир Юрий Гагаринпа Тĕнче уçлăхĕнчи пĕрремĕш рейссенче тунине нумай пысăклатĕ.

Вăл вăтам пӳллĕ çамрăк ҫын. Тĕлĕнмелле лăпкă, сăпайлă, ăслă, тăнлă, сăнĕпе кăштах Алексей Маресьев летчика аса илтерет. Унпа сехечĕ-сехечĕпе юнашар ларатăн та юнашар ҫӳретĕн ак, ҫав хушăра, кирлĕ мар пулсан, унран пĕр сăмах та илтеймĕн. Нумайăшĕ эпир, космонавтсем, ҫак ырă, ăслă та вăйлă ҫынна, кирлĕ те тĕрĕс утăма хăвăрт тупма пултаракан, хыпăнса ӳкмесĕр, кирек хăçан та тĕрĕс-тĕкел шухăшлама пĕлекен ҫынна чунтан саватпăр. Ун пек ҫынпа ĕмĕр ĕçлеме пулать. Сăмах пачĕ пулсан, мĕн сăмах панине тăвать-тăватех.

Малтан Космонавт-Виççĕ туртатчĕ. Врачсем вара ку ҫывлăхне ан сиенлетĕр тесе пăшăрханатчĕç. Паллах, вăл çамрăк, организмĕ пирус тĕтĕмпех парăнмасть. Анчах пĕррехинче ак кăкăр туллин ҫăтса илнĕ тĕтĕме темпе вăрăммăн сăвăрса кăларчĕ те:

— Пăрахатăп! — терĕ, ҫавăнтах пирус тĕпне ура айне пăрахса таптарĕ. Унтанпа туртмасть.

Пĕррехинче эпир паллă ученăйпа, наукăсен докторĕпе, калаçрăмăр. Вăл, темле-çке, уйрăмах Космонавт-Виççĕ куçларĕ те ăна, каларĕшле, ыйту айнех турĕ. Пирĕн тус ăна лăпкăн, тимлĕн тăнласа тăчĕ, ученăя хирĕç ун нимĕн хуравлама та ҫук тейĕн. Унтан, яланхи пекех, лăпкăн кăна ҫапла каларĕ:

— Вĕçевре ку инкек пулмĕ, мĕншĕн тесен...

Кашни сăмаха уçăмлăн, вырăнлă каласа, тĕплĕн, ĕçе витĕр пĕлсе ăнлантарса пачĕ кăткăс ыйтăва.

Космонавт-Виççĕ! Ахăртнех вăл пирĕн хушăра чи лăпкăраххи пулĕ. Вăл хăçан та пулин пăлханса ӳкессе, ҫухалса каясса ăшăма та илместĕп. Ҫак ҫыннăн пĕррехинче реактивлă самолета ирĕксĕрех аэродромран чылай аякра антарса лартма тивнĕ. Тăнăç кăмăлне, лăпкăлăхне пула çеç вăл вилĕмрен ҫăлăнса юлнă».

Ахальтен мар эпĕ кунта Герман Титов ҫырнине ҫакăн пек вăрăм илсе кăтартрăм. Ĕнер ку ҫын пирĕншĕн пуриншĕн те Космонавт-Виççĕ кăна пулнă. Паян ун ятне пĕтĕм тĕнче пĕлет!

## ЛĂПКĂЛĂХ

Ҫапла, пулнă ку. Тренировкă вăхăтĕнче Андриян Николаев тытса пыракан реактивлă машинăн двигателĕ ванса чарăнса ларнă, анчах летчик самолета пăрахман. Вăл ăна уя, аэродромран инçех мар, «хырăм» ҫине антарса лартнă.

— Пăрах машина, парашютпа сик!— хушнă Ҫĕр.

— Кун пек самолета пăрахма пултараймастăп,— тенĕ те хирĕç летчик, самолета ҫăлса хăварнă.

Командовани Николаева сехет парса наградăланă. Халĕ те-ха вăл ăнах ҫыхса ҫӳрет.

«Москва» маркăллă сехет. Ун хыçал хупăлчи ҫине ултă сăмах касса ҫырнă: «Л-ту Николаеву А. Г. от. командира части. 24.06.56 г.»

Вĕренӳре, занятире, час командирĕ кайран офицерсенчен:

— Николаева паттăрла ĕç тума мĕн пулăшнă?— тесе ыйтнă. Ҫавăнтах, пурă илсе, туска ҫине ҫапла ҫырнă:

«1. Лăпкăлăх.
2. Хăюлăх.
3. Хăвăрт тавçăрса илме пĕлни.
4. Профессионалла пысăк ăсталăх».

Мана вара Андриян Николаев ҫак ыйтăва хирĕç кĕскен çеç ҫапла хуравларĕ:

— Л-ă-п-к-ă-л-ă-х...

## ЫТТИСЕМ ПЕКЕХ

Эпир Андриян Григорьевич ҫуралса ӳснĕ ҫуртра.

Космонавт амăшĕ калаçăва хушăран кăна хутшăнкалать:

— Тантăшĕсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман ачаччĕ. Чăн та, тӳлекрехчĕ, шухăшласа калаçма пĕлетчĕ.

— Мĕн тери лăпкăччĕ!— сăмах хушать Андриянăн ача чухнехи тусĕ Николай Иванов, «Победа» колхоз платникĕ.—Чăрсăр ача марччĕ Андриян, анчах хăравçă та пулман. Ачасемпе ҫапăçман, хăйне тапăнакана вара тивĕçлипех тавăрса панă... Уйрăмах хĕрачасен хутне кĕретчĕ.

— Вăт ку тĕрĕс!— килĕшет Анна Алексеевна.

— Вĕренессе ыттисем пекех вĕренетчĕ,— калать малалла Иванов, ҫавăнтах кулса илет:—Пĕлĕтрен ҫăлтăр татса илмен ун чух... Пĕр сăмахпа, ыттисем, тантăшĕсем, пекех. Анчах пиртен, ачасенчен, пур ĕçре-вăйăра та чи ҫине тăраканскерччĕ.

А. Г. Николаев Мускаври Хĕрлĕ площадьре (ТАСС).





Г. С. Титовпа А. Г. Николаев Титов космосри вěçеврен таврăннă хыççăн (ТАСС).

Çичě çул вěренсе пěтерсен, Андриян техникума вěренме кěнě. Йывăр вăхăт пулнă ун чух. Вăрçă. Çиме те, тăхăнма та укçа çитмен. Андриян çулла колхозра ěçленě, хěлле — вěреннě.

Эпир сăн ÿкерчěксем пăхатпăр. Акă Андриян иккěмěш класа çÿренě чух çаптарнă ÿкерчěк. Каçăртарах сăмсаллă, кěре сăн-питлě ача фотоаппарат объективě çине тÿп-тÿрě пăхнă. Варринче — учительницă, Клавдия Ивановна Семенова.

Ăçта халě Андриянпа пěр класра ларнисем!

— Шура Егоровăпа Тамара Овчинникова,— тет Николай Иванов,— Шупашкарта ěçлеççě. Лидия Беловăпа Тоньă Васильева — ялтах, колхозра ěçлеççě. Аверкий Абрамов — экскаваторщик, Куйбышеври В. И. Ленин ячěпе хисепленекен ГЭС тунă çěрте ěçленě, Леонид Белов — офицер, Анатолий Терентьев — шахтер...

Ак ку сăн ÿкерчěкре пěр тăвансем амăшне Сěнтěрвăрринчен ярса панă пулнă. Вăрман техники техникумěн студенчěсем Иванпа Андриян çěнě костюмпа, çěнě атăпа. Çиес çăкрине те çимен, çыврас ыйхине те татнă Анна Алексеевна, ачисемшěн тăрăшнă.

Альбома малалла уçатпăр. Карелирен ярса панă ÿкерчěксем (Андриян унта техникум хыççăн леспромхозра ěçленě). Ак çарта ÿкерттернисем. Çамрăк çын пакунсемпе. Рядовой. Курсант. Офицер.

Шуршăлти сакăр çул вěренмелли шкул Çавалăн чăнкă çыранěнчен инçех мар, тÿпемре, ларать. Икě хутлă çурт. Кунта Андриян вěреннě. Кайса курар.

Иккěмěш хутри пěр пÿлěмре çамрăк техниксем ěçлеççě. Кунта физикă преподавателě Иван Михайлович Романов кăтартса пынипе Андриян Николаев тунă электростатикă машинин моделě упранать.

— Андриян тете çулла яла килсен, эпир унпа колхоз итемě çинче ěçлерěмěр. Тырă алларăмăр,— тет Виталий Терентьев школьник.

— Эпě те унпа итем çинче ěçлерěм-çке. Эс мěн, манса кайрăним!— кÿренет космонавт аташě Андриян Павлов.

Ачасем хăйсен янташěпе — «Андриян тетепе» мухтанаççě. Анчах вěсем ун чух вăл летчик кăна мар, летчик-космонавт иккенне пěлнě-и-ха!! Пěлмен.

— Техникăна, точнăй наукăсене, çар ěçне юрататчě Андриян Григорьевич,— аса илет Иван Михайлович.—Лабораторире опытсем тума нихăш ачаран хавасчě. Шел, детекторлă приемникпа пěчěкçеç пăс хуранě упранса юлман. Андриян та хутшăннă вěсене тăвас ěçе...

Мана Андриян Николаевăн 1943 çулхи табельне кăтартрěç — сарăхнă хут татки. Мěнле вěреннě-ха вăл!

Физикă — «аван», географи — «аван», вырăс чěлхи (çырса тата сăмахпа каласа) — «аван». Дисциплинă — «питě аван».

Космонавт ачалăхě, çамрăклăхě çинчен мěн май килнě таран ытларах та ытларах пěлес килет. Ун шăллě Петр Сěнтěрвăррине кайса курма сěнчě.

— Анчах малтан киле кěрсе тухар, çырткалар кăшт,—чěнет вăл.

Пÿртре чÿрече янахě çинче— Толстойăн «Воскресенийě», Шолоховăн «Уçнă çеремě».

— Нумаях та пулмасть Андриян вуларě ку кěнекесене,— тет Петр.

— Пирěн апата çисе пăхмасăр сире ниçта та кăларса ямастăп,— «хăратать» Анна Алексеевна.

Петьă, ак, кăвак петлицăллă шинеле тăхăнать.

— Ну, хăш енчен летчик мар-ха эпě!— шÿтлет вăл.—Пичче хăварчě ку шинеле. Вăл Мускава тухса кайнă чух çанталăк шăрăхчě. Анне çаплах кулянса çÿрерě,— кулать Петр.—Андриян çул çинче шăнать пуль, тет. Çулла шăнса пăсăласран хăрать!..

### «ВИÇÇЕПЕ» «ПИЛЛĚК»

Сěнтěрвăрри... Атăл хěрринче ларакан тÿлек хула. Ун урамěсенче космонавт утса çÿренě. Вăл занятие васканă, техникум скверěнче ăна бронзă Ленин кěтсе илнě. Ильичăн ăшшăн пăхакан ěмěрех чěрě куçěсем çамрăка вăй кÿнě. Вăрçă çулěсенче вěренме çăмăл пулман. Кил-йыша, тата, пысăк инкек кěнě: 1944 çулта Николаевăн ашшě вилсе кайнă.

Андриян сасартăк хăйне, темле, ÿссе çитнě çыннăн туйса илнě. Вăл тата тěплěнтерех ěçлеме-вěренме тытăннă, час-часах тарăн шухăша кайса ларнă. Ентě вăл вăхăта пачах вак-тěвекпе ирттерсе сая яма пăрахнă.

Сěнтěрвăрринчи вăрман техники техникумě — çěршывăмăрти тахçантанхи вěренÿ заведенийěсенчен пěри. Ăна 1895 çулта малтан вăрман шкулě пулнă шкулта уçнă. Революциччен шкул хыснапа помещиксен владенийěсем валли вăрман кондукторěсем вěрентсе кăларнă. Халě техникум çěршыва квалификациллě специалистсем парать.

Техникум директорěн заместителě Степан Иванович Можаровский мана Андриян Николаев студентăн личнăй делине кăтартрě.

Автобиографи: «1929 çулхи сентябрěн 5-мěшěнче çуралнă. 8 çултан пуçласа Шуршăлти тулли мар вăтам шкула çÿреме пуçланă. Физикă, оборонă, хор кружокěсенче тăнă. Кил-йыш колхозра...»

Тулли мар вăтам шкул пěтерни çинчен калакан свидетельствăран çырса илни. Техникума илме ыйтса çырнă заявлени (1944 çулхи сентябрěн 14-мěшě).

Хулăн тетрадь — «Вěренекенěн производствă практики вăхăтěнчи ěç дневникě». Характеристикăсем. Пěрне илсе кăтартас килет: «Шупашкарти лесхозра практикăра пулса, пуçарулăхпа, хăй ěçне лайăх пěлнипе палăрчě. Лесхозăн практикăлла ěçěсене аван тěш-



Укерчěксенче: 1). Шупашкар. Сентябрěн 2-мěшě. Космонавт-янташа кěтсе илме тухнă ěç çыннисен колоннисем Советсен площачěпе иртсе пыраççě; 2) Мускав. Вěçеврен таврăнсан. А. Г. Николаев йăмăкěпе амăшě тата КПСС Чăваш Обкомěн пěрремěш секретарě С. М. Ислюков хушшинче; 3) Шуршăл. Космонавт пиччěшě Иван телефон тăрăх Софи хулипе калаçать.

Э. Езерихин, Б. Мясников (ТАСС), А. Припалов ÿкерчěкěсем.





# Ака-суха юрри

Аркадий ЭСХЕЛЬ
*Очерк*

Сӑн ӳкерчӗкӗсене А. ПРИПАЛОВ тунӑ.

### 3. ПИКЕ-ПАТША ЮСАНАТЬ, ЧИПЕРЛЕНЕТ...

Бригадирпа тракторист пырса ҫитнӗ чухне агроном ҫывӑхри кукурузӑ тӗми патне пӗшкӗннӗччӗ. Мӗн тӑвӑн, кӑҫал уй-хир пике патши ытлашширех те курнӑҫланать — пӗшкӗнтерет, «пуҫ ҫаптарать».

Малтан кукурузӑ шӑтаймасӑр чылай асапланчӗ. Хайхи вӑйлӑ ҫумӑрпа пирченнӗ тӑпрана йывӑҫ сӳресемпе хускатсан, тикӗсех шӑтса калчаланчӗ. Кун хыҫҫӑн тӑваткал тӗмсен хушшисене культиваторпа урлӑ та пирлӗ икӗ хутчен кӑпкалатса тухнӑ. Тӑваткалсем питӗ тӗрӗсси вӗсен хушшине диагональпе кӑпкалатма та май парать. Анчах ку — ытлашши ӗҫ. Мӗншӗн тесен тӑпра кирлӗ таранах кӑпка, ретсем хушшинче ҫум курӑкӗсем те курӑнмаҫҫӗ. Ҫапах та...

Агроном паян малти уя ахаль мар ҫакӑн пек ир-ирех чупса тухрӗ. Ахаль мар вӑл пилӗкне авсах пике-патшана пуҫ тайрӗ.

— Юрать, эсир те килтӗр эппин. Ку аван-ха, питӗ аван,— терӗ Владимир Миронович тин ҫеҫ пырса ҫитнӗ бригадирпа трактористa.— Акӑ, тусӑмсем, куратӑр-и!

— Куратпӑр-ха, Владимир Миронович, хамӑр та ҫавӑн пиркиех ҫӳретпӗр,— терӗ бригадир, трактористшӑн та явап парса.

Механизатор чӗнмерӗ, унӑн хӑйӗн тем шухӑш пур пулас.

Чим, «юнтармӑш» пике-патша тата мӗн хӑтланса кӑтартасшӑн-ха вӗсене! Мӗн пирки татах пӑшӑрханса ӳкнӗ агрономпа бригадир! Кукурузӑ пуссинче мӗн тума кирлине йӑлтах тунӑ пек-ҫке. Сӑйлас пеккине сӑйланӑ. Тӑваткал тӗмӗсем те, ретсем те, ҫип ҫапнӑ пек, ярт тӳррӗн ярӑмланса выртаҫҫӗ. Пӑхӑсӑн, ниҫта пӗр ҫум курӑкӗ курӑнмасть. Ҫапах та мӗн ҫитмест-ши пике-патшана!

Акӑ мӗн ҫитмест иккен. Шӑпах тӑваткал тӗмсен варринче, культиватор каскӑчи лекмен ҫӗрте, пике-патшапа ҫумма-ҫуммӑн, ӑна ыталасах тенӗ пек, ҫум курӑкӗ ларать. Е анра ҫарӑк, е йыт пырши. Вӗсене халӗ нимӗнле механизмпа та тӑпӑлтарса илме ҫук. Кӑшт маларах, кукурузӑ шӑтса ҫулҫӑ сариччен, гербицидпа эмеллесе ҫеҫ пӗтерме май пулнӑ. Гербицид вӑл — хими. Халь акӑ анра ҫарӑк умӗнче хими те вӑйсӑр, мӗншӗн тесен «чике-старик сар сухалпа» пӗрле пике-патшана та пӗтерме пулать. Чӑн та, тӗнчере тепӗр эмел пур — семазин текенни. Вӑл ҫум курӑкӗсене пӗтерет, ҫав вӑхӑтрах кукурузӑ калчине сиенлемест. Анчах ӑна ӑҫтан тупӑн-ха! Заводсем ку препарата халлӗхе сахал туса кӑлараҫҫӗ.

— Ҫумламалла, алӑпа ҫумламалла!— терӗ агроном, лаптак тытнӑ алӑ тупанӗпе сывлӑша хӗреслетсе касса.— Паянах тытӑнмалла, Михаил Иванӑч!..

Ку сӑмахсене илтсен, трактористӑн ахаль те тӗксӗм сӑнӗ тата ытларах тӗксӗмленчӗ. Ара вӗсем, колхоз механизаторӗсем, Мускав облаҫӗнчи «Заокский» совхоз механизаторӗсен пуҫарӑвне йышӑннӑ-ҫке-ха. Тухӑҫлӑ кукурузӑпа нимӗҫ пӑрҫишӗн, тухӑҫлӑ ҫӗр улмипе сахӑр кӑшманӗшӗн кӗрешнӗ ҫӗрте мӗн пур ӗҫе — акассинчен пуҫласа пухса кӗртессине ҫити — машинӑсемпе ҫеҫ тумалла. Комплекслӑ механизаци!.. Халь акӑ агроном алӑпа ҫум ҫумлама сӗнет. «Мӗншӗн капла пулса тухрӗ-ха!— хӑйӗнчен хӑй тӗпчесе ыйтать механизатор, ҫав вӑхӑтрах хӑйне хӑй лӑплантарма тӑрӑшать.— Мӗншӗнни паллӑ. Каллех кӑҫалхи ҫанталӑк. Кукурузӑ вӑраххӑн ӳсет, ҫум курӑкӗ ашкӑрать кӑна». Чунӗ тепле вӗчӗрхенчӗ пулин те, тракторист шӑл шурри те кӑтартмарӗ. Ҫумламалла-тӑк ҫумламалла, алӑпа-тӑк алӑпа...

Тӑваттӑмӗш бригадӑн бригадирӗ Михаил Иванович Иванов вара кунашкал ӗҫсене хӑй те агрономран кая мар чухлать.

— Эпӗ чупам-ха эппин яла,— терӗ вӑл лӑпкӑн ҫеҫ.— Ҫынсем унта-кунта сапаланиччен ӗлкӗрем.

Шанчӑклӑ бригадир. Хӑй кӑшт кулӑшларах пек те курӑнать. Пӗвӗ-сийӗ пӗчӗкҫӗ, сӑмси ҫине пысӑк турталлӑ куҫлӑх лартса янӑ. Ҫамки сарлака та ҫӳлӗ. Ялта ӑна пурте Чехов тесе чӗнеҫҫӗ. Куҫлӑхӗшӗн пуль. Аякрине курман пирки вӑл мӗн пӗчӗкренех куҫлӑхпа ҫӳрет. Аслӑ писатель ятне те ӑна шкулта вӗреннӗ чухнех панӑ. Ҫук, Михаил Ианоич ку ятшӑн кӳренмест.

— Чехов пулсан — тем пекехчӗ те. Чеховах мар ҫав,— текелет вара вӑл, именнӗн кулкаласа.

Ӗҫре хӑй питӗ пултарать. 1960 ҫулхи ӗҫсемшӗн вӑл республикӑри пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр ӑсти ятне илнӗ. Анчах вӑл кантӑр ӑсти кӑна мар. Ҫав ҫулхине силослӑх кукурузӑ та кашни гектартан пиншер центнер ытла пухса кӗртнӗ. Ҫулсеренех вӑл туллине те, пӑрҫине те тулӑх ӳстерет. Юлашки ҫулсенче акӑ нимӗҫ пӑрҫи акса тума вӗренсе ҫитрӗ. Вӑл акса тӑвакан тыр-пул пуссисем темӗнле пысӑк кӗнеке страницисем пек курӑнса выртаҫҫӗ. Пурнӑҫ кӗнеки. Ҫав кӗнекесене чунтан кӑсӑкланса вулатӑн, ӑна паянхи Чехов — колхоз Чеховӗ ҫырнӑ.

Агроном хӑйӗн бригадир-тусне ӑшӑ куҫпа пӑхса ялалла ӑсатрӗ. Унтан тракторист еннелле ҫаврӑнчӗ те:

— Эсӗ мӗн, Тимофей Трофимӑч, питӗ тӗксӗм!— тесе ыйтрӗ.— Ҫумӑр пӗлӗчӗ пек... Паян хӗвел пӑхать-ҫке. Ҫитет ӗнтӗ кун чухлӗ ҫумӑр ҫунипе.

— Тӗксӗм пулӑн унта, Владимир Миронӑч,— мӑкӑртатса илчӗ механизатор.— Ӗнер каҫалапа «авангардсен» кукурузне кайса куртӑм. Эх, ҫав Судакова хурӑн хулӑпа ачаш ҫӗртен пӗрер туртса ҫапасчӗ!..

— Мӗн пулнӑ вара!

— Хӑрушла унта!— тракторист пӗррех аллине сулчӗ те хӑй ӗнер каҫалапа мӗн курнине, тарӑха-тарӑха, каласа кӑтартрӗ.

«Авангард» колхоз — «Правда» колхозӑн кӑнтӑр енчи кӳрши. Унта икӗ Кӑканар, икӗ Карачура тата Ассакасси ялӗсем пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Судаков текенни вара — колхоз агрономӗ.

Кӳршӗсем кӳршӗсемех ӗнтӗ, пӗр-пӗрне пулӑшмалла. Тепӗр кӳршӗ-аршӑ аякри тӑвантан та паҳарах, теҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫуркунне акӑ «авангардсем» тархасласах ыйтрӗҫ: «Эпир кукурузӑна тӑваткал тӗммӗн акма пӗлейместпӗр, вӗрентӗр-ха, кӑтартса парӑр», терӗҫ. Мӗнех вара, кӑтартса пама

Юлашки. Пуҫламӑшӗ 8-мӗш номерте.

---

# Прозӑлла сӑвӑсем

Петр ЛЬВОВ

## АННЕ

Анне!..

Саншӑн, маншӑн, кашниншӗн мар-и ку — чи хаклӑ, ытатлӑ сӑмах! Ун артакӗ, ытамӗ мар-и парать хӑват та ҫунат! Вӑл ыр суннине пула-ҫке тухатпӑр кун-ҫул уттине.

Анне!..

Ҫӗршыв-аннемӗр, теетпӗр эпир ҫуралнӑ, тӑван ҫӗршыва. Ун кӑкӑрӗ, ун анлӑ кӑкӑрӗ ҫинче-ҫке утатпӑр паттӑррӑн, кӑйкӑр кайӑклӑн вӗҫетпӗр. Юмаха чӑн туса, тухман ҫула-ҫке тухатпӑр, ҫӗнтеретпӗр ялан.

Анне!..

Ҫак кӗскен ҫеҫ илтӗнен вӗҫсӗр пысӑк сӑмах,— паян ун пӗлтерӗшӗ ӳсрӗ татах. Ҫӗре, Ҫӗр чӑмӑрне, каларӑмӑр: «Анне!» Гагарин, Титов, Николаев, Попович, ҫӑлтӑрсен тӗнчине хӑпарса, мӗн тери аван-мӗн эсӗ, Ҫӗр, Ҫӗр чӑмӑрӗ, терӗҫ, Ҫӗр-аннемӗр, терӗҫ вӗсем.

Ӗненетӗп, кӗҫ ситӗ ак вӑхӑт, пӗтӗм Галактикӑна тейӗпӗр: анне! Ма тесен, тӑван Ҫӗр — Ҫӗр аннемӗр синче пур тӑванран та тӑванни, унӑн ячӗ Аннемӗр Ҫӗршыв, Октябрь хумӗпе ҫуралнӑ, хӑватлӑ, советлӑ Ҫӗршыв!

## ЫВӐЛӐМА

Ҫулу сан, хӑвна кура, пит вӑрӑм та йывӑр Ҫулталӑк ҫурӑрискер, эс пӳртре ҫитмен кӗтес те хӑвармастӑн: сӗтел айне кӗрсе тухатӑн, пукан ҫине хӑпарса анатӑн, кӑмака хыҫне кайса пӑхатӑн, чӳрече анине кармашатӑн. Укетӗн те тӑратӑн. Хушӑран «пупу!» тесе йӗретӗн. Анчах ытларах эс кулатӑн, ма тесессӗн тӗлӗнмелле чаплӑ, тӗлӗнмелле пысӑк ҫут тӗнче ҫине пӑхакан хӑвӑн ҫак таса куҫусемпе кашни тӗлте хаваллине, хаваслине куратӑн. Вара кулатӑн, кӑмӑла ҫӗклесе, чунтан хӗпӗртесе кулатӑн. Эп — кулнине юрататӑп.

Ҫулсем иртӗҫ. Эсӗ те, ывӑлӑм, ҫитӗнсе ҫитсе ҫын пулӑн. Ҫӳрес ҫулу пушшех вӑрӑмланӗ, пушшех те йывӑрланӗ. Укмелли те, такӑнмалли те пулӗ тен. Ун чух ӗнтӗ «пупу» тесе йӗмӗн. Шӑлна-и шатӑр ҫыртӑн е пӑхӑн куҫран вут сирпӗтсе, тен, урӑхларах,— калаймӑп халех. Анчах ан манччӗ: аҫу эс кулнине юратнӑ.

## ӐСАТУ

Эпир ӑна иккӗн ӑсатса ятӑмӑр.

Ячӗ ун хитреччӗ... Анчах кирлех-ши ятне асӑнма? Куҫӗ мӗнлине каласан та ҫитӗ.

Шӑрӑхчӗ, тусан... Уй-хир урлӑ каҫса ӗшеннӗскерсем, пӑшӑхнӑскерсем, эпир ӑна куртӑмӑр. Тусанпа, тарпа йӳҫӗхсе хӗрелнӗ, хӗсӗннӗ куҫӑмӑрсемпе ун тӗпсӗр тулли ҫӑл пек куҫӗнчен пӑхрӑмӑр. Куҫ шуррийӗ тин ҫеҫ ӳкнӗ сулхӑнри юра аса илтерчӗ..

Хӗрарӑм пире пӗрер курка шыв ӑсса ӗҫтерчӗ. Лӑпкӑ та йӑвашскер, пӑхса тӑракана шухӑша яраканскер, вӑл пире килӗшрӗ.

Каҫхине, ӑнсӑртран тӗл пулсан, эпир унран ӑсатса яма ирӗк ыйтрӑмӑр. Вӑл хирӗҫлемерӗ. Анчах килӗ тӗлне ҫитермерӗ.

— Юрӗ, кунтан ӗнтӗ хамах та чиперех ҫитетӗп.

Тата... сырма урлӑ каҫмаллаччӗ. Ҫырмаран хӑпарсан, шӗшкӗлӗх. Ун витӗр тухмалла.

— Капла пирӗн ҫурма ҫула ӑсатни ҫеҫ пулать-ҫке,— терӗмӗр эпир.

Хӗрарӑм:

— Мана чӗрӗк ҫултан кӗскерехе те ӑсатнӑ,— терӗ.— Ҫулӗ вара ун чух... Вӑл ҫула эпӗ халӗ те утса тухайман-ха.

Ӑнлантарса тӑмарӗ — кайрӗ.

Унтанпа самаях хӗлпе ҫу ылмашӑнчӗ ӗнтӗ. Ҫав тӗпсӗр тулли ҫӑл пек куслӑ лӑпкӑ хӗрарӑма час-часах аса илетӗп. Вара ман:

— Ун тӗллӗн килнӗ евӗр ӑсату пурнӑҫ никама та, никама та ан сунтӑрччӗ,— теессӗм килет.



*Агроном акă хăмла хушшинче. Ытти тыр-пул пекех, хăмла та кунта лайăх ӳсет, колхоза çулсерен пысăк тупăш кӳрет.*

пулать. Тимофей Трофимов ку ĕçе кăмăлласах килĕшрĕ. Хăйне хăй вăл шанать. Ара каларăмăрçке-ха, унччен вĕсем, хăйсен колхозĕнчи механизаторсем, «симĕс тăваткал» ăсталăхне вĕренме ятарласа Патăръел районĕнчи «Гвардеец» колхоза, Василиса Павловна Кузнецова патне, кайса килнĕ.

Тимофей Трофимов пули-пулми калаçма юратмасть. Сăмах панă— ĕçне тума васканă. Çапла вăл кӳршĕсене 38 гектар кукурузă тăваткал тĕммĕн акса парать. Хăв аллупа тунă ака — ют ана çинче те паха. Тимофей Трофимăч кӳршĕсем патне, хăй акнă кукурузă пуссине, пĕр хутчен кăна мар кайса пăхнă ĕнтĕ. Пырать, пĕшкĕнет, сăнать. Ытти çĕрти пекех, кӳршĕсен кукурузи те малтан шăтаймасăр асапланчĕ. Тăпран çиелти сийĕ çумăрпа пĕлевленсех ларнă. Тимофей Трофимăч тăпрана шĕвĕр пӳрнипе чавса пăхма хăтланать. Çук, механизаторăн пӳрни тимĕр пек çирĕп пулин те, витерейместь. Вара вăл пĕр шĕвĕр патак тупать.

— Ай-уй!— тет вăл, шăтаймасăр хĕн куракан ӳсен-тăрана чунтанах хĕрхенсе.— Мĕскĕн, сывлăшаллах туртăнать.

Чăн та, кукурузă калчи, пĕлевленнĕ тăпрана шăтарса тухаймасăр, хут купăс пĕрми пек, çĕр айĕнчех картлăн-картлăн пĕрмечĕленсе ларнă.

Ку çуркуннех пулчĕ-ха. Ун чухне «Авангардра» та, «Правдăри» пекех, пирченнĕ тăпрана кăпкалатма йывăç сӳресем кĕртсе ячĕç. Халь вара... Тимофей Трофимов унта ĕнер каçалапа татах тепре кайса килчĕ. Икĕ инке ана пуçĕнче чăлха пуçĕсем çыхса ларăççĕ — кукурузăна кураксенчен хураллаççĕ имĕш. Анчах ăçта унта кукурузĕ! Ăна йăлтах анра çарăкпа йыт пырши, йăран куракĕпе сĕтлĕ пиçен пусса илнĕ. Курак мар, «Авангард» колхоз агрономĕ Судаков хăй микроскоппа шырасан та хăвăртах тупаяс çук.

— Мăшкăл вĕт-ха, мăшкăл,— чунтанах тарăхать Тимофей Трофимов.— Вĕсене акса пани çитмест, кăпкалатса парасса та кĕтеççĕ пулас. Эх, кăпкалатнă пулăттăм хăшне -пĕрне ак çакăнпа!— механизатор кувалдă пек чышкине чăмăртать.

Тепле тарăхсан та, Тимофей Трофимов ытлашши шавламасăр, вăраххăн калаçать. Шалта вара хăйĕн çунмаллипех çунать пулас. Хăйне хăй тытма пĕлни çеç унăн шалти çулăмне тулалла вăркăнса тухма чăрмантарса тăрать. «Двигатель внутреннего сгорания,— тет вăл кун пек чухне, хăйĕнчен хăй тăрăхласа.— Дизель».

Çук, дизель мар çав, кунта этем чунĕ çунать. Тимофей Трофимов — колхозри чи лайăх механизаторсенчен пĕри. Коммунист. Çамрăк пулин те, çирĕп коммунист. Хĕллехи вăхăтра вăл тăрăшсах каçхи вăтам шкула вĕренме çӳрет, кăçал акă 9-мĕш класа куçрĕ. Ку сахал пек туйăнать ăна. Вăл тата Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче заочнă вĕренет. Тимофей Трофимовран унăн çывăх юлташĕ Владимир Быков механизатор та юласшăн мар. Вĕсем иккĕшĕ те агроном пулма ĕмĕтленеççĕ. Анчах кунта Тимофей Трофимова пĕр агроном пулас ĕмĕт кăна мар-ха, темĕнле татах та пысăкрах шухăш илĕртет. Вăл — механизатор, тен, яланах механизатор пулса юлĕ, çакăнпа пĕрлех вăл çутçанталăк вăрттăнлăхĕсене, хăй акса тăвакан тыр-пулсен асамлă пурнăçне — вĕсем мĕнле ĕрченине, мĕнле сывланине, мĕнле ӳснине тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пĕлесшĕн. Çавăнпа вăл пĕр ĕçе те сивĕ алăпа тумасть, пурнăç çине пулă куçĕпе пăхмасть.

Куратăр, авă ăна кӳршĕсен çум куракĕ айне пулнă кукурузи те канăç памасть.

— Ха, ял кулли,— тет Тимофей Трофимов йĕкĕлтенĕ сасăпа.— Çав инкесене ана пуçĕнче чăлха пуçĕ çыхса ларнăшăн ĕç кунĕсем те çырса параççĕ-ха. Пĕлсех тăр. Ĕç кунĕ ӳсет, кукурузă ӳсмест.

Ăста механизатор, канăçсăр этем, агронома ĕçре куллен пулăшать. Июнь уйăхĕн 20-мĕшĕнче Тимофей Трофимов агроном патне чупса пычĕ те:

— Владимир Миронович, куку-



*Тракторист Владимир Петров слесарь ĕçне те пултарать.*



*Хастар механизатор Тимофей Трофимов.*

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

Тус та, юлташ та мар, палланăскер кăначчĕ вăл маншăн.

Астăватăп, пĕр çурхи кун унпа хулара çӳрерĕмĕр. Ăшă, хĕвел йăл илетчĕ. Çынсем, хĕллехи тумĕсене хывса çакса, çӳхе пальто, капăр плащ тăхăннă. Пирĕн умранах урам урлă пĕр ушкăн хĕр шавласа-кулса каçрĕ. Пĕри тепринчен чипер. Тумĕсене пăхсан, хĕрлĕ, сарă, симĕс...

— Кур-ха,— терĕ ман юлташ,— чăн-чăн асамат кĕперĕ! Пур çичĕ тĕс те пур. Хăшне суйлас, хăшне савас çав...

Ун вырăнĕнче тепĕр çын пулнă пулсан, калас сăмахăм чĕлхе çине килетчĕ-и тен. Анчах ăна хирĕç нимĕн чĕнме те аптăрарăм. Вăл, урçа халлĕнех хĕрĕхе çывхарса вăхăтсăр кукшаланнăскер, çăмăл та йывăр пурăнатчĕ. Тăтăш хĕр улăштаратчĕ, хĕр суйлатчĕ — урăхра ячĕ-шывĕ палăрмарĕ. Кайран хăй те суйланчăка тăрса юлчĕ.

Эпĕ пĕрне юратрăм, ма тесессĕн пурнăçа юрататтăм, ма тесессĕн пурнăçа юрататăп. Пурнăçăн, асамат кĕперĕнни пек, çичĕ тĕс кăна мар. Çакна ăнланмана вăл вăхăтсăр кукшалантарать.

## „ПРИБОЙ"

Кĕсъесене хыпашласа пăхрăм та, пушă пирус пачки çеç тупăнчĕ. Вара, урам урлă каçса, пирус-шăрпăк киоскĕ умне пырса чарăнтăм.

Черетре тăват-пилĕк çын. Ман умра çап-çамрăк хĕр тăратчĕ. Пĕчĕк хура çухаллă йӳнĕрех кăвак пальто тăхăннă. Лапкам-лапкам нӳр юр çăватчĕ. Пуçне çыхнă çăм тутри хĕрĕн çав юр хăех шурă та черчен. Сăн-питĕнче те ун черченлĕх, çамрăклăх — хăй хитрелĕхĕнчен, хăй чиперлĕхĕнчен именмелле хĕрле çамрăклăх... Утмăлтурат çеçки пек кăвак куçĕсем шухăшлăн пăхаççĕ, чуна çемçетсе ăша хускатакан вăтанчăклăх та пур вĕсенче.

Витринăра — «Беломор», «Лайнер», «Север», тĕрлĕрен сигарет пачкисем. Черет çитсен, хĕр киоск чӳречи умнех ӳпĕнчĕ.

— «Прибой» пур-ши сирĕн?

Ку пирус çук-мĕн киоскра. Вăл тек ыйтса-калаçса тăмарĕ, хĕрлĕ улма пек хĕрелсе кайнăскер, ним илмесĕрех пăрăнса утрĕ. «Север» мĕнрен япăхчĕ-ши? Хакĕ те ун «Прибой» хакех темелле...

Анчах хĕр, арçын хĕрарăм вак-тĕвекне пĕлмен евĕрех, пируссене пĕлмест курăнать. Кам çăварĕнче курнă-ши, кам валли туянасшăнччĕ-ши вăл «Прибой»? Куна киоскри сутăç та, эпĕ те чухлаймарăмăр. Сутăç, ватăрах кăна ырă сăн-питлĕ хĕрарăм, мана куçран пăхрĕ те, çапла çав вăл тенĕн, темле вăйсăррăн кулса илчĕ.

Лапка-лапка шур юр çаплах çăватчĕ.

## Ç И Л

Çӳçĕмпе выляса, паян ир çил калаçрĕ манпала.

— Эпех вăл, эпех вăл,— пăшăлтатрĕ хăлхаран,— пуш хирте, хăйăр çĕклесе, кутсăр-пуçсăр çавăртараканни те, сĕм вăрманта ĕмĕрхи кĕреш юмансене кăкласа йăвантараканни те эпех... Паян, ак, сан çӳçӳпе вылятăп, питӳнтен ачашлатăп, ыран, тен, тинĕсе çитсе, хум кăларса хум хăвалăп. Эп вăйлă, эп хаяр. Эпех сипетлĕ те йăваш. Эп çитмен çĕре çитетĕп, эп пурне те пултаратăп.

Тавлашмарăм çилпеле.

— Пултаратăн,— терĕм пĕр сăмах,— анчах эс суккăр.

Çиленмерĕ. Ăвăс çулçисем хушшине кайса вылярĕ те каллех мана килсе лăпкарĕ. Эх, суккăр çеç мар, чунсăр та иккен вăл! Çавăнпа этем кирек хăш çанталăкра та унран пин хут вăй-хаваллăрах.

## Х Ӳ Р Е Ш К Е

Эпĕ, Атăл хĕрринче тăрса, пăр кайнине сăнарăм. Мăнаçлă та чаплă, аслă та хăватлă юхăм...

Пăрĕсем тĕрлĕрен: вак-тĕвекки те, пысăкки-вăтамми те пур, хăшĕ шурă—юрлă, хăшĕ хура, вараланчăк, хăшĕ симĕссĕн-кăваккăн йăлтăртатать. Кашнин хăйĕн вăйĕ, кашнин хăйĕн çулĕ — кашни пĕр пĕтĕм аслă юхăма пĕрлешет.

Акă, шăп варрипе Атăл ывăсĕ текен капмар пăр юхса иртрĕ. Йый-ушкăн юхăмĕпе пĕр килĕшӳллĕн, пĕр кĕвĕллĕн çул тытнăскер, вăл çав аслă юхăмра чаплăн, халлăн курăнать. Анчах, ав, ун хыçĕнче ниме тăман, хапайсăр, тĕссĕр пăр пăлтăр-палтăр çаврăнкаласа пырать. Ни карка, ни каска. Вăл пĕр пĕтĕм пысăк юхăма курмасть, вăл çав юхăмра хăй вăйĕпе, хăй çулĕпе ишеймест.

Унашкаллисем валли кĕске те вирлĕ сăмах тупăнать: хӳрешке!

— Юрĕ, тавлаш,— терĕ Вениамин,— анчах ку лава эпĕ çур лав шутне çеç кĕртетĕп. Ытла та эс, вĕли-шели ĕçлесех ĕç кунĕ илесшĕн!..

Вениамин Быковпа Михал Трифăнăч пĕр-пĕринпе çывăх тăвансемех. Анчах эртел ĕçĕнче тӳрĕ чĕреллĕ комсомолецшăн пĕлĕш-тăван çук иккен. Çак «тытăçу» агронома питĕ кăмăла кайрĕ. «Халăх пурлăхне упрама, тĕрĕслĕхе тытма хальхи çынсем мĕн çамрăкранах хăнăхаççĕ»,— терĕ вăл хăй ăсĕн, анлă хирпе малалла утнă май.

## 5. ВĂТĂР ТА ПĔР ВАР ХУШШИНЧЕ

Ĕçпе кăна мар, хăш чухне пĕрпĕр çынпа ытахальтен тенĕ пек халапланса ларма та чун туртать. Ытахальтен... Эпĕ çак сăмаха çырса хутăм та хамран хамах иментĕм. Çук çав, пирĕн Владимир Миронович акă 86 çулхи Муççа мучи патне ĕç çукран кĕре-кĕре лармасть. Ытти ватăрах çынсем патне те вăл ытахальтен туртăнмасть. Вăхăт-вăхăт унăн кăкăрне темĕнле тунсăх кăмăл-туйăм тулса килет. Аслисен ăслă сăмахĕ, ашшĕ сăмахĕ — акă мĕн кирлĕ пек туйăнать ăна.

Владимир Миронович ачаллах ашшĕсĕр тăрса юлнă. Вĕсен тăван килне тӳсме çук йывăр хурлăх çитсе кĕнĕ куна вăл паянхи пекех астăвать.

...Хаяр вăрçă вăхăчĕ. Вĕсен ашшĕ, Мирон Харитонович, фронта тухса каять. Килте амăшĕ икĕ пĕчĕк ачапа пĕччен тăрса юлать. Чăн асли, Володь — 9 çулта, ун хыççăнхи, Роза ятлă хĕрача — 2 çулта, виççĕмĕшĕ вара — Серкуш ятли, ашшĕ кайсан ултă уйăхран çуралать. Ĕмĕр манми асаплă вăхăт. Вĕсем, ашшĕ хӳтĕлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасем, çăкăрне те лайăххăн çисе кураймаççĕ. Хĕлле — çĕр улми, çăва тухсан — сертепе вĕлтрен яшки.

Амăшĕ, ялти пек каласан — Таччи аппа, аслă ывăлне çине тăрсах хут вĕрентме тăрăшать. Володь тăван Хурăнсур ялĕнчи пуçламăш шкул хыççăн Çĕрпелти 7 çул вĕренмелли шкула кайса кĕрет. Класран класа чиперех куççа пырать вăл, акă 7-мĕш клас пĕтерсе, экзамен та тытать. Шăпах çав кун, киле таврăннă чухне, ăна Çĕрпел ял Совет председателĕ Матвей Кузьмич усă кантăкран чĕнсе илет:

— Ачам,— тет вăл, питĕ асăрханса.

Анчах ача чĕри кăртах сикет.

— Ачам,— тет татах Матвей Кузьмич,— кунта хут килнĕ...

Пĕчĕкçĕ Володь пĕчĕкçĕ хут татăкне илет те, пуçне чиксе, ним шарламасăрах, тăван ялне тухса чупать, малтан кукамăшĕ патне кĕрет. Кунта вăл, пĕтĕм чунĕнчен татăлса, ĕсĕклесе йĕрсе ярать, кукамăшĕ çумне пăчăртанать.

Килне çитсен... Эх, çав анне ӳхлесе макăрнине ĕмĕр илтес марччĕ! Володьăн ĕнтĕ куççулĕ типет, вăл, йывăр хуйхи-суйхине епле те пулин пусарас тесе, шăлне çыртса лартать. Нимĕн те чĕнмест. Ытла хытă кулянипе унăн хыçалти шăлĕсем кăпăлтах катăлакатăла ӳкеççĕ. Ача шăлĕсем...

«Эпĕ килте чăн асли,— хăй ăссĕн шухăшлать 13 çулхи Володь,— халь ĕнтĕ пĕтĕм кил шухăшĕ, пурнăçра мĕн пур йывăрри ман хулçурăм çине ӳкет. Тӳсмелле. Епле те пулин малалла вĕренсе, çын пулмалла, аннене, йăмăкпа шăллăма пулăшмалла. Хăçан та пулин пирĕн кантăкран та хĕвел çути кĕрĕ-ха!..»

Вăл, çак ĕмĕтпе Вăрнарти зоотехникăпа ветеринари техникумне вĕренме кайса кĕрет. Унпа пĕрле унăн шкулти юлташĕ — Георгий Михайлов. Анчах йывăр пурнăçа пула чирлесе ӳкет те ултă уйăхранах вĕренме пăрахать. Мĕн тумалла ĕнтĕ! Вăл почтальон сумкине те çакса пăхать, Уравăшран Хурăнсура хаçат-журнал, çыру-хыпар çӳретет. Ĕçĕ йывăрах мар, çынсем те кашни килтех хавас кĕтсе илеççĕ. Çапах та çунса тăракан вĕри чĕреллĕ ачан çак ĕçпех çырлахмалла-ши! Шăпах чун пăлханнă вăхăтра Володьăна кукашшĕпе пĕр тăванĕн ывăлĕ, ветеринари врачĕ, Данил Миронович тĕл пулать.

— Эсĕ, Володь, пуштă сумкине шкул ачи сумкипе улăштар-ха,— тет вăл.— Вĕренме кай, пулăшăпăр.

Çапла Володь Уравăш вăтам шкулне вĕренме кĕрет. Питĕ лайăх вĕренсе тухать унтан. Вăл физикăпа химие тата математикăна уйрăмах юратса вĕреннине кура, шкул директорĕ Александр Филиппович Филиппов ăна Мускаври энергетикă институтне вĕренме кайма сĕнет. Пĕтĕм çĕршывĕпе чапа тухнă институт! Инженер пулас ĕмĕт те питĕ илĕртӳллĕ. Инженер-энергетик. Хальхи вăхăтра уйрăмах кирлĕ специальноç. Нумай шухăшлать Володь. Çапах та хресчен ачин чи малтан тыр-пул ӳстерме вĕренмелле. Ĕлĕкхилле мар, асаттесен йăли-йĕркипе мар, çĕнĕлле, çĕр ĕç науки кăтартнă майсемпе.

Акă вăл халь агроном. Ăна ĕнтĕ пурте Владимир Миронăч тесе чĕнеççĕ. Чыс та хисеп. Çапах та вăхăт-вăхăт чĕрене тем çитмест...

Качалаври чи ватă та чи хисеплĕ çынпа, Моисей Архипович Архиповпа, ялти пек каласан — Муççа мучипе, Владимир Миронович «Правда» колхоза килнĕ çул малтанхи кунсенчех тĕл пулнăччĕ.

— Эс ĕнтĕ, ывăлăм, нумай вĕреннĕ çын-ха,— терĕ ун чухне Муççа мучи, çамрăк агронома тĕппчемелĕх сăмах хускатса.— Калаймăн-ши, мĕншĕн пирĕн çăлсем, çырмасем типсе пыраççĕ!

— Хамăртан килет,— пат татса хăюллăн явапларĕ агроном.— Ак тытăнатпăр та çăл куçĕсем çĕнĕрен палкаса тапма, çырмасенчи шывсем шăнкăр-шăнкăр юрласа юхма пуçлаççĕ. Курсах тăр, мучи!

— Ай-яй, ывăлăм, ытла та çивĕч сан чĕлхӳ,— пуçне çеç сулкаласа илчĕ Муççа мучи.— Курăпăр ара, курăпăр... Унччен хамăн леш тĕнчене ăсанас марччĕ-ха.

Агрономăн малтанхи сăмахне мучи шанмасăртарах йышăнчĕ пулин те, вĕсем иккĕшĕ, çамрăккипе ватти, пĕр-пĕринпе тĕл пулса халапланма пăрахмарĕç. Çамрăк агроном Муççа мучирен ял халăхĕн иртнĕ кун-çулĕ çинчен пайтах тĕпчесе пĕлчĕ, сахал мар ăс илчĕ.

Качалавпа Юманлăх, Ехремкассипе Куракăш ялĕсем вăтăр та пĕр вар хушшинче вырнаçса лараççĕ. Çĕртме варĕ, Чармак варĕ, Шуршик варĕ, Усăп çаранĕ, Малти çырма, Чакан çырми, Эрешĕм çырми... Пурин ятне çырса та пĕтерес çук. Пĕр Пăшнар çырмине кăна 10—12 тип вар юпленсе кĕрет. Çырма тесе ĕлĕк-авал шыв юхаканнисене каланă. Типписене чăвашсем яланах вар тенĕ. Анчах «çырма» тенисен халĕ ячĕсем çеç тăрса юлнă, вĕсен тĕпĕсем типетипе ларнă.

Мĕншĕн! Агроном çакна çине тăрсах тĕпчеме тытăнать. Чи малтан ку таврари вăрмансене питĕ киревсĕр пĕтерсе пынă иккен. Ĕлĕк Юманлăх хапхинчен пуçласа таçта çити сарăлса выртнă Пуямас вăрманĕ те халь авă саплăк пек çеç тăрса юлнă. Юманлăх ялĕ çывăхĕнче, йăмрасемсĕр пуçне, пĕр юман та курăймăн.

Тата!.. Тата вăрçăччен типĕ варсемпе çырмасенче пĕвесем пĕвеленĕ. Муççа мучи каланă тăрăх, ял халăхĕ çырма-çатрасенче ĕлĕк те пĕвесем тума ӳркенмен. Акă Качалав варринчи Пысăк пĕве текеннине 1907 çултах пĕвеленĕ иккен. Вăрçă вăхăтĕнче вара ку ĕçе япăхтарса янă, чылай пĕвесем татăла-татăла кайнă. Пĕр Пысăк пĕве тени çеç çирĕп сыхланса юлнă.

Шывсăр пурнăç çук. Çĕнĕрен, татах та анлăнрах тытăнмалла ку пысăк ĕçе. Халăх ăнланать, халăх ĕçе пуçăнать. Акă хăйхи кăçал пĕр çырмара, килес çул тепринче çĕнĕрен çĕнĕ пĕвесем ӳсе-ӳсе лараççĕ, вĕсенчи шыв тĕкĕр пек çуталса выртать. Халь ĕнтĕ вăтăр та пĕр варта вăтăр икĕ пĕве. Пĕвесенчи шыв тăпрана сăрхăнать, çапла тăпра та ытларах сĕткенленет.

Кăçал колхоз бульдозер туянчĕ. Текех çырма-çатрана кĕреçепе алтса, тăприне наçилккасемпе йăтса пĕвелесси çук. Бульдозер хăех темиçе çĕр çыншăн та 50—60 лашашăн ĕçлет.

Агроном пĕррехинче каллех Муççа мучи сăмахне аса илчĕ. Ара, Качалав варринчи Пысăк пĕве пĕр татăлмасăр 55 çул хушши тулса выртать-çке-ха. Ун тĕпĕнче мĕн хулăнăш юшкăн! Уй-хир валли им-çам. Çук, юшкăн çеç мар вăл, тыр-пул, чăн-чăн ылттăн! Агроном çĕннипе кăçал Пысăк пĕвене колхозниксем татса ячĕç. Кăшт типсен, унти юшкăна уя турттараççĕ.

Акă хăйхи уй-хире типĕтекен çырма-çатрасем, этем тăрăшнипе, этем вăй хунипе, уй-хире ырă сĕткен паракан çăл куçĕсем пулса тăраççĕ.

— Пуç ĕçлет, ачам, санăн!— терĕ нумаях пулмасть шурă сухаллă Муççа мучи, агронома тĕл пулсан.— Хам куçăмпах куратăп.

— Ырă сăмахшăн тав-ха та, Моисей Архипович,— сăпайлăн хуравларĕ агроном,— анчах эпир мĕн тума кирлин чĕрĕкне те туман-ха. Çăл куçĕсем тата вăйлăрах тапмалла.

## 6. ТИСЛĔК ТĂКСАН, ТИКĔС ШĂТАТЬ

«Правда» колхоз — Элĕк районĕнчи сăнавлă-кăтартуллă тĕп хуçалăх. Унăн ĕçĕнчи паха тĕслĕхсемпе паллашма, Ехремкассипе Куракăш, Юманлăхпа Качалав ĕçченĕсенчен вĕренме, ăс илме ытти колхозсенчен кунта çынсем час-часах экскурсие килсе çӳреççĕ. Пĕчченшерĕн те, ушкăнăн-ушкăнăн та.

Партин Центральнăй Комитечĕн мартри Пленумĕ хыççăн вара çак малта пыракан колхозăн опытне сарас ĕç сисĕнмеллех вăйланчĕ. Элĕк районĕ Вăрнар территорипллĕ-производствăллă управленине кĕрет. Çĕнĕ управлени «Правда» колхозра час-часах семинарсем туса ирттерет. Кунта ĕнтĕ çынсем пĕр Элĕк районĕнчен кăна мар, кӳршĕ районсенчен те килсе çӳреççĕ. Управленири çынсем çак колхозăн пурнăçне хăйсем те лайăх пĕлсе тăраççĕ. Сăмахран, çĕнĕ управление ĕçлеме куçиччен Николай Ильич Судеркин — «Правда» колхозăн аслă агрономĕ, Геннадий Степанович Степанов — агроном, Владимир Кириллович Кириллов — механизаци инженерĕ пулнă. Чăн та, вĕсем кайнăранпа сăнавлă-кăтартуллă хуçалăхра специалистсем сахалланчĕç, Владимир Миронович хулпуççийĕ çине ĕç ытларах тиенчĕ. Анчах управление куçнă юлташсем «Правда» колхозран татăлмаççĕ, вĕсем унăн опытне ытти районсемпе колхозсене сараççĕ.

Вăрнар управленийĕн пуçлăхĕ Туганов, обком парторгĕ Иванов, аслă агроном Ишмуратов юлташсем те, хăйсен «орбитисемпе» çӳренĕ май, ку колхоза кĕмесĕр иртсе каймаççĕ. Апрель уйăхĕнче кукурузăна тăваткал тĕммĕн акас ыйтупа семинар ирттернĕ чухне вĕсем кунта виççĕшĕ пĕрлех пулчĕç, семинара килнĕ çынсене усăллă канашсем пачĕç. Анчах управлени картине кĕрекен районсенче кая юлнă колхозсем чылай, ертсе пыракан юлташсенчи малтан çав колхозсенче «чаваланма» тивет.

Кая юлнисене малтисен шайне çити çĕклемелле. Ку вăл — паянхи чи пысăк ĕç. Чăн та, мĕн пирки çултан-çул кая юлса пыраççĕха хăш-пĕр колхозсем! Çĕрĕсем те вĕсен, пĕтĕмĕшпе илсен, малтисеннипе пĕр пекрех, çутçанталăкĕ те пĕрешкел, хĕвелĕ те пĕр пекех çутатать. Анчах пĕр пек çĕре пур çĕрте те пĕр пек пăхмаççĕ, артакламаççĕ, ачашламаççĕ, çутçанталăк кӳрекен ырлăхсемпе, аслă хĕвел ăшшипе пĕр пек усă курмаççĕ; пĕр-пĕр ĕç ăнăçмасан, айăпа тӳрех «усал çанталăк» çине йăвантараççĕ. Пĕр сăмахпа, çĕнĕ çĕр ĕç культуришĕн тăрăшмаççĕ, çаплах кивĕлле, яла-пăла ĕçлеççĕ. Хирте мĕн тумаллине вĕсем пурне те тăваççĕ-ха: сухалаççĕ, акаççĕ, выраççĕ, çапаççĕ. Анчах ячĕшĕн тенĕ пек кăна. «Мĕн акатăн — çавă шăтать»,— ку сăмах вырăнлă. Çапах та кун çумне тата çакна хушмалла: «Акнине ырă пăхатăн — аванах тырă пухатăн; çĕртен мăшкăлатăн — выçăпа хашкăлатăн».

Пирĕн халăх ĕмĕртен çĕр ĕçĕпе пурăннă. Ваттисен ака-суха çинчен калакан сăмах-юмахне вĕçĕмсĕр çырса кайма пулать. Анчах вĕсене пурнăçра, ĕçре асра тытни кирлĕ.

«Тислĕк тăксан, тикĕс шăтать»,— тенĕ ваттисем. Пĕррехинче «Правда» колхозра шăпах çак темăпа семинар пулса иртрĕ. Семинара малтан пуçласа вĕçне çитиех колхоз агрономĕ Владимир Миронович хăй ертсе пычĕ, аякран килнĕ çынсене хăйсен «тислĕк хуçалăхĕпе» паллаштарчĕ. Çапла, кавычкăсăрах калăпăр,— тислĕк хуçалăхĕ, чăн-чăн наукă никĕсĕ çине хывнă пысăк хуçалăх.

Семинара килнĕ çынсене агроном пĕр фермă патĕнчен теприн патне ертсе çӳрет. Вăл ăнлантарса панă хушăра ушкăнри çынсенчен пĕри хыттăнах:

— Вăт ку чăн-чăн крепоç!— тесе хучĕ.

Пурте сасă еннелле çаврăнса пăхрĕç. Леш çынни кăшт именчĕ пулас, çапах та хăйĕн шухăшне каласах кăтартрĕ.

— Ĕлĕк-авал хуласем тавра тăпрас купаласа çӳллĕ валсем тунă,— терĕ вăл.— Ара, истори вуланă пуль!!. Унашкал крепоç юлашкийĕсем хăш-пĕр хула çывăхĕнче халь те сыхланса юлнă. Кусем акă — сирĕн крепоçсем.

Çынсем ун сăмахне тӳрех ăнланчĕç те кулса ячĕç.

Çапла, фермăсем çывăхĕнчи тислĕк куписем крепоç тума хывнă валсем пекех курăнаççĕ. Анчах вĕсем халăхăн тăнăç та лăпкă пур-

наçне хӳтĕлеме купаланă «крепоçсем», мир «крепоçĕсем».

Агроном хавасланса ăнлантарать:

— Çĕре çемçетмелли чи лайăх япала — тислĕк,— тет вăл. — Унта ӳсен-тăрана кирлĕ пур çимĕç те çителĕклĕ. Тислĕкпе пĕрлех эпир тăпрана минераллă им-çам нумай хыватпăр. Ку вăл хăйне евĕр комплекс. Çапах та тислĕке нимĕнпе те улăштарма çук. Вăл — тăпра сиплĕхĕ.

Агрономăн сăмахне чăн та темĕнле кăсăк калав пекех итлетĕн.

«Правда» колхоз çĕрĕсем çинче торф кăлармалли вырăнсем çук. Çавăнпа тислĕк ытларах пухса хатĕрлес тесе, кунта пĕр çупçапа та сая ямаççĕ. Каларăмăр-çке-ха, кашни ферма çывăхĕнчех тислĕкпе унăн шĕвекне пухмалли вырăнсем пур.

— Хуçалăхра тислĕк мĕн чухлĕ пухăнасси,— тет агроном, — выльăхсене мĕнле апат мĕн чухлĕ çитерниччен, вĕсен айне мĕн сарса панинчен килет. Калăпăр, ĕне айне нимĕн те сарса памастăн, ĕни хăй те çулталăкне 3—4 тоннăран ытла тислĕк параймасть. Ай сарăмĕ вырăнне эпир пăчкă кĕрпипе усă куратпăр, кивĕ улăм е вĕтетнĕ улăм саратпăр, кун пек чухне кашни ĕне айĕнчен çулталăкне 9—10 тоннăран кая мар тислĕк пухса илетпĕр.

Тислĕке усрама пĕлни кирлĕ. Кун пек каласан, хăшĕ-пĕрисем час-часах тăрăхласа кулма пăхаççĕ: «Ха, тупнă хаклă пуçа! Усрама пĕлмелле иккен!» Çапла, ытларан та типтерлĕрех усрама пĕлмелле.

«Правда» колхозра тислĕк купине пысăк тăваççĕ — 500 тоннăран пуçласа пĕр пин тоннăна çити. Купаланă чухне тислĕке кашни çур метртан тăпрапа витсе пыраççĕ. Кунсăр пуçне тислĕк çине сийĕн-сийĕн фосфорит çăнăхĕ, тислĕк шĕвекĕ тата кали тăварĕ сапаççĕ. Тислĕк лайăх пусăрăнтăр тесе, гусеницăллă тракторпа тĕшĕреççĕ. Купаласа çитерсен, çиелтен вара каллех тăпрапа витеççĕ. Кун пек чухне тăпри хăй те, тислĕк шĕвекĕпе шӳсе, паха им-çам пулса тăрать. Çуркунне хывнă тислĕк кĕрхи çĕртме тунă тĕле лайăхах пулса çитет.

Хăйĕн калавне татмасăрах агроном семинара килнĕ çынсене Пуямас вăрманĕ еннелле ертсе каять. Кунта хăнасемшĕн тепĕр паха япала пур иккен.

Юлашки çулсенче «Правда» колхоз ĕçченĕсем тислĕкпе тăпра компосчĕ тума вĕренсе çитрĕç. Пĕлтĕр çак тутлăхлă им-çама икĕ гектар çинче хатĕрлесе, унпала çĕр гектар ытла çĕре çемçетнĕччĕ. Кăçал тислĕкпе тăпра компостне, Пуямас вăрманĕ çумĕнчи çереме пăсса, пилĕк гектар çинче хатĕрлеççĕ. Çеремĕн усси ытларах, çеремре хăйĕнче те тутлăхлă çимĕç питĕ нумай. Тислĕкпе хутшăнсан вара кунта тĕлĕнмелле тулăх им-çам пулать.

Çак пысăк ĕçе кăçал Юрий Ильин ертсе пыракан 3-мĕш бригада пуçăнчĕ.

Компост хывмалли вырăна бригада хĕл кунĕсенче пин лав тислĕк кăларса купаларĕ.

Çуркунне трактористсем ку вырăна виçĕ касăллă плугпа 22—24 сантиметр тарăнăш сухаласа пăрахрĕç, унтан çерем тăрăхĕсене дискăллă лущильникпа виçĕ хутчен урлă кастара-кастара тухрĕç. Кун хыççăн тислĕке 15 сантиметр хулăнăш пĕр тикĕс сарса, çиелтен гектар пуçне 20-шер тоннă извеç çăнăхĕ, 5-шер тоннă кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 3-шер тоннă фекали тата 5-шер тоннă тислĕк шĕвекĕ сапнă. Çак им-çам хутăшне икĕ хутчен катокпа пусăрăнтарнă. Вара çийĕнчех 15—16 сантиметр тарăнăш сухаланă.

Компост пахалăхĕ ăна кирлĕ пек тирпейлесе пăхса тăнинчен килет. Тăпрана тăтăшах нӳрĕ те кăпка тытмалла. Ун пек çĕрте усăллă микроорганизмсем лайăх ĕрчеççĕ. Кăçал компоста икĕ хутчен культиваторпа, пилĕк хутчен лущильникпа кăпкалатнă. Кăпкалатас умĕн кашни хутĕнчех гектар пуçне пилĕкшер тоннă тислĕк шĕвекĕ сапнă.

Июль пуçламăшĕнче компост пулса çитрĕ. Вара Геннадий Скворцов механизатор хăйĕн хăватлă бульдозерĕпе тухрĕ те «Пуямас ылттăнне» купан-купан пухса купаларĕ.

— Акă вăл Улăп тăпри!— тет агроном.

Семинара килнĕ çынсем компоста ывçăпа ывçăлаççĕ, шăршласа пăхаççĕ — ырă шăршă, пулас тырă шăрши...

Чакан çырминчен пуçласа Эрешĕм çырмине çити пĕр тикĕс çĕр сарăлса выртать. Пурĕ 150 гектар. Халиччен вăл инçетри пусă вырăнĕнче шутланнă. Кунта тислĕк питĕ сахал лекнĕ. Кăçал çак пусса талккишĕпех паха компостпа çемçетеççĕ, кĕрхи çĕртме туса хăвараççĕ, килес çуркунне вара кунта уй-хир пике-патши хăйĕн çуллĕ «тронне» йышăнать.

Сисетĕп, манăн хăш-пĕр поэт-тусăмсем, çак очерка вуланă май, вăхăт-вăхăт сăмсисене пăра-пăра илеççĕ: тислĕк шăрши кĕрет имĕш. Вĕсем, ара, чечек шăршине çеç кăмăллаççĕ, ир-ир шурă кулачă çине усламçу сĕрсе çиме юратаççĕ. Анчах таврарине хăйсем тислĕк ăманĕнчен ытлах мар кураççĕ. Паллă-çке-ха, тислĕк ăманĕ тислĕк купи урлă пăхаймасть, пăхас пулсан та нимĕн кураймĕччĕ. Çавнашкал унăн тавра курăмĕ. Пирĕн ака-суха юрринче вара маларах каланă сăмахсем чăннипех вырăнлă:

Тислĕк тăксан, тикĕс шăтать!

## 7. ВИÇĔ ПАТТĂР

Çанталăк тепле япăх пулчĕ пулин те, хирти тырăсем питĕ капкал, питĕ тикĕс ӳссе çитĕнчĕç. Ыраш шăркана ларнă вăхăтра тăтăшлатса çумăр çунă пирки çеç пучахсем кăштах сикчĕллĕ пулчĕç. Çурхи тулă вара кăкăр таран кашласа ӳсрĕ, шăкăрр! пĕр тикĕс ларакан пучахĕсем çине пăхма та çук — куç алчăрать.

Тислĕк тăкса çемçетнĕ çĕр ăшшине те ытларах тытать-мĕн. Мамăк тӳшек пек çĕр çинче пике-патша та чиперех пĕве ларчĕ. Уйрăмах вăйлă ӳсрĕç пăрçапа сахăр кăшманĕ. Нимĕç пăрçипе вырăс пăрçи те вĕсенчен кая юлмарĕç. Кантăр пĕлтĕрхинчен те йăрăсрах çитĕнчĕ. Йăлтах хитре, йăлтах аван — чун савăнать.

Парти Центральнăй Комитечĕн март уйăхĕнчи Пленумĕ ял хуçалăхĕ умне лартнă задачăна «Правда» колхоз ĕçченĕсем çирĕп асра тытаççĕ: Тăван çĕршыв валли тыр-пул, аш-какай, сĕт-çу тата ытти çимĕçсем халăх куллен ыйтнинчен ытларах туса памалла. Ку задачăна, паллах, çĕр ĕç культурине малалла ӳстерсе пырсан, çĕрĕн кашни гектарĕпе пĕлсе усă курсан кăна татса пама пулать. Çĕр мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех ил, хăйне те мĕн кирлине йăлтах пар.

Эпир халиччен сăнаса пытăмăр: кунта колхоз ĕçченĕсем çĕре хисеплеççĕ, таравaт пăхаççĕ. Каллех тĕслĕхсемпе çирĕплетсе калама пулать. Юлашки пилĕк çул хушшинче вăтамран кашни гектар çине 8-шар тоннă ытла тислĕк хывнă. Кукурузă е кантăр акас умĕн тислĕке кашни гектар пуçне 40—50-шар тоннă таран хываççĕ, пăрçапа сахăр кăшманне акас умĕн — 20—30-шар тоннă.

Епле тырă ан пултăр-ха ĕнтĕ çакăн пек çемçе çĕр çинче! Анне-мĕр-çĕр хăйне артакласа пăхнăшăн пархатарлăн тав тăвать. Колхоз юлашки пилĕк çул хушшинче кашни гектартан вăтам шутпа 14-шар центнер ытла тĕш тырă пухса кĕртнĕ.

Пĕлтĕр вара кукурузă тĕшши гектартан 30-шар центнер, силослăх кукурузă — 1.128-шар центнер, сахăр кăшманĕ — 482-шер центнер пухса илнĕ.

Иртнĕ çулла хывса хăварнă кукурузă силосĕ кăçалхи август уйăхĕччен çитрĕ. Выльăхсем юрла-юрла çиекен паха силос!

Курăк тени колхозăн пусă çаврăнăшĕнче халиччен те ытлашши пысăк вырăнах йышăнман. Çапах та мартри Пленум хыççăн колхоз правленийĕ пусă çаврăнăшне тепĕр хут пăхса тухрĕ, агроном пĕтĕм «технологи карттине» çĕнĕрен тĕрĕслесе тӳрлетрĕ. Халĕ ĕнтĕ пусă çаврăнăшĕнче ырашпа çурхи тулă, пăрçапа нимĕç пăрçи, тĕшĕлĕх тата силослăх кукурузă, сахăр кăшманĕпе çĕр улми тĕп вырăн йышăнаççĕ. Кăçал акă «торсдаг» пăрçана хăйне кăна 303 гектар акнă. Пăрçа валли ытлашши çĕр кирлĕ мар, унăн вырăнĕ — çĕртме пусси. Колхоз ăна хăвăрт пухса илчĕ те çав лаптăка килес çул валли çийĕнчех ыраш акса хăварчĕ.

Кунти çĕрсем питĕ çырма-çатраллă терĕмĕр. Тăпрари тутлăхлă япаласене ним юлмиччен çумăр е юр шывĕсем юхтарса кайма пултараççĕ. Çавăнпа колхозниксем типĕ варсенче тăрăшсах пĕвесем пĕвелеççĕ те ĕнтĕ. Çавăнпа варсемпе çырма хĕррисене курăк акма тивет. Ку тĕлĕшпе уйрăмах люцернă усăллă. Унăн тымарĕ тарăна каять, азот нумай пухать, тăпрана пуянлатать, çав вăхăтрах ăна юхса каясран та сыхлать. Утинчен витаминлă çăнăх авăртма пулать. Пăрусемпе сысна çурисем валли—калама çук сиплĕ апат. Ытти выльăх-чĕрлĕхе те вăл самаях тивĕçет.

Люцернă хирти пусă çаврăнăшне хутшăнмасть, пăсмасть. Сухалама вăхăт çитсен, люцернă пулнă вырăнта халĕ тислĕкпе тăпра компосчĕ тăваççĕ. Каллех питĕ усăллă.

Уй-хирте тыр-пул çулсерен ăнса пулнă май, колхозăн выльăх-чĕрлĕхĕ те çултан-çул йышланса, унăн тупăшĕ те пысăкланса пырать. Çак йывăр та пысăк ĕçе виçĕ паттăр çĕклерĕ тесен пĕрре те йăнăш пулмасть. Виçĕ паттăр — кукурузă, пăрçа, сахăр кăшманĕ! Ака-суха юрринче çак виçĕ паттăрăн сасси уйрăмах уççăн илтĕнет.

Çав паттăрсем пулăшнипех ĕнтĕ колхоз 1961 çулта патшалăха планпа пăхнинчен сĕтпе аш-какай икĕ хут, çăмарта виçĕ хут ытларах сутнă.

Кăçал тата пысăкрах утăм тумалла. Тĕш-тырăсем лайăх пулчĕç. Виçĕ паттăр та чăлах ӳсмерĕç. Анчах... Тыр-пул лайăх та çанталăк япăх.



*Александр Михайлов шофер тытса пыракан çăмăл машинă çула тухма яланах хатĕр.*

Ĕнтĕ комбайнерсем Егор Ефимовпа Егор Логинов, Петр Тимофеевпа Валерьян Львов, Вениамин Васильевпа Геннадий Львов хăйсен агрегачĕсене «аслă çапăçăва» тухас умĕнхи пек хатĕрлесе лартнăччĕ. Пĕр пĕчĕк гайкă юлмиччен тӳрлетнĕ, тĕрĕсленĕ.

Хастар механизаторсенчен пĕри, Геннадий Львов, целинара та ĕçлесе курнă. Кун çинчен вăл хăйĕн тусĕсене тăтăшах кала-кала кăтартатчĕ.

Кунĕсем те малтан хĕвеллĕ пулчĕç. Анчах хир карапĕсем лайăххăн ĕçе тухма ĕлкĕреймерĕç, пуç çине «çĕрĕк тӳпе» ишĕлсе анчĕ. Çумăр хыççăн çумăр. Хăш чухне талăкĕ-талăкĕпех çăвать. Йĕпе çине сапа. Çĕрле вăйлă çилтăвăл çĕкленет, хайхи чылай пусăри тырра çĕр çумне çапса хурать.

«Турă парать те, шуйттан илет» тенĕ сасăсем илтĕне пуçларĕç ял халăхĕ хушшинче.

Анчах коммунистсемшĕн турă та, шуйттан та çук. Вĕсем нимĕнле çанталăка та пăхăнмаççĕ, хăйсем пăхăнтараççĕ.

Колхоз председателĕпе агроном нумай кас çывăраймарĕç, куç хупмасăр шухăшларĕç. Лайăх пулнă тыр-пула çăлса хăвармалла. Уйрăмах пăрçана пĕтме памалла мар. Пур майсемпе те усă курмалла: машинăпа та ĕçлемелле, çавапа та çулмалла, çурлапа та вырмалла.

Кăткăс ĕç сарăпсăрах пулмарĕ. Çапах та Ехремкассипе Куракăш, Юманлăхпа Качалав ĕçченĕсем тыр-пула хирте юхăнса юлма памарĕç.

Чи хĕрӳ самантра тĕнче уçăлăхĕнчен тĕлĕнмелле хыпар илтĕнсе кайрĕ: чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕпе Андриян Николаевпа Украинă халăхĕн паттăр ывăлĕ Павел Попович, иккĕшĕ пĕрле, сумма-çуммăн вĕçсе, çăлтăрсем патне малтан малалла çул хываççĕ. Пĕр талăк... иккĕ... виççĕ... тăваттăмĕш талăк илтĕнсе тăрать космосран чăваш ачин хăюллă сасси, пĕтĕм тĕнчипе кĕрлесе каять.

— Çӳл тӳпери паттăрсенчен юлар мар!— терĕç çĕр çинчи хастарсем.

Тепле йывăр пулчĕ пулин те, колхоз ĕçченĕсем çутçанталăкран çĕнтерсе илнĕ ырлăх-пурлăха çутçанталăка каялла памарĕç, хăйсен аллинех илчĕç.

Пĕррехинче Владимир Миронович колхоз председательне тĕл пулчĕ те:

— Сергей Александрович, — терĕ,— епле-ши, пирĕн малашнехи ĕç-пуç пирки канашласа пăхмалла мар-ши!

# ПАЛЮК—ЗАВОД ÇЫННИ



*Калав*

Иван
ГРИГОРЬЕВ

*В. Агреев ӳкерчӗкӗ.*

Эпӗ иртнӗ канмалли кун пляжра Калымовпа тӗл пултӑм. Шыва кӗрсе тухсан, хӑйӑр çине хӗртӗнме выртрӑмӑр, калаçу тӳрех çыхӑнса кайрӗ. Эсир Калымов камне пӗлместӗр пулӗ-ха? Паллах, хулари кашни çын хушаматне ӑçтан пӗлсе çитӗн?

Вӑл — Калымов — эпӗ астӑвассах таксипе ӗçлет. Сӑнран Калымов мӑран çын пек курӑнать, юлташӗпе калаçнӑ чухне те сӑмахне шӑл витӗр аран-аран сӑрхӑнтарса кӑларать е яланах çиллессӗн пӑхать. Екки кайсан çеç сӑмах çаптарма ӳркенмест, хӑй пурнӑçӗнчи шофер мыскарисене каласа култарать. Пассажирсемпе те тӳрккес вӑл. Ахӑртнех, таксипе ларса пыракан çынни май, кашнине кура кӑмӑлӗ улшӑнать пулинех? Такси шоферне улталакан йӗксӗксем тупӑнкаланине эпӗ илткеленӗччӗ, хӑйсем те хӑш-пӗр чухне вак-тӗвеке питех тавӑрса пама тӑрӑшманнине те куркаланӑччӗ. Калымов вара ку тӗлӗшпе такамран та ирттеретчӗ. Хам вара, унпа ӑçта та пулин кайсан, кашнинчех «прицеплӑх» тыттаркаласа хӑвараттӑм та, манпа вӑл шутсӑрах кӑмӑллӑччӗ. Пӗррехинче Калымов ӳсӗрпе самаях мухтанса кӑтартнӑччӗ, пӗр сменӑ хушшинче арӑмӗ валли платье туянмалӑх «пайта» туни çинчен хавхалансах хыпарланӑччӗ.

Такси шоферӗ Антони ятлӑччӗ, анчах юлташӗсем те, паллакан çынсем те ӑна Калымов тесе кӑна чӗнетчӗç. Чӑн-чӑн хушаматне те эпӗ кайрантарах тин пӗлтӗм. Калымов тенине вӑл хӑнӑхнӑччӗ пулмалла, çавӑнпах-и, тен, Антони уншӑн пачах кӳренместчӗ, темле усаллӑн çеç тӑрӑхласа кулатчӗ. Калым тӑвасси уншӑн вӑраха кайнӑ чир евӗрлӗччӗ. Ютран килнӗ пассажирсене Антони юриех хула тӑрӑх ытлашши чуптаратчӗ, ытларах укçа илме яланах май тупатчӗ. Счетчик çинче унӑн кирек хӑçан та хӗвелпе тӗссӗрленнӗ кивӗрех картусӗ çакӑнса пыратчӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, Калымов çак хушамата чӑннипех тӳрре кӑларатчӗ. Юлташӗсем ӑна усçӑнах юратмастчӗç, хӑй те йыша питех туртӑнмастчӗ.

Хальхинче Антони Калымов манпа ытти чухнехи пек мар ӑшӑ кӑмӑллӑ пулчӗ, вашават каласрӗ, куçран та тӳрремӗн, шанчӑклӑн, темле çӗнӗрен çуралнӑ пекрех е айӑпран хӑтӑлнӑ çын майлӑрах пӑхрӗ; тӳрккеслӗхӗ таçта кайса кӗнӗ хӑйӗн.

— Паллама çук сана,— терӗм эпӗ, Калымовран тӗлӗнмеллипех тӗлӗнсе.— Эсӗ паян чӑпӑл тунӑ ача майлӑ.

— Паллама çук тетӗн-и, чх-хик?— иксу илнӗ пек кулса ячӗ Антони.— Пурнӑçра, ачамккӑ, тем те пулать, яланах Етӗрне çулӗпе пыраймӑн, тепӗр чухне Шашкаралла та пӑрӑнма лекет. Тӗрӗссипе каласан, эпӗ ку таранччен Шашкар таврашӗнче буксовать тунӑ, халь вара... чх-хик, Мускав çулӗ çине тухрӑм... Мана Калымов тетӗр-и? Çук, ачамккӑ, Калымова манма тивӗç. Калымов çук халь, чх-хик, эпӗ Антони Павлович Колесов, пӗрремӗш класлӑ шофер, комударник пулас çын. Калымов пӑчланчӗ, ячӗ те çухалчӗ, çӗнӗ çын çуралчӗ.

Антони кулли уçӑмлӑ пулчӗ. Сӑнӗ те чи тӳрӗ кӑмӑллӑ çыннӑнни майлӑ кӑмӑллӑн çуталчӗ.

— Ӗненместӗр-и?— вӑл, чӗрине хыпашланӑ пек хура çӑмпа витӗннӗ анлӑ кӑкӑрне тачка пӳрнисемпе сӑтӑркаласа илчӗ.— Ӗненместӗр-и?— тепӗр хут ыйтрӗ Антони.— Паллах, пӗрре ӗçке ярӑннӑ çын пӗр кун хушшинче ӗçме пӑрахнине ӗненме çук, чх-хик. Эпӗ те çавӑн евӗр пулнӑ. Ху пӗлен, кун каçа калым тӑваймасан çӗрӗпе çывӑраймастӑмччӗ, калым маншӑн хронически чир пекчӗ, чӗрене пӗрмай йӗкӗлтесе тӑратчӗ. Халь вара, шалиш, эпӗ те сан пек, Палюк пек çын, чх-хик...

— Кам вӑл Палюк?— ыйтрӑм эпӗ.

— Ан васка, вӑрах каян — аякра пулан,— теççӗ пирӗн шоферсем,— çула май йӑлтах хыпарлӑп-ха, хам епле этем ретне тӑнине те пӗлӗн-ха...

Тепӗр хут шыва кӗрсе тухсан канма выртрӑмӑр, вара вӑл мана çапла хурав турӗ. Ӗнентӗм ӑна. Чӑнах та таса чунлӑ çынпа тӗл пулсан, кирек епле пӑсӑк çын та тарӑн шухӑша каять. Ун чӗрине хускатсан, вӑл хӑй пурнӑçӗ çине çӗнӗлле пӑхма пуçланине эпӗ унчченех пӗлеттӗм.

— Çул çӳрекенсем пирӗн кулленех йышланса пыраççӗ, чх-хик,— шухӑша кайнӑ майлӑрах пуçларӗ Калымов.— Кашнинех хӑйне май ӗç тупӑнать ӗнтӗ. Аслӑ çул çине тухсан çуран утакансене сайра тӗл пулатӑн, вӗсем те е ватӑсем, кӳршӗ яла хӑнана каякансем, е çамрӑксем, çу илемӗпе киленекенсем. Хальхи çынсем ытларах автобуспа е çӑмӑл таксипе çӳреме кӑмӑллаççӗ. Çамрӑксемшӗн такси чи килӗшекен транспорт. Ку пирӗншӗн ал çемми вара.

Пӗр кунхине, вӑл икӗ эрне каялла, шӑматкун пулчӗ, ман Етӗрне еннелле кайма лекрӗ. Пассажирӑмсенчен виççӗшӗ çулланнӑ çынсемччӗ ӗнтӗ, пӗри Мускавран Етӗрнери тӑванӗсем патне хӑнана килетчӗ, тепри ял çынниччӗ, сӑнран пӑхсан пысӑк ӗçре ӗçлессӗн туйӑнатчӗ, виççӗмӗшӗ кукша пуçлӑ, чӗмсӗр пенсионерччӗ, унпа тахçанах паллашнӑччӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, пурте укçаллӑ çынсемччӗ, вӗсем таксишӗн укçа-тенкӗ хӗрхенменни пӑхсах курӑнатчӗ. Эпӗ пассажирсен кӑмӑлне куçран пӑхсах тавçӑрма тахçанах вӗренсе çитнӗ ӗнтӗ, хама май психолог, чх-хик... Енчен кашни пуса шута илекен çын пулсан, эпӗ унпа кайма килӗшместӗмччӗ, вӗсенчен калым таврашӗ пулмасса чӗре малтанах сисетчӗ. Паянхи тӑваттӑмӗш пассажир вара çирӗм иккӗ-çирӗм пиллӗксенчи çамрӑк пулчӗ. Унӑн самаях пысӑк чӑматанне багажнике хума лекрӗ. Тумланасса та таса тумланнӑ, çи-пуçне хаклӑ йышши пусмаран çӗлетнӗ. «Ку вара укçа-тенке тыткалама юратать, анчах шоферсем умӗнче те хытса тӑрас çук», савӑнса шухӑшларӑм хам. Паянхи пассажирсем пурте мана килӗшрӗç те, эпӗ пӗр сӑмахсӑрах, каçа хирӗç пулсан та, çула тухма шут тытрӑм, хӑш-пӗр чухнехи пек турткалашса тӑмарӑм. Çак çамрӑка уй-хир çулӗпе вунӑ çухрӑм ытла илсе каясси те мана хӑратмарӗ.

Çамрӑк пассажир таçтан аякран килет пуль тенӗччӗ, анчах вӑл Шупашкартах ӗçлет иккен. Вӑл машина ларнӑ-ларманах хавассӑн калаçма, хӑйне тахçанах çак çынсем çывӑх пулнӑ пекрех ирӗклӗн пакӑлтатма тытӑнчӗ.

— Пӗлетӗр-и, водитель юлташ, туяваскатӑп,— мана пирус сӗннӗ май хушса хучӗ çамрӑк çын.— Пиччем авланать, хӑвӑртрах çитесчӗ, эсир те, «тӗнчери лару-тӑрӑва» асра тытса, хӑвӑртлӑха шеллеместӗр ӗнтӗ, газне хушатӑр-и?

Çамрӑк çын усӑ кӑмӑллӑ пулни ун кашни хусканӑвӗнченех сисӗнчӗ. Кайран вӑл кӗтмен çӗртенех пиччӗшӗ пирки сӑмахлама тытӑнчӗ. Ун тӑван пиччӗшӗ ялти механизатор иккен, пӗлтӗр вӑл кукурус звенине ертсе пынӑ, гектартан тӑхӑр çӗр центнер кукурус тунипе çулçине хатӗрленӗ, çавӑншӑнах орден илме тивӗçлӗ пулнӑ. Ун пулас мӑшӑрӗ колхозра чапа тухнӑ чӑх-чӗп пӑхакан хӗр, иртнӗ çулта кашни чӑхран çӗр сакӑр вун çӑмарта пухса илнӗ, ӑна та медаль панӑ. Иккӗшӗ те ялта çук ятлӑ çынсем, туйне те халиччен пулман туй тӑваççӗ иккен. Вӑл, хайхи çамрӑк çын, пӗр эрне каяллах отпуска тухнӑ, çула пуçтарӑннӑ, анчах кайран чӑрмавсем сиксе тухнӑ, темле автоматла лини чарӑнса ларнӑ та, хӑй отпускра пулнине пӑхмасӑрах ӑна тӳрлетме заводра юлнӑ, ӗçе вӗçлемесӗр те пӑрахман. Автоматла линийӗ вара завода питӗ кирлӗ, механически цех ахаль те аран-аран план тултаркаласа пырать, çав линипе çамрӑк çын эрне ытла отпуск вӑхӑтне ирттернӗ.

— Уншӑнах ма пӑшӑрханас?— сӑмах хушрӑм эпӗ.— Ӗçленӗшӗн укçине тӳлеççӗ, отпуск вӑхӑтӗнче калым туни кансӗрлемест. Тата ӗçленӗшӗн тепрер эрне отпускне те тӑсса пама пултараççӗ.

— Калымӗ нумаях мар пуль-ха,— пуçне пӑркаларӗ пенсионер-пассажир.

— Ӗç укçара мар, автоматла лини вӑхӑтра хута кайни заводшӑн паха. Ну, мӗнле калас, автоматла лини механически цехшӑн сехет пружини майлӑ ӗнтӗ. Пружинӑ татӑлсан сехет ӗçлеймен пекех, механически те унсӑр пӗр кун та пурӑнаймасть,— çамрӑк çын куçӗсем, тарӑн та тӗм хураскерсем (эпӗ вӗсене куçкӗски çинче куртӑм), кӑмӑл туянӑ чухнехи пек йӑлтӑртатса илчӗç, кӑштах хӗсӗнчӗç, вӗсенче телей паллисем хӗмленсе çиçрӗç.— Эпӗ хам наладчик, пӗтӗм автоматла линисене тӗрӗслесе тӑратӑп, çавӑнпах ӗнтӗ, лини чарӑнсан, пӑрахса кайма пултараймарӑм. Паян туя çитес тесе çӗрӗпе çывӑрмарӑм, кунӗпе тенӗ пек цехран тухмарӑм. Мӗн тесен те, пичче туйӗ-çке-ха... Суять тетӗр-и? Çук, чӑнах калап, мухтанать тесе ан шутлӑр...

Пассажирсем ӑна пӗр пӳлмесӗр итлерӗç, уншӑн савӑннине те эпӗ туйрӑм. Чӑнах та, ун вырӑнӗнче пулсан хам та савӑнмалла: каччӑ çак эрнере, мӗн тесен те, хӗрӗх-аллӑ тенкине пӗр чӑрмавсӑрах хӑйпӑтса илнӗ ӗнтӗ. Кӗсъе тулли укçа пулсан, кам савӑнмӗ?

Пассажирсем пӗр вӑхӑт хӑйсем тӗллӗн калаçкаласа пычӗç, çамрӑк çынна мухтарӗç. Эпӗ вӗсен калаçӑвне кӑшт-кашт çеç итлекелерӗм. Руль тытса пынӑ чухне калаçӑва хутшӑнма юратмастӑп, ун пек чухне пӗтӗм шухӑш умри çул çине куçать. Халап-юмаха парӑнсан тимлӗхе çухатма пулать, вара авари,— ху пӗлен. Етӗрне çулӗ — аслӑ çул, кашни минутсерен машинсем хирӗç вӑшлатса-кӗмсӗртетсе иртеççӗ. Анчах çав кун вӑхӑт каçалана сулӑннӑччӗ те, хулана килекен машинсем сайра хутра çеç курӑнкаларӗç.

Кайран пассажирсем те йӑлӑхрӗç пулмалла, шӑпланчӗç. Çамрӑк çын та текех сӑмахламарӗ, сӑнӗ салхулланнӑ пек пулчӗ, тем аса илчӗ курӑнать. Тавралӑхӗ вара ман чуна шутсӑрах илӗртетчӗ. Çул хӗррипе ашкӑрса ӳсекен юмансемпе йӑрӑс пӳлӗ çамрӑк хӗр евӗр шурӑ хурӑнсем тӗнче хӗррине çити тӑсӑлнӑн туйӑнать. Утмӑл-çитмӗл километр хӑвӑртлӑхӗпе чупакан машин умӗнче вӗсем икӗ еннелле усӑлакан чаршав евӗр сирӗлсе пыраççӗ. Эпӗ вара ӑшӑмра вӑрманти кайӑк юррисене илтнӗ пек пулатӑп, вӑрмана кӗрсе чечек çыххи татса тухас патнех çитетӗп.

Ман пассажирсем те халь çак илемпе киленчӗç пулас.

— Мӗн, пине çитрӗ-им, чх-хик,— кулярах ыйтрӑм эпӗ, çумра ларакан каччӑ еннелле пуçа пӑрса.

— Мӗн пине çитни унта, ахальтенех шухӑша кайрӑм,— сӳннӗ пирус тӗпне усӑ кантӑкран вӑркӑнтарчӗ çамрӑк çын.— Эпӗ сире пӑхап-

пăхап та, эсир шутсăр ырă кăмăллă, таса чунлă, çын хуйхи-суйхине, нуши-пăшине чĕре патне хураканскер пулассăн туйăнатăр,— те тăрăхласа, те чăнласа каларĕ вăл, чухлаймарăм, анчах темшĕн чĕре, ырă мара сиснĕ лекрех, кăрт турĕ.— Халь эсир пĕтĕм чунăрпа руль умне çыпçăнса ларнă пек, пĕтĕм шухăш, пурнăç тĕллевĕ пассажирсемшĕн пулнă майлă. Ку тарана çитсе эсир никама та улталаса курман ĕнтĕ...

— Çапла, хăш-пĕр шоферсем калым тума юратаççĕ,— терĕ кукша пуçлă пенсионер.— Паян эпĕ пĕр пилĕк шофер патне пытăм, çавçав яла леçсе хăварăр-ха тетĕп, вĕсем хăнк та тумаççĕ, ял ятне асăнсанах пăрăнса тăраççĕ, калаçасшăн та мар. Эсир вара тӳрех килĕшрĕр. Чăнах та, хăш-пĕрисем уй-хир çулĕпе çӳреме шикленеççĕ. Пайталлă çул мар-çке-ха.

— Пĕрне хам та куртăм паян, тарăхнипе тем тăвас патне çитрĕм,— малалла каларĕ çамрăк çын, ун сасси хаяр илтĕнчĕ, вăл пĕр-пĕр судья майлă туйăнса кайрĕ, куçĕсем çиçĕмле йăлтăртатма пуçларĕç. Каччă ĕç пирки сăмах хускатассерен ун куçĕ улшăннине малтанах сисрĕм те, çак çамрăк ытла та чăкăлтăш çын пулассăн туйăнчĕ. Йĕкĕт малалла мĕн каласса кĕтсе хăлхасене чăнк тăратрăм.— Пĕр хĕрарăм, ачаллăскер, автобус шоферĕнчен лартса кайма тем пекех тархасласа ыйтрĕ. «Билет туян та, хăть çăва тĕпне кай», хуравларĕ лешĕ. «Кассăра билет юлман», йĕрсе ярас патне çитрĕ хĕрарăм. «Апла пулсан таксипе вĕçтер», чунсăррăн каласа хучĕ лешĕ. «Билет валли аран-аран тупкаларăм та, таксилĕх пуçри тутăра сутас-и ман?— хĕрарăм йăлт аптăраса çитрĕ.— Инçетрен килетĕп, юлашки укçама кăларса илчĕç, сан пекех чунсăрсем пур иккен çĕр çинче»...

— Эпĕ ăна укçа сĕнесшĕнччĕ, май килсен пĕр машинпах илсе каясшăнччĕ, çав хушăра, тавлашăва илтсе, пĕр çамрăк таксист пычĕ те леçсе хăварма пулчĕ. «Укçине киле çитсен тӳлĕн, тĕнче хĕсĕрех мар пулĕ-ха», терĕ вăл. «Ман машини аплах мар та-ха, майĕпен çитĕпĕр». Вăл хĕрарăм ачине асăрханса алла илчĕ, чăматанне йăтрĕ, хăй машини патне ертсе кайрĕ Тем пекех тав тăвас килсе кайрĕ ман çак ырă çынна.— Çамрăк çын самантлăха шăпланчĕ.— Сирĕн пек пархатарлă çынсем хушшинчи йĕксĕксем хирти çум курăк майлă, вĕсене, мăяна ана çинчен тасатнă пекех, пурнăçран пĕр хĕрхенмесĕр çумласа тăкмалла. Автобус шоферĕ çав хĕрарăма лартса кайнă пулсан, машини ванмĕччĕ ĕнтĕ, чиперех таврăнĕччĕ...

Етĕрне çулĕ паркет сарнă урай пек такăр пулин те, эпĕ машина ытлашши хăваламарăм. Мĕншĕнне халь калаймастăп ĕнтĕ, унччен эпĕ çил кăларса вĕçтереттĕмччĕ, спидометр йĕппи çĕр еннелле куçса пыратчĕ. Хам та пĕлместĕп, темшĕн ман çак çамрăкпа ытларах вăхăт пулас килчĕ. Вăл кăштах ман чуна çӳçентерчĕ пулин те чĕрене çемçетрĕ. Умри куçкĕские кăштах çавăртăм та йĕкĕте вăрттăн-вăрттăн сăнама тытăнтăм. Каччă куçĕсем тĕм хура, куç шăрçи те палăрмасть. Çӳçĕ вара, çуркуннехи тирек мамăкĕ евĕр, кăпăшка, çемçе, ăна вăл хыçалалла якатса туранă; пĕр пайăрки çеç çамки çине авăнса усăннă. Çакăн пек хура куçлă та тĕссĕр çӳçлĕ çынсем шухă пулаççĕ тенине илтнĕччĕ, çапах та çак йĕкĕт ырăнлă та вашават, сăпай, евĕклĕ, хăй виçине пĕлекенскер пулассăн туйăнчĕ. Пиншак лацканĕ çине, ВОИР значокĕпе юнашар, комсомол активисчĕн значокне çыпăçтарса хунă. Каçăр сăмса çунаттинчен икĕ еннелле те çинçе йĕр усăнать, вара йĕкĕт пĕрмай йăл кулать пе[illegible].

Сасартăк хĕвел пытанчĕ те пăт-пат çумăр ӳккелеме пуçларĕ. Машин кантăкĕ çинче чĕркĕмĕл евĕр тумламсем шăрçаланчĕç; кайран вĕсем пĕрлешсе кайрĕç, ăмансем пек кукăрмакăр авкаланчĕç, «дворник» щетки сирнипе икĕ еннелле такамран тарнă пек куса-куса анчĕç. Аслати-мĕн илтĕнмерĕ, çумăрĕ шарласах çума тытăнчĕ.

Тепрер çухрăмран эпир çул хĕрринче çăмăл машин тăнине куртăмăр. Эпĕ газ патăм, нăрт! тутарса сигналларăм, вăшт кăна кивĕ машинран пăрăнса иртсе кайрăм, педальсем çине пускаларăм, хăвăртлăха улăштартăм. Çав хушăра çамрăк çын мана хулпуççирен тĕртсе илчĕ.

— Тăхтăр-ха, водитель юлташ,— терĕ вăл, вара машин кустăрмисем чарăннă-чарăнман алăка уçрĕ те асфальт çине сиксе тухрĕ. Эпĕ йĕкĕт хăтланкăшне тӳрех ăнлантăм. Çаксем мана пачах килĕшмерĕç, çул çинче «курак шутлакан» шоферсемпе аппаланма юратмастăм эпĕ, ун пеккисенчен хăвăртрах, асăрхамăш пулса, тарса каяттăм.

— Мĕн, тăванăм, хĕртĕнетпĕр-и?— илтрĕм эпĕ каччă сассине. Вара эпĕ, ним тума çуккипе, хам та капот айĕнче чакаланакан шофер патне ирĕксĕртереххĕн пытăм.

— Зажигани çук,— кăмăлсăррăн хуравларĕ лешĕ, аллине шăлкаласа.— Тем пулчĕ, ним те ăнланмастăп. Пурте йĕркеллĕ пек, мотор чĕрĕлмест.

Эпĕ «зажиганисĕр» шофера палларăм, вăл тин çеçрех пирĕн гаражра ĕçлеме пуçланăччĕ, хăй çамрăкчĕ, Удалов хушаматлăччĕ, ĕçе вырнаçнă-вырнаçманах хăйне май йĕркесем тума хăтланатчĕ, час-часах механиксемпе тытăçкаласа илетчĕ.

— Инçе кайма тухнăччĕ-и, чх-хик?— ăшăмри савăнăçа аран-аран пытаркаласа ыйтрăм эпĕ.

— Ак, пĕр юлташа леçсе хăвармаллаччĕ те,— айăпа кĕнĕ пекрех каларĕ Удалов, хăй хĕрелсе кайрĕ, ман умра вăтанчĕ пулас.— Тен, эсир пулăшатăр мана? Тем тесен те, сирĕн ăсталăх пур ĕнтĕ, нумай çул «баранкă» умĕнче... Эх, çак кивĕ тăрантаспа çула тухиччен...

— Хам та васкатăп, ачамккă, ав тăвату «тигр» кĕтеççĕ, çумăр та вăйланса килет пулас, чх-хик,— пăрăнтăм унран.

Ман çамрăк пассажир çав вăхăтра кабинă алăкне уçрĕ, ун сăнĕ сасартăках çуталнă пек пулчĕ.

— Чимĕр-ха, эсир-и ку?— хавассăн кăшкăрса ячĕ каччă.— Паçăр ăçта кайса кĕтĕр эсир? Шырарăм-шырарăм, тупаймарăм. Хампа пĕрле лартса тухасшăнччĕ.

Хĕрарăм чĕнмерĕ, çывăракан ачине çеç чĕркенçи пулчĕ.

— Халь мĕнле-ха капла? Машини каймасть вĕт-ха.

— Тем амакĕ пулчĕ, çула тухнă чух пурте йĕркеллĕ пекчĕ, халь ав ниепле те мотор чĕрĕлмест,—аллине шанчăксăррăн сулчĕ Удалов.

Йĕкĕт шофер вырăнне вăр-вар кĕрсе ларчĕ, уççа пăрчĕ, стартер çине пусрĕ. Стартер нăрлатрĕ, анчах мотор чĕрĕлмерĕ. Кайран вăл алă уççипе çавăрма хăтланчĕ, капла та ĕç тухмарĕ. Эпĕ çаксене ним пулман пекех аякран пăхса тăтăм. «Руль умне лариччен машинă чĕрине чухлама пĕлес пулать,— Удалов пухура мана сăмах тĕртнишĕн юнăхса шухăшларăм эпĕ.— Вăт халь çул çинче çăвар карса лар ĕнтĕ, чх-хик...»

Удалов иртнĕ пухура мана калымщик тесе тиркешнĕччĕ, юлташлăх çук тесе хăртрĕ. Çул çинче пĕр-пĕр шоферпа инкек пулсан эпĕ нихçан та ăна пулăшмастăп, хам машина та питĕ йĕркесĕр тытатăп имĕш. Кунсăр пуçне тата счетчике калле çавăрса государствăна улталатăп иккен.

Калăр-ха хăвăрах, çапла пĕтĕм халăх умĕнче намăс кăтартнă хыççăн, эпĕ ăна епле пулăшăппа? Ан тив, хăй пĕлнĕ пек аппалантăр, маншăн пулсан, хăть çĕр каçипех çăлтăр шутлатăр...

Çапла шухăшларăм та çаврăнса утрăм.

Хĕрарăм аллинчи ача канăçсăрланса илчĕ, ахăртнех ют çын сассипе вăранчĕ пулĕ те макăрма тытăнчĕ, ман шухăшсене çурмаллах татрĕ. Ачи пĕчĕккĕ, пĕр çич-сакăр уйăхсенче кăна пулмалла. Каччă кĕсйинчен шоколад кăларса хĕрарăма тыттарчĕ.

— Ĕçсем питех мар, каплипе çитессе шанма çук,— йĕкĕт хĕрарăм çине хĕрхенӳллĕн пăхкаларĕ. Эпĕ аллăма султăм та хам машин патне васкарăм.

— Кайрăмăр, вăхăт кĕтмест, çитес пулать, сире туйра кĕтеççĕ, чх-хик.

— Чимĕр-ха,— хыпăнса ӳкнĕ пек пулчĕ каччă.— Атьăр, тухăр, сире хамăр машинпа лартса каятпăр,— илтрĕм эпĕ çамрăк çын сассине. Ку вара мана тӳрех вĕчĕрхентерме пуçларĕ. Вĕçкĕнленекенсене кăмăлламастăм эпĕ.

— Ман машинра вырăн çук,— хама хам алла илме хăтлантăм эпĕ. Кашни пули-пулми пассажир шофера вĕрентме хăтланнине чăтма пултараймастăп.— Атьăр, çамрăк çыннăм, ларăр, каçчен çитес пулать, ман ĕç кунĕ пĕтнĕ, сире хисеплесе кăна...

Йĕкĕт мана хултан тытса чарчĕ те хăйне хирĕç çавăрса тăратрĕ, тĕм хура куçĕсемпе шăтарас пекех пăхса илчĕ. Хăйĕн сăнĕ малтанхи пек лăпкă та йăваш пулчĕ, анчах унран хăпма çуккине тӳрех чĕре сисрĕ. «Сан пек маррисене куркаланă эпĕ, санран хăпăп-ха, чх-хик», ăшăмра куларах шухăшларăм çав хушăрах.

— Итлĕр-ха, водитель юлташ, каçарăр та-ха, сирĕн ятăра пĕлейместĕп эпĕ, паллашаймарăмăр, çаплипех сывпуллашма лекет,— ун сасси хурçă пек янкăр янрарĕ, клаксофон пекех туйăнса кайрĕ, чĕрене кăрт сиктерчĕ.

— Мĕн пулчĕ апла, чх-хик? Çак хĕрарăмшăн-и? Шофершăн-и?

— Пуриншĕн те... тен, сирĕншĕн те пулĕ... Хĕрарăмăн инçе каймалла, каçа хирĕç ачипе вăрман варринче тăратса хăвараймăпăр ĕнтĕ,— пăшăлтатса каларĕ çамрăк çын. Эпĕ унăн паçăрхи калаçăвне аса илтĕм.— Тăнлăр-ха, эсир ырă çын пулăр... Вăл инçетрен таврăнать, Çĕпĕртен, амăшĕ патне килет... Упăшки геолог ун... Тархасшăн ман вырăна лартса кайăр, укçине те эпĕ хамах тӳлĕп... Çук, кунта çитнишĕн çеç мар, хĕрарăма киле çитернĕшĕн те хамах тӳлетĕп... Ан пăшăрханăр. Тархасшăн, ыр кăмăллă пулсамăрччĕ. Эпĕ сире çав тери шанатăп.

Эпĕ йĕкĕте хирĕç тавăрса калама ĕлкĕреймерĕм, çамрăк çын хăй чăматанне багажникрен кăларчĕ те çул çине лартрĕ, çав хушăрах ачаллă хĕрарăма машинă патне çавăтса пычĕ.

— Пурте йĕркеллĕ пулать, ан пăшăрханăр,— мана лăплантарасшăн пулнă пек хулпуççирен çапса илчĕ вăл.

— Эсир туя ĕлкĕрейместĕр вĕт-ха, чх-хик,— уççăнах тăрăхласа кулас килчĕ ман.— Мĕнле-ха капла?

— Маншăн ма кулянас?— çамкине сăтăркаласа илчĕ каччă.— Çак юлташа та пулăшас пулать, куратăр пулĕ, шофер «загорает»? Эпĕ машин таврашне чухлакалатăп, çара кайиччен тракторист пулнă.

Эпĕ вунă çул ытла таксипе çӳретĕп пулин те кун пеккине пĕрремĕш хут тĕл пултăм. Пĕр пассажир те хăй каяс вырăнне теприне, палламан çынна, лартса янине курманччĕ. Çамрăк çын кĕсйинчен хут укçасем кăларчĕ, шутласа мана тыттарчĕ. Кунта киличчен тăваттăмĕш пайне илсен те ытлашшипех юлать. Самантлăха çеç пуçра телейлĕ шухăшсем вĕлтлетсе иртрĕç. «Вăт сана калым», терĕм эпĕ ăшăмра савăнса, анчах çакна каччă палăртмарăм. Счетчик шутланинчен укçа юлать, ку çулпа эпĕ сахал мар çӳренĕ, пĕлетĕп. «Акă сан валли, Калымов юлташ, киле çитсен «прицеплă икĕ тонкă пулать», шухăшларăм ăшра кулкаласа. Анчах çав самантрах шухăшăмсенчен хам вăтанса кайрăм, чĕре, темле йывăр суран кастарнă пек, сурса ыратса кайрĕ. Эпĕ яланхи йăлана пăсса (пассажирсенчен «прицеплăх» илме нихçан та турткаланса тăман, вĕсене уншăн спасибă та каламан), кирлĕ чухлĕ шутласа илтĕм те ыттине каялла çамрăк çынна сĕнтĕм. Каччă аллине çеç сулчĕ.

— Пултăрах, юлсан, тепрехинче тавăрса парăр,— терĕ те йĕкĕт, Удалов машини патне утрĕ.— Эпир пĕр хулари çынсем вĕт-ха, курнăçатпăр.

Эпĕ ирĕксĕртереххĕн мотора хута ятăм, йывăр туйăма çĕнтерсе çула хускалтăм. Самантлăха лăпланнă çумăр татах тепĕр хут килсе çапрĕ, хура пĕлĕтсем пĕтĕм тӳпене карса илчĕç. Çамрăк çын йывăр чăматанпа юсавсăр машин патĕнче тăрса юлчĕ.

Ман кăкăр кĕсйинче каччă укçи, анчах вăл вут пекех чĕреме çунтарчĕ. Кун та каçалана сулăнса пычĕ, пассажирсем мана васкатрĕç. Хам та шоссерен пăрăнса уй-хир çулĕнче пылчăка ларасран шиклентĕм. Маншăн паян канăçлă кун пулмарĕ. Халиччен нихçан та пассажирсемшĕн çапла пăшăрханманччĕ, чăрмав-мĕн тупăнсан, вĕсене çурма çултах антарса хăвараттăм та, счетчик кăтартнă тăрăх укçа илсе, пĕр шухăшсăр гаража таврăнаттăм, тепĕр кунне вара ĕнерхи ĕçсене пачах асран кăлараттăм. Хальхинче те хĕрарăма киле çитиччен ăсатас шухăшăм çукрахчĕ.

Чăнах та шоссерен пăрăнсан, пайтах терт курма лекрĕ вара. Вăйлă çумăр хыççăн çул йăпăлкаланса-пылчăкланса кайрĕ. Кайри кустăрмасем айĕнче пылчăк сăрăлчĕ, ман «Атăл» час-часах «хӳрине» пăркаларĕ, пысăк мар лупашкасенех кĕре-кĕре ларчĕ, урапасем пĕр вĕçĕмсĕр пушăлла çаврăнчĕç; хĕрарăм машинран туха-туха тĕртни те пулăшаймарĕ, хам та йăлт пылчăкпа вараланса пĕтрĕм. Эпĕ çак хĕрарăма çул хĕрринче, хирте тăратса хăварас патне çитрĕм, анчах çамрăк çынна аса илтĕм те чĕрене хытартăм, мана темле асамлă вăй çаплах малалла туртрĕ.

Çапла сехет ытла уй-хир çулĕпе асаплансан хĕрарăма яла çитертĕм-çитертĕмех. Вăл мана хăна тăвасшăнччĕ, кӳршĕрен укса илсе çулшăн тӳлесшĕнччĕ. Тепри пулсан пĕр сăмахсăрах илнĕ пулĕччĕ, анчах каллех каччă мана пӳрни-

# Шăпчăксем сайăплă мар

*(Çула май курнисем)*

Герасим ХАРЛАМПЬЕВ

Паян мар, ĕнер те мар, кăçалхи июль уйăхĕн пуçламăшĕнче пулса иртрĕ ку. Хальхинче эпĕ Çĕмĕрле районне ятарласах ялсенче çӳресе курас ĕмĕт-шухăшпа пынине каласан, темшĕн-çке, çула май пулнă çынсем мана Вăрманкас еннелле кайма питех сĕнмерĕç, чи малтан Турхан ялне асăнчĕç, «Иван Григорьевич патне çитсе курăр», терĕç. Куна тавçăрса илтĕм: «Комбинат» колхоза кайса курсан çул çӳревçĕн кăмăлĕ хуçăлас çук. Ура çинче тахçанах çирĕп тăракан хуçалăх ку. Анчах манăн шухăшсем урăхларах-ха: пуринчен ытла çынсемпе калаçас килет. Çул çӳревçĕн кăмăлне килентерекенни вăл, паллах, çутçанталăк, илемлĕ те пуян çĕршыв, апла пулин те пирĕн вăхăтра çĕршыва илем кӳрекенĕ, ырлăхлă-пурлăхлă тăваканĕ вăл— çын, çав çынсене курас, вĕсен чунчĕринчи паянхи кăмăл-туйăм мĕнлине, вĕсен ĕмĕт-шухăшĕсене пĕлес килет. Ырă кăмăллă, тараватлă çынсене кашни ялтах тĕл пулатăн, çул çӳревçĕшĕн тесен, ку вара— чун уççи.

— Иван Григорьевича мĕн ачаранах пĕлетĕп-ха, ахаль те ун патне çак кунсенчех Александр Артемьев писатель килсе çитме пулсаччĕ, ĕçри çынна ытлашши чăрмантарас мар,— терĕм эпĕ çул çӳревçĕ тусăма. Сăмах май куна та каласа хăварам: ку хутне çул çӳреме манпа пĕрле Горький хулинчи медицинă институтĕнче вĕренекен студент Николай Александров та тухрĕ. «Медицинă науки вĕрентнипе хакласан, çул çӳрени — чи сиплĕ кану, сирĕнпе пĕрле пыма ирĕк парсамăр», терĕ вăл. Кану мĕнне çапла тĕрĕс ăнланнă çынпа епле килĕшмĕн-ха. Килĕшрĕм, туспа юнашар чух çул çӳреме тата хаваслăрах пулать терĕм.

Эпир, тусăмпа, хамăр та Çĕмĕрле енчисемех, Çĕмĕрлере темиçе хут та пулнă, хула урамĕсемпе урлă-пирлĕ пайтах çӳренĕ, çапах та, хули çав тери хăвăрт ӳссе пырать те, кашни килмессерен çĕннине мĕн те пулин куратпăр. Хула никĕсне хывнă комбинат патне çитетĕн-и е Çĕмĕрле ялĕ еннелле тухса çӳретĕн, пăхатăн та, шалтах тĕлĕнсе тăратăн: пĕрер-икшер çурт та мар, çĕнĕ урамсем ӳссе ларнă! Урамĕсем тата епле илемлĕ! Тӳп-тӳрĕ, тап-такăр, тем вăхăтра ешĕл садсем хушшине пытанма ĕлкĕрнĕ. Ĕçчен те çав Çĕмĕрле çыннисем, урăх мĕн калăн.

Хутарпа Çĕмĕрле хушшинчи çула çĕнĕрен тăваççĕ. Якатса, хытарса тухма ĕлкĕреймен çул кун сиктермесĕр çунă çумăрпа пула иртсе çӳреме çук çăрăлса выртать, çапах та эпир утма лапра пулассинчен хăраса тăмарăмăр, тӳрех вăрманалла ыткăнтăмăр. Илĕртет, хăй патне чĕнет кунти вăрман, çавнашкал асамлă вăй пур ку енчи вăрманăн: кунта мĕн ĕлĕк-авалтанпа пирĕн Аслă тăван çĕршывăн паттăрла вăй-хăвачĕн символĕ пулса, çĕршер çул ӳсекен юмансем лараççĕ, эпир çав юмансене курма, вĕсен умĕнче пуç тайма васкарăмăр.

Вăрмана кĕрсен каллех çумăр çума пуçларĕ. Вăйлă çунă вăхăтра кăштах йывăç хӳтлĕхĕнче тăтăмăр та, каç пуличчен Вăрманкаса çитес тесе, шĕпĕртетсе çăвакан çумăр айĕнчех утрăмăр. Çумăрĕ вара эпир вăрмантан тухса пынă чух тин чарăнса пирĕн ума асамат кĕперри карса хăварчĕ те, юлашки пĕлĕтсем таçта инçетелле кайрĕç, кунта хĕвел пăхрĕ, вăш-вăш ăшă çил вĕрчĕ...

Турханпа Вăрманкас уйĕсем вăрман хĕрринченех пуçланаççĕ. Акă вăл, пирĕн çĕршывăн тепĕр илемĕпе пуянлăхĕ! Йывăр пучахсем çумне тытăнса юлнă çумăр тумламĕсем кăвакăн-симĕсĕн йăлтăртатса, вăш-вăш çил вĕрнĕ чух кассăн-кассăн хумханса ларакан ыраш уйĕсем чăн тинĕс евĕр, кăçал уйрăмах ăнса ӳснĕ пăрçа пуссисем чечек тĕрĕллĕ кавир сарнă пек курăнаççĕ. Кун пек уйсенче çӳренĕрен çӳрес килет, çавăнпа-и тен, эпир, вун пилĕк çухрăм ытла утрăмăр пулин те ывăннине те, вăхăт мĕнле иртнине те туймарăмăр.

Эпир Вăрманкаса пырса кĕнĕ чух самаях каçхи сăн ӳкрĕ, кăшт тăхтасан хĕвел те анчĕ. Ĕçрен таврăннă çынсем каçхи апат çисе çывăрма выртас умĕн пĕри те тепри урама тухрĕç. Йăли çапла: ĕçсем паян мĕнле пулса пынине, ыран мĕн тумаллине пĕлмелле... Председательпе бригадирсем ĕç хушма кашнин килнех çитсе çӳреме ĕлкĕреймеççĕ.

Ял варринчи йăмрасем айне виççĕн-тăваттăн пухăнчĕç.

— Вăрманкас ĕçченĕсене сывлăх сунатпăр!—пырса калаçăва хутшăнтăмăр эпир те.

— Ĕçченсем тесе хисеплеме тивĕçлисемех мар-ха,— ытарлăн шӳтлерĕ пĕр хĕрарăмĕ. Çивĕч куçĕсене мĕнле вылятнинченех паларать, сăмах-юмах кастарма питех ӳркенсе тăраканни мар ку.

— Мĕншĕн хурлатăр вара эсир хăвăра? Уйсенче кăçал тырăсем сирĕн те Турхансеннинчен каях мар. Эсир те çĕнĕ клуб тунă акă, фермă çурчĕсем, складсем...— хуçине юрама ăста хăна евĕр сăпайларĕ ман тусăм.

— Турхансем çинчен ырă ят тухнă. Ырă ят çынна вăй хушать, хурлани — хавшатать. Пире ялан хурлаççĕ те, ĕçре ал çыхланакан пулчĕ,— терĕ тепĕр арçынĕ. Сăмахсене çирĕппĕн, витĕмлĕн калать ку çын. Çук, Вăрманкаса ырă ят хăй тĕллĕн, е ыттисем ĕçленипе пырса кĕрессе кĕтсе ларакан чăкăлтăш мар вăл. Ял чысĕшĕн, пĕрлешӳллĕ хуçалăхшăн чунĕ ыратнипе çавăн пек калаçать.

— ...Çапла,— терĕ сăмахне вĕçлесе çак çын,— халлĕхе кахаллисен шутĕнчех хисепленме тивет. Пурăна-киле пирĕн çинчен те урăхларах калаçма тытăнĕç-ха. Кăçал, акă, Яков Никифорович чылай тупăш илет. Çитес çулсем тата ытларах...

— Кам вăл? Ку ята эпĕ Çĕмĕрлерех илтрĕм. Çĕмĕрле çыннисем пасарта: «Паян Яков Никифорович килмен-ши? Çавăн çырлине туянасчĕ», тесе хыпкалансах шыраса çӳретчĕç,— пĕлес килчĕ ман тусăмăн.

— Вăрманкаса килсе çитсенех пире Татьяна Федоровна Афанасьева учительницă та: «Яков Никифоровича курмасăр ан кайăр», терĕ. Чăнах та, кам вăл?— ыйтрăм эпĕ те.

— Пирĕн колхоз пахчаçи,— терĕç Вăрманкассем пĕр харăс. Мĕнле сисĕмлĕн каланинченех тавçăрса илме пулать, Вăрманкас çыннисем ку çын ятне ытахальтен часчас асăнмаççĕ.

Хĕвел анса самаях тĕттĕмленчĕ те, вăл каçхине эпир Яков Никифорович патне кайса ăна кансĕрлес мар терĕмĕр. Анчах ун çинчен шухăшласси пуçран тухмарĕ. Мĕнлерех çын-ши вăл? Пахчаçăсем вĕсем çутçанталăка, пурнăçа ытти çынсем пек мар, этемĕн чи пысăк та илемлĕ туйăмĕпе юратаççĕ. Ун пек

---

пе юнаса «ан хăйнă пултăр», тесе калассăн туйăнчĕ.

Аслă çул çине каялла тухнă вăхăтра каç сĕмĕ таврана хупăрлама пуçларĕ. Çумăр та чарăнчĕ, пĕлĕт сар хĕр пуçĕнчи сенкер тутăр евĕр тасалчĕ те унта-кунта çăлтăрсем йăлтăртатма тытăнчĕç. Нумай вăхăт та иртмерĕ, эпĕ хайхи çамрăк шофер Удалов патне çитсе чарăнтăм. Машинă моторĕ чыхăна-чыхăна ĕçлетчĕ ĕнтĕ, çамрăк çын вара йăлтах çупа, пылчăкпа вараланса пĕтнĕччĕ.

— Пулчĕ, халь калла таврăнма пултаратăн,— йĕкĕт шофер çине тулли кăмăлпа пăхкаларĕ, вара вăл çул хĕрринчи лупашкара аллине çума тытăнчĕ.— Хулана таврăн, ку машинпа пурпĕрех инçе каяймăн. Кам ухмахĕ сана çак çĕтĕкçатăкпа çула кăларса янă, тупата пĕлместĕп. Механиксем мĕн тăваççĕ сирĕн унта? Чим-ха, отпускран таврăнам, пĕрре сирĕн патăрта комсомол рейдне ирттерме лекет пулмалла. Пирĕн заводра комсомол рейчĕсем йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме питĕ хăвăрт пулăшаççĕ.

Удалов айăпа кĕнĕ пекрех пăхкаларĕ те кабинине кĕрсе вырнаçрĕ.

— Эсир мĕнле тата, чиперех çитерсе хăвартăр-и?— ыйтрĕ йĕкĕт, ман пата пырса.

Эпĕ кĕскен çеç хуравларăм.

— Тавтапуç сире, хам авланнă чух туя чĕнĕп,— кулса ячĕ вăл, шап-шурă шăлĕсене кăтартса.— Пыратăр пулĕ?

— Эсир халь епле çитетĕр? Ларăр, киле çитерсе хăварăп эппин,— сĕнтĕм ним калама пĕлмесĕр.

— Маншăнах ма машинă хăвалас? Майлашăп-ха. Сирĕн те ĕç кунĕ пĕтрĕ пуль ĕнтĕ, тен, килте ачăрсем кĕтеççĕ-тĕр?

Чăнах та, мана килте кĕтетчĕç, çитменнине тата кӳршĕсем менельнике чĕннĕччĕ, çавна пулах, калым тăвас ĕмĕтпе, каçа хирĕç çула тухма килĕшнĕччĕ. Анчах эпĕ çакна, çав ачаллă хĕрарăмпа çак йĕкĕте пула, йăлтах асран кăларнăччĕ.

Анчах халь маншăн пурпĕрех пулчĕ, тепрер сехет юлса çитсен те, çак минутра таврăнсан та мăшăрăм сăмахĕнчен çав-çавах хăтăлаймастăн.

Аллăма султăм та машина калле çавăрма тăтăм. Çав вăхăтра пирĕн еннелле пĕр грузовик çывхарса килни курăнчĕ. Çамрăк çын аллине çĕклерĕ, вара машин чарăннă-чарăнманах чăматанне кузова пăрахрĕ, мана сывлăх сунса аллипе сулчĕ те кабинăна кĕрсе вырнаçрĕ.

Унтанпа икĕ эрне иртсе кайрĕ, анчах çак çамрăк çын çаплах куç умĕнчен каймарĕ, эпĕ ăна ниепле те манаймарăм. Ĕнер пирĕн гаражри комсомолецсем рейд ирттернĕ терĕç. Ăна темле каччă, тĕссĕр çӳçлĕскер, ертсе пынă иккен. Камне пĕлеймерĕм, комсомолăн хула комитечĕн членĕ, тесе калаçкаларĕç. Анчах эпĕ тӳрех çав çамрăка аса илтĕм, вăл пулассăн туйăнчĕ.

Каçхине арăмпа кинона кайма тухрăмăр. Шăп аслă урамра эпĕ пачах кĕтмен çĕртен дружинниксен ушкăнĕнче çамрăк çынна куртăм. Сывлăх сунтăм, аллине чи çывăх юлташла ăшшăн пăчăртарăм, кайран, пĕлес килнине пытараймасăр, хушаматне ыйтрăм. Вăл хавассăн кулкаларĕ те мана çурăмран лăпкаса илчĕ.

— Заводра мана пурте Палюк тесе чĕнеççĕ, эпĕ завод çынни,— терĕ кăна.

— Чăнах та кам вăл? Çав Палюка пула юлташăмсем мана хам хушаматăма калле тавăрчĕç, пурте мана Антони Павлович Колесов, тесе чĕнме тытăнчĕç. Акă мĕнле ĕçсем пулса иртрĕç ман пурнăçра, чх-хик,— кулкаларĕ Антони кăмăл тулнине пытараймасăр.— Тен, эсир тĕм хура куçлă, тĕссĕр çӳçлĕ, яштака кĕлеткелĕ çамрăк çынна курнă пулĕ? Курнă пулсан — вăл Палюк, завод çынни, ан манăр!

çынсем тараватлă чун-чĕреллĕ, ырă кăмăллă пулаканччĕ. Кун чун-чĕри, кăмăлĕ мĕнле-ши?..— ыйту хыççăн ыйту тухса тăчĕ ман ума.

Яков Никифорович патне каяс мар терĕмĕр те, анчах урамран пурпĕрех кĕрес килмерĕ. Каçхине ялăн хăйне май илем пур. Кун пек тăр çуллахи чи кĕске каçсем пушшех илемлĕ. Çумăр хыççăн нӳрĕ те ăшă сывлăш хумлăн-хумлăн пырса çанçурăма ачашлать, таçтан анкартисем енчен чечексемпе çырла шăрши кĕрет. Таса та çутă уçă сывлăшпа кăкăр туллин, тăраниччен сывлас килет, çавăнпа эпир, тусăмпа, ял варринчи пралук тĕлне çитсен анкартисем хыçне тухрăмăр. Кунта сывлăш тата уçă, тавралăх тата илемлĕрех. Умра, пĕр енче — çын çӳлĕш ӳснĕ ыраш уйĕ, тепĕр енче— Вăрманкассем хăйсем лартнă йăрăс хурăнсем, хăвалăх, мăн вăрман... Уяртса пĕлĕтсенчен тасалнă хĕвеланăçĕ кĕренĕн те кăвакăн курăнать, янкăр тӳпери çăлтăрсем çутăран çутăрах йăлтăртатма тытăнчĕç. Çак ытарма çук илеме курса киленсе эпир, тусăмпа, анкартисем хыçĕнчи çулпа йăрăс хурăнсем патнелле утрăмăр.

«Пăть-пăльтăк! Пăть-пăльтăк!..» —илтĕнсе кайрĕ путене сасси.

— Тĕлĕнмелле кайăк çак путене. Кăнтăр кунĕ-и, каç-и, ир-и — нихăш вăхăта та пĕлмест, авăтать те авăтать,— терĕ ман тусăм Николай.

— Путене мĕншĕн çапла авăтнине пĕлетĕн-и?— ыйтрăм эпĕ.

— Çук, пĕлместĕп,— терĕ тусăм.— Мĕншĕн?

— Апат шырама кайнă мăшăрне чĕнет,— тахçан пĕр кĕнекере вуланине аса илтĕм эпĕ.

— Мăшăрне чĕнет эппин... Çутçанталăкра пурте мăшăрлă çав. Чĕрчун та, ӳсентăран та... Шăнкăрчсем авă пĕрре мăшăрлансан пĕр-пĕринчен нихçан та уйрăлмаççĕ тет. Тĕрĕс-и вăл?— ыйтрĕ манран тусăм.

— Тĕрĕс. Сăнавçăсем ăна пурте çапла калаççĕ.

Ман тусăм кун хыççăн кăштах шухăша кайса пычĕ те:

— Эх,— терĕ,— мăшăрлăх çавнашкал пулма кирлине хăш-пĕр çынсене вĕрентесчĕ.

— Асту,— тĕртсе илтĕм эпĕ тусăма,— хăв хусах-ха. Авлансан, шăнкăрч пекки мар, куккук евĕрли лексен, тен, урăхла калаçма пуçлăн. Куккук авă чĕппине те хăй пăхса ӳстермест, çăмартине пăрчăкан йăвине хурса хăварать те,— ĕçĕ пĕтнĕ.

— Куккук евĕрлине мар, чĕкеç пеккине тĕл пуласчĕ,— шӳтле каларĕ, анчах чăн ĕмĕтне пытармарĕ хăй.

— Шăпчăк пеккине тупсан тата телейлĕрех пулатăн,— терĕм эпĕ, тусăмăн кăмăлне тивĕçтерме тăрăшса.

Унччен те пулмарĕ, шăпах çак самантра пирĕн çывăхрах, хурăн çинче, пĕр шăпчăк хăйĕн мĕн пур сассипе янратса юрă шăрантарма пуçларĕ.

— Чим, ку тата мĕне пĕлтерет?— тĕлĕнсе, тапах чарăнса тăчĕ тусăм Николай.— Ку вăхăтра шăпчăк юрланине пĕрремĕш хут илтетĕп,— терĕ.

— Каçĕ, вырăнĕ ытла та илемлĕ кунта. Çав илеме курса киленнипе чăтса лараймарĕ пуль,— терĕм эпĕ.

— Ан та кала. Вăрманкаса мар, таçта, асамлă çĕршыва килсе кĕтĕмĕр пулас эпир. Ларсах итлер-ха ку шăпчăк юррине,— сĕнчĕ тусăм.

Эпир çул хĕрринчи курăк çине лартăмăр. Шăпчăк пĕр çавра юрлать те тепĕр хушă шăпланса ларать. Шăп ларнă вăхăтра вăл: «Ман юррăма кам та пулин илтрĕ-ши?»— тесе итлет-ши?..

Мĕн тетĕр, чăн та çавăн пекех пулса тухрĕ. Таçта, инçетре, тата тепĕр шăпчăк юрлама тытăнчĕ. Сасси çывхарнăçем çывăхарахра илтĕнет, хăй кунталла вĕçсе килет пулмалла. Акă, ун сасси те пирĕн умри хурăн çинчех илтĕнме пуçларĕ, халь икĕ шăпчăк ылма-тĕлме шăрантараççĕ кăна хăйсен çепĕç юррине.

Шăпчăксен юррине итлесе ларнă май ман тусăм тарăн шухăша путрĕ. Ку вăхăтра ăна мĕнле ĕмĕт-шухăшсем пырса кĕнине ыйтса калçĕрлес мар терĕм. Çук, тусăм хăй те нумаях лараймарĕ, шăпчăксемпе пĕрле юрă пуçларĕ:

«Соловьи, соловьи, не тревожьте солдат,
Пусть солдаты немножко поспят»...

Çартан пĕр çул каярах кăна таврăннă тусăма шăпчăксем аса илтернĕ юрă мана та иртнĕ çулсене аса илтерчĕ. Çапла, пирĕн çĕршыва питех те йывăр килнĕ вăхăтра— Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче А. Фатьянов поэт çырнă сăвă сăмахĕсемпе Соловьев-Седой композитор кĕвĕленĕччĕ вăл юрра. Эпир ун чух, салтаксем, пĕр-пĕр вăрман хӳтлĕхне пырса чарăнсан тупă сасси янраман хушăра самантлăха куç хупса тĕлĕрнĕ чух шăпчăк юррине илтнипе вăранса кайсан, пурнăç мĕнле илемлĕ те хаклă иккенне куçпа курса, чун-чĕрепе туйса илеттĕмĕр, ун чух вара Тăван çĕршыва тата ытларах юратнипе тăшмана курайманлăх ниçта шăнăçми тулса çитетчĕ, эпир вара, салтаксем, алăри пăшала тата çирĕпрех тытаттăмăр. Кам пĕлет, тен, ун чух шăпчăксем пире хăйсен юррипе тăшмана хăвăртрах çапса аркатма чĕннĕ пуль, анчах халь, Вăрманкас патĕнче, вĕсем çак каçхи илеме курса киленсе юрлаççĕ.

Салтаксем юратнă юрра тусăм çапла пĕр куплет юрларĕ те: «Эх, пурнăç!..» тесе ассăн сывласа илчĕ. Тем каласшăн пулчĕ вăл, ĕлкĕреймерĕ, таçта, пирĕн çывăхрах, çынсем калаçни илтĕнчĕ.

— Камсем кусем?

— Мĕнле çынсем? Ăçта?..

Йăрăс хурăнсем умне карта тытнă. Çак карта çумĕпе икĕ мĕлке ерипен, васкамасăр утса пирĕн паталла килеççĕ. Çывхарсарах çитсен тинкерсе пĕлтĕмĕр: хĕрпе каччă иккен. Хĕрĕ шап-шурă платье тăхăннă, шурă тутăр çыхнă. Вăрманкассемех пулас.

— Пирешкел çулран çĕтсе кайнисем кунта тата пур иккен,— хĕрпе каччă кăмăлне тивлетлеме пикенчĕ ман тусăм.

— Çулне пĕлетпĕр-ха. Шăпчăксен юррине итлеме килтĕмĕр. Шăпах çак вăхăтра пуçлаççĕ те хĕвел тухиччен ырми-канми юрлаççĕ,— «сăлтав» тупрĕ каччă.

— Эсир те хĕвел тухиччченех итлетĕр-и вара?— меллерĕм эпĕ.

— Пулкалать...— терĕ каччă.— Ытарма çук илемлĕ юрлаççĕ те...

— Шăпчăксем айăплă эппин. Ах, мур илесшĕсем, чип-чипер тутлă ыйхăпа çывăрас çынсене кансĕрлеççĕ.

Хĕр хăйне аван мар пек туйрĕ пулас, вăтанчĕ, сăн-пичĕ мĕнле улшăнни каçхи тĕттĕмре курăнмарĕ, анчах каччă хыçнерех пытанчĕ.

— Эсир темскер, кирлĕ мара калаçатăр. Çук,— терĕ вăл йăваш та çепĕç сасăпа,— шăпчăксем пачах та айăплă мар. Эпир, мĕн... кунта, пахчара ĕçлерĕмĕр те кăштах каça юлтăмăр... Атя,— терĕ каччине,— каяр кунтан. Атту Никита Григорьевич курсан аван мар, эпир çырла е панулми татма килнĕ тесе шутлĕ.

— Кам вăл, мĕнле Никита Григорьевич?— пĕлес килчĕ пирĕн.

— Пирĕн колхоз пахчин хуралçи,— терĕç хĕрпе каччă.

— Пахчи ăçта?

— Акă, картан тепĕр енче,— кăтартрĕ каччă.

Эпир, Николай тусăмпа, карта çумне пырсах пăхрăмăр. Шел, хурăнсем хушшипе каçхи тĕттĕмре пахчи мĕнлерехчи курăнмасть.

— Яков Никифорович çак пахчара ĕçлет-и?— ыйтрăм эпĕ.

— Çакăнта. Эсир, пирĕн пахча ăçтине халиччен курмансккерсем, хăш енчисем вара?— тĕпчесе ыйтрĕ хĕр.

— Ку енчисемех те-ха, иртнĕ çулсенче килсе çӳреме тӳр пулмарĕ. Пĕр вунă çул каярах Вăрманкассен кунта кун пек пахча пуррине астумастăп,— терĕм эпĕ. Унтан, Николай тусăмпа, хамăр камсемне, хальхинче Вăрманкаса мĕнле çăмăлпа килсе тухнине каласа патăмăр. Хăйсен каччи умĕнче хĕрин ятне ыйтса пĕлме пушшех хăяймарăмăр.

Хĕрпе каччă ял еннелле утрĕç. Пахча хуралçине — Никита Григорьевича кансĕрлес мар тесе тусăмпа эпир те хĕрпе каччă кайнă сукмакпа Вăрманкаса таврăнтăмăр. Путенен пăть-пăльтăк кĕвви те, шăпчăксен янравлă юрри те асран каймарĕ, анчах мана вăл каçхине пуринчен ытла улма-çырла пахчи шухăшлаттарчĕ. Мĕнлерех-ши вăл пахча? Хăçан, кам лартса ӳстернĕ-ши?..

— Эппин,— терĕ ирхине Татьяна Федоровна,— Яков Никифоровичпа сире хамах пырса паллаштарам-ха. Атту, пахчи пысăк та, эсир ăна шыраса та тупаймăр.— Пире вара тӳрех пахчана ертсе кайрĕ.

Акă вăл, 24 гектар ытла сарăлса ларнă пахча! Ретĕн-ретĕн, тип-тикĕс лартса тухнă улмуççисем ярăм шăрçа çакнă евĕр пан улмиллĕ тураттисене усăнтарса, пире, хăнасене, ырă сунса, пуç тайса кĕтсе илнĕн туйăнать, улмуççисен речĕсем хушшине лартнă, пиçсе çитнĕ виктори çырлинчен çав тери тутлă шăршă кĕрет. Ял енче — пахча тавра ятарласа лартса ӳстернĕ йăрăс хурăнсем, тепĕр енче — вĕтлĕх вăрман, вĕтлĕхрен лерелле — хура вăрман. Вĕтлĕхри шĕшкĕсем çинче майăр курланкисем инçетренех курăнса лараççĕ, тĕмсем айĕнче— хурăн çырли, улăхра — тем тĕрлĕ чечек... Кирек хăш енне пăхсан та ытарма çук илемлĕх, куçпа виçме çук пуянлăх.

Пахчана кĕрсенех эпир кунта ĕçлекен хĕрарăмсем патне пытăмăр.

— Сире хăй кирлĕччĕ пуль, вăл халь çеç таçта тухса кайрĕ,— терĕç.

— Кайрĕ?!. Неушлĕ курмасăрах кайма тивет?..

— Инçех каяймарĕ пулĕ-ха. Эсир кунта кĕтсе ларăр, эп халех чĕнсе килетĕп,— терĕ те пĕр хĕрĕ, çав самантрах куçран çухалчĕ. Питĕ çивĕчскер пулас.

«Х ă й» терĕç хĕрарăмсем. Мĕнле ăнланмалла-ши куна? Хисепленипе çапла чĕнеççĕ-ши? Васкавлă ĕçпе каятчĕ пулсан, чĕнсе килнĕшĕн вăл пире вăрçса тăкмĕ-ши?..— кăштах шикленнĕ пек пултăм эпĕ.

Яков Никифорович инçех кайма ĕлкĕреймен-мĕн, часах çаврăнса килчĕ. Акă, тинех куртăмăр хăйхине. Ал тытрăмăр, паллашрăмăр.

— Сăмах-юмах пуçличчен эпĕ сире çырла çитерсе хăналам-ха. Çĕмĕрле пасарне сутма кайсан пурте: «Сирĕнни пек тутли çук», тесе мухтаççĕ, эсир мĕнле хакланине илтем тата,— терĕ те пире тӳрех çырла йăранĕсем патне илсе кайрĕ.

Çырла çиесси мар, манăн малтан «х ă й ĕ н» кăмăлне пĕлес килет. Хăнана пынă-пыман сĕтел хушшине ларма чĕнекен кил хуçин кăмăлĕ мĕнлерехчи каламасăрах паллă, çапах та эпĕ Яков Никифорович çинчен куç илейместĕп-ха. Вăтам çулсенчен иртнĕ пулин те питĕ правур, вашават çын вăл, йăваш сăнпитлĕ, сăмахсене лăпкăн, вырнаçуллăн калать.

Яков Никифоровича эпир труках ыйтусем парса йĕрĕнтерме хăяймарăмăр, унăн пурнăçĕпе ĕçĕ çинчен сăмах çаврăнса пынă май пĕлме тăрăшрăмăр. Калаçнă, пĕлнĕ май унăн иртнĕ пурнăçĕпе кун-çулĕ пирĕн ума страницă хыççăн страницă уçса вуланă кĕнекери пек тухса тăчĕ. Унăн иртнĕ пурнăçĕ çинчен веçех каласа парас тесен кун пек пĕчĕк очерк мар, хулăн кĕнеке



# ЁÇРЕ ПИÇНИСЕМ

*Повеç*

## ТĂВАН ШЫРАСА

### (ИККĔМĔШ ПАЙĔ)

Мĕтри КИБЕК

### 8. КĔНЕКЕПЕ ЧĂН ПУРНĂÇ

Инженер парса янă кĕнекене Слонов пуçа çĕклемесĕр тенĕ пек вуларĕ. Ытла та ăнланмалла мар йывăр чĕлхепе çырнăччĕ ăна. Кашни пуплеврех техникăллă терминсем, ют чĕлхерен кĕнĕ ниxçан илтмен сăмахсем. Тепĕр чух автор хăй кĕнекине çынсене ăс парас кăмăлпа мар, хăй çав тери нумай вĕреннине кăтартасшăн кăна çырнă пек те туйăнакан пулать. Вара ăна ĕмĕрлĕхех хупса хурас килет. Анчах Слонов ниxçан та йывăрлăхсенчен хăраса тăман, халĕ те парăнас килмерĕ. «Ăна вуласа тухма вăй çитерейменнине пĕлсен, Нора Сергеевна куç умĕнчех мăшкăллама пуçлĕ», тарăхса шухăшларĕ вăл. Вара библиотекăран техникă словарĕпе энциклопеди томĕсене кайса илчĕ те кану çинчен мансах вулама тытăнчĕ. Икĕ эрнерен юлашки страницăра мĕн çырнине вуласа тухрĕ. Вара тин çăмăллăн сывласа ячĕ.

— Ох, турра шĕкĕр! Эпех çĕнтертĕм?—саспах каларĕ вăл, кĕнекене хупса.

Паллах, автор шухăшĕсене пурне те тĕрĕс ăнланнă теме пултараймастпăр эпир. Нумай страницăсем ун пуçĕнче нимле шухăш та çуратмарĕç, теприсем вара хура япалана шурă, шуррине — хура, тесе ĕнентернĕ пек те туйăнчĕç. Кĕскен каласан, Слонова çак кĕнеке çапла каланă пек туйăнчĕ.

«Кашни çыннăн пурăнас тесен, апат-çимĕç тупмалла тата ăшă тумтирпе пўрт-çурт тумалла. Ăна вăл укçа парса çеç туянма пултарать. Социализмлă обществă членĕсем укçа-тенке колхозсемпе совхозсенче тата промышленноç предприятийĕсенче ĕçлесе кăна илме пултараççĕ. Предприятисем патшалăх аллинче. Çапла вара патшалăх ĕç параканĕ, граждансем — ĕç тăвакансем пулса тăраççĕ. Ĕç параканăн, паллах, предприятирен тупăш курмалла, унсăрăн вăл панкрута тухма пултарать. Çав вăхăтрах ĕçлекенсем хăйсем тунă ĕçшĕн укçа ытларах илме тăрăшаççĕ. Вара ĕç параканĕпе ĕç ĕçлекенсем хушшинче хирĕçў ан тухтăр тесе патшалăх закон кăларать, кашни ĕç хакне тарифлă ставкăсенче кăтартать. Администраци коллективлă договора епле пурнăçланине профсоюз тĕрĕслесе пырать. Çапла вара производствăра çирĕп йĕрке пулса тăрать. Предприяти администрацийĕ, рабочисен коллективĕ тата профсоюз — çаксем социализмлă хуçалăх никĕсне çĕклесе тăракан виçĕ кит пулса тăраççĕ.

Капитализмлă обществăра предпринимательсемпе рабочисем хушшинче çураçусăр хирĕçў пырать пулсан, социализмлă обществăра предприятисемпе рабочисем хушшинче килĕшў те мир пуç пулса тăрать. Рабочисем хушшинче харпăрлăх тыткăнĕнчен хăтăлманнисем пурри хытă чăрмантарать ĕнтĕ. Вĕсем халăха улталассинчен те чарăнса тăмаççĕ Çапла ан туччăр тесен, патшалăхра тĕрлĕ контролерсем, ревизорсем, бухгалтерсемпе экономистсем тата ытти служащисем тытса усрамалла. Ку ĕнтĕ пысăк тăкак кăтартать. Пур рабочисемпе колхозниксем те хăйсен малта пыракан юлташĕсем пек тўрĕ кăмăлпа ĕçленĕ пулсан, тĕрĕслекенсем шутне темиçе хут та чакарма пулĕччĕ. Вара предприятисем тупăш ытларах паратчĕç, патшалăх ытларах пуймалла, халăх пурнăçĕ те хăвăртрах юсанса пымалла. Анчах халĕ апла тума иртерех-ха, мĕншĕн тесен вăрă-хурахсем те, ĕçлемесĕр çисе пурăнас текен харам пырсем те пур. Пурăна киле вĕсем сахалланса пырĕç, вара тĕрĕслекенсен шутне те сисĕнмелле чакарма пулĕ».

Малалла автор промышленноç предприятийĕсенче ĕçе мĕнле йĕркелемеллине тĕплĕн çырса кăтартать. Ун шучĕпе сĕтел-пукан тăвакан предприятисенчи хальхи вăхăтри йĕркесем патшалăха та, халăха та, уйрăм çынсене те пĕтĕмпех тивĕçтереççĕ.

«Апла пулсан, ĕç йĕркине юсас тени — вырăнсăр шухăш кăна иккен, ăслă çынсем пурне те шухăшласа хунă, пурне те кирлĕ пек йĕркелесе çитернĕ,— терĕ шалтах аптăраса ўкнĕ Слонов.— Пирĕн умри çул тап-такăр-мĕн, ун тăрăх пĕр пăркаланмасăр, такăнса ўкмесĕр утасси çеç юлать. Пурнăçа юсас тесен мĕн тума кирлине пĕтĕмпех аттесем, пиччесем туса хунă, пирĕн валли ним те юлман. Анчах ку çапла-ши? Кĕнеке çыракансем йăнăшман-ши? Йăнăшнă пулсан, хăш вырăнта? Тен, эпĕ хам ăна тĕрĕс ăнланаймарăм пулĕ. Вĕреннĕ çынсенчен ыйтса пăхам мар-ши?»

Çак шухăшпа пырса кĕчĕ Слонов сменă мастерĕ патне. Хальхинче Чернышева ăна ăшшăн саламларĕ, унтан ун аллинчен илнĕ кĕнекене ачине ачашлакан амăшĕ пек ал тупанĕпе пăхса илчĕ.

— Йăлтах вуласа тухрăр-и? — ĕненсе çитерменнине пытармасăр ыйтрĕ хĕр.

— Вуласа тухрăм.

— Кăмăла кайрĕ-и?

— Темле каламалла. Авторĕ ухмах çын мар ĕнтĕ, анчах вулакана питех хисеплени те палăрсах каймасть.

— Мĕншĕн? — куç харшисене çĕклентерсе ыйтрĕ инженер.

— Мĕншĕн тесен производствă процесĕсене паянхи кун епле йĕркеленине ытлашши мухтать. Ăна ĕненсен, пирĕн нимле çитменлĕхсем те çук, кăлтăксем те шырама юрамасть. Çав хушăрах хăй паянхи рабочисене шанманнине те пытарса тăмасть. Ĕçлемесĕрех тутă пулас текенсем рабочисем хушшинче те тупăнкалама пултараççĕ ĕнтĕ, унсăр мар, анчах çав териех йышлă-и вĕсем? Ман шутпа апла мар, килес кунсенче тата сахалланса пырĕç. Ăна суккăр çын кăна курмасăр юлма пултарать.

— Эсир мана рабочи класĕ мухтава тивĕçлĕ тесе агитацилесшĕн-и? Сăмаха сая ан ярăр, ăна-кăна тахçанах чухлатăп.

— Тăхтăр-ха, эсир пирĕн хушăра шкурниксем йышлă теместĕр вĕт?

— Шутласа пăхсан, те йышлă, те йышлă мар вĕсем. Анчах пирĕн ĕмĕре çителĕклĕ пулассăн туйăнать.

— Тўррипе калăр-ха, пирĕн бригадăра та пур-и ун йышши çынсем?

— Пулмасăр.

Слонов хĕрсех кайрĕ.

— Кам? Ятне калăр-ха, эпĕ паллатăп-и ăна?

— Малтанах Прохор Александровича асăнма пулать.

— Бригадира-и?

— Мĕн тĕлĕнмелли пур? Çавна ĕнтĕ. Ĕçлемесĕр укçа илме юратакансем хушшине ăна та кĕртме пулать.

— Нора Сергеевна, эсир мана юриех йĕкĕлтетĕр-и е мăшкăллас тетĕр-и? Коммунизмла ĕçлекенсен бригадирне комбинатри усăсăр çынсен шутне мĕнле майпа кĕртме пулать? Ăнланмалларах калăр-ха.

— Юрĕ, итлĕр эппин. Рабочисене комбинатра мĕншĕн укçа тўленине пĕлетĕр ĕнтĕ эсир. Чăн та, цехра пĕр-пĕр япала туса кăларнăшăн тўлеççĕ. Сире ак телевизор футлярĕсем тунăшăн, теприсене — диван е сĕтел тунăшăн. Бригадира çав япаласене паракан ĕç укçи çумне тата çирĕм процент хушса памалла. Ку — закон тăрăх. Халĕ Быков мĕн тунине пăхăпăр. Кунне миçе футляр тăвать вăл?

— Вăтам шутпа илсен виççĕ.

— Тепĕр майлă каласан, çур нормă. Анчах ĕç укçине вăл нормăна çĕр çирĕм-çĕр вăтăр процент тултаракан рабочирен ытларах илет. Çапла-и?

---

çырас пулать. Эпĕ кунта ăна çак пахчана мĕнле çул-йĕр илсе килни çинчен çех кĕскен те пулин каласа парасшăн.

Çук, ăнсăртран килсе кĕмен вăл ку пахчана. Яков Никифорович Вăрманкас пахчин пĕрремĕш улмуççине хăçан, мĕнле лартса ўстерине каласа парсан, мана Сĕнтĕр районĕнчи Чемей ял çынни — Николай Семенович Семенов аса килчĕ. Тĕлĕнмелле пĕрешкел пулса пынă çак икĕ çыннăн пурнăç çулĕсем.

Николай Семеновичпа эпĕ иртнĕ çул тĕл пулса паллашрăм. Николай Семенович Чемей колхозĕн пĕрремĕш председателĕ пулнă. Хăйне председателе суйласанах ĕçе вăл Штранк çырми хĕррине, унччен курăк та шăтман чуллă çĕр çине, улмуççисем лартса пахча тăвассинчен тытăннă.

— Эй,— тенĕ ун чух Чемей çынинсем,— пустуй ĕç ку. Вăл çĕр çинче улмуççи мар, талниçен те ўсес çук.

Николай Семенович пур пĕр ал усман. Пĕрремĕш улмуççийĕсене хăй, пĕччен, чуллă çĕр çине хура тăпра çĕклесе лартнă. Акă халь Штранк çырми хĕрринче Чемей колхозĕн улма пахчийĕ вуншар гектар лаптăкĕш сарăлса ларать!

Яков Никифорович Бамбухов та малтан колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Вăрманкас пахчин пĕрремĕш улмуççийĕсене шăпах çав çулсенче лартнă. Ун чух Вăрманкассем те:

— Эй, пустуй ĕç ку. Унта, вăрман çывăхĕнче, пĕр улмуççи те ўстерейместĕн, мулкачсем валли лартни çеç пулать,— тенĕ.

Яков Никифорович шанăçа пурпĕр çухатман, çĕр çывăрмасăр шухăшланă, ĕçленĕ... Акă халь Вăрманкас пахчи инçетренех курăнса, улми-çырлипе илĕртсе ларать.

Яков Никифорович пире виктори çырли йăранĕсене кăтартса çўрерĕ. Улмуççисем хушшине лартса тухнă, йăм-хĕрлĕ пиççе çитнĕ шултăра çырласем кĕç-вĕç пăнтлатса çурăлас пек лараççĕ, йăранĕсем вара чăн кавир сарнă пек курăнаççĕ.

— Ак ăçтан сарăлать иккен тутлă шăршă. Епле илем, мĕнле пуянлăх!— терĕ ман тусăм ку «кавире» курсан.

— Сахал-ха,— терĕ Яков Никифорович.—Çитес çулсем çак улмуççисем хушшинчи çĕре пĕр метр та усăсăр вырттармастпăр.

— Ку çырлана сутса кăçал мĕн чухлĕ тупăш илме шутлатăр?— пĕлес килчĕ манăн.

— Иртнĕ çул 2 пин тенкĕ ытла илтĕмĕр, кăçал чылайрах пулать. Кĕçех акă хăмла çырли те пиçсе çитет,— терĕ Яков Никифорович.

Ку пахчара виктори кăна мар, икĕ гектара яхăн хăмла çырли, пин тĕм ытла чие çырли те пур. Çапах та чи тупăшли, чи нумаййи — улмуççи. Кунта халь 2000 ытла улмуççи.

— Икĕ пин улмуççи! Хăш вăхăтра лартса, мĕнле пăхса ўстертĕр?— ĕненмесле ыйтрĕ манăн тусăм.

— Пĕр пинне 1950-мĕш, тепĕр пинне — 1951-мĕш çул лартрăмăр. Çак çитес çулсенчех тепĕр çавăн чухлĕ лартма шутлатпăр. Улмуççи лартса ўстерес тесен, хĕлле нумай çывăрма юрамасть,— терĕ Яков Никифорович.

— Хĕлле?!. Мĕншĕн хĕлле?— тўрех ăнланса илеймерĕ-ха ман тусăм.

— Çапла, хĕлле,— терĕ каллех Яков Никифорович. Унтан пахчаçăп хĕлле мĕн тумалли çинчен каласа пачĕ.

Пахчаçăн хĕлле те ĕç тем чухлех! Улмуççисем шăнса ан хăрччăр тесен, кашнин тавра хўтĕлĕх тумалла, хурт-кăпшанкăран тасатас ĕç те хĕллеренех пуçланать... Анчах хĕллехи чи пысăк ĕç вăл — улмуççисене мулкачсенчен сыхласа хăварасси. Пĕрре тĕллесен, хел каçиччен пĕр мулкач темĕн чухлĕ сиен кўрет, кăшламан улмуççи хăвармасть,— терĕ Яков Никифорович.

Мĕн тумалла? Çавăн чухлĕ улмуççине кашнине туратти-мĕнĕпе чĕркесе е капкăн лартса тухма çук.

— Çапли çапла та, уншăн Быков айăплă мар-çке. Ăна кашни кунах тĕрлĕ канашлусене чĕнеççĕ. райком хушнипе конференцисенче сăмах тухса калаттараççĕ. Виçĕмкун вăл районти уй-хир ĕçченĕсен канашлăвне пырса коммунизмла ĕç ударникĕсенчен салам каларĕ, ĕнер пионер слетне саламларĕ, паян ăна учительсен конференцине чĕнсе кайрĕç. Куратăр-и, вăл ĕççĕр пурăнмасть.

— Анчах пире чĕлхепе ĕçлекен рабочисем кирлĕ мар, ал-ура вăйĕпе тăрăшса тата ăста ĕçлеме пĕлекенсем кирлĕ. Рабочисене салам каласа çÿренĕшĕн мар, цехсенче, производствăра ĕçленĕшĕн укçа тÿлемелле. Шухăшласа пăхăр-ха, колхозниксем Быков саламĕсĕр тыр-пул тума манмаллаччĕ-им е пионерсем ун саламне пула математикăна, физикăна тата ытти ăслăлăхсене аванрах ăнланакан пулнă-и? Темле çав, ĕненесех килмест. Паллах, района ертсе пыракансем хушшинче сăмахпа çатăлтатнине, кирлĕ-кирлĕ мар çĕртен салам калаттарма юратакансем пур ĕнтĕ, анчах уншăн комбинатăн патшалăх укçине тÿлемелле-и? Быков пеккисем тĕрлĕ конференцисенче тĕлли-паллисĕр сăмах çаптарса çÿрени пирĕн продукцин хăйне ларакан хакне хăпартать, тепĕр тĕслĕ каласан, патшалăха сăтăр тăвать. Пирĕн «Кам ĕçлемест, çав çимест» тенине яланах асра тытмалла.

Слонов капла пуласса кĕтмен пирки çухалса кайрĕ. Мĕн калас, бригадира, чăнахах, таçта салам каласа çÿренĕшĕн мар, цехра, хăй бригадинче ĕçленĕшĕн кăна шалу памалла ĕнтĕ. Ун пирки тавлашма çук. Анчах коммунизмла ĕçлекен бригадăна ертсе пыраканĕ харам пыр тенине килĕшме пултараймарĕ вăл.

— Нора Сергеевна, тивĕççĕр укçа илекенсем пирĕн хушăмăрта тата пур-и?

— Сахал мар.

— Сăмахран?

— Сăмахран, хамăр цехри сменă инженерĕсем, цех начальникĕ... Пурне те ăçтан астуса çитерĕн.

— Эсир кулатăр пулĕ. Инженерсене ытлашши укçа кам патăр?

— Юрĕ, тăнлантармаллах калăп. Шалу илме эпир тивĕçлĕ ĕнтĕ, ăна пире цеха йĕркеллĕ ĕçлеттернĕшĕн тÿлеççĕ. Анчах унсăр пуçне пире час-часах премисем параççĕ. Преми камсене панине пĕлетĕр пулĕ-ха?

— Производствă планне ытлашши тултарнисене пулĕ.

— Çапла калама та пулать. Иртнĕ уйăхра ак мана 105 тенкĕ парса премилерĕç. Цех пĕтĕмĕшпе илсен плана 97 процент кăна тултарчĕ. Преми илме эпĕ тивĕçлĕ пулнă-и?

— Бухгалтерире йăнăшнă пулĕ.

— Çук, никам та йăнăшман. Йĕрки çапла. Виçĕ сменăран пĕри, эпĕ ертсе пыраканĕ, плана 110 процент тултарчĕ, мана çавăншăн тав турĕç. Çак уйăхра иккĕмĕш сменă аванрах ĕçлет, премине те ун инженерĕ илет ĕнтĕ. Çитес уйăхра виççĕмĕш сменăн ĕçĕсем ăнма пултараççĕ, ун чух унти инженера премилĕç. Кайран тата черет мана çитĕ. Куратăр-и, цех производствă планне тултараймасан та унта ĕçлекен инженерсем преми илеççĕ.

Слонов шалтах тĕлĕнчĕ.

— Цех начальникĕ тата преми мĕншĕн илет? Икĕ смени кашни уйăхра кая юлса пынишĕн мар пулĕ-çке? — ыйтрĕ вăл аптăранипе.

— Уншăн мар, урăххишĕн. Иртнĕ уйăхра пирĕн цех конструкторсем валли сĕтел кăларас тĕлĕшпе комбинатра мала тухрĕ, плана 150 процент тултарчĕ. Çавăншăн сĕтел тăвакан рабочисене пурне те премилерĕç. Паллах, ун чух дирекци цех начальникне манса хăварма пултараймасть ĕнтĕ. Çак уйăхра телевизор футлярĕсем тăвакан бригадăсем мала тухрĕç, плана 140 процентран кая мар тултармалла, уншăн преми эсир илетĕр. Анчах цех начальникĕ тăрăшмасăр пулман ĕнтĕ çав çĕнтерÿ. Апла пулсан, мĕншĕн ăна премилемесĕр хăвармалла?

Чернышева сăмахĕсене илтнĕ хыççăн тĕрĕслĕхшĕн çунакан Слонов тарăхса кайрĕ.

— Калăр-ха, тархасшăн, патшалăха улталанăшăн кам айăплă? Ăна ответ тыттарма вăхăт мар-и?

Инженер хăй ăшĕнчи шухăшсене нимпе те палăртмарĕ, хĕрсе кайнă каччă çине каçаруллăн пăхрĕ те ăшшăн кулчĕ çеç.

— Çамрăк тусăм, эсир ман сăмахсене тĕрĕс ăнланмарăр пулмалла. Патшалăха улталани çинчен эпĕ пĕр сăмах та каламарăм. Сире хамăр цехра преми мĕнле памалли йĕркепе кăна паллаштартăм. Тÿрех каламалла, плана ытлашшипе тултарнишĕн преми парас йĕркене кунта шухăшласа кăларман, ăна пур çĕрте те çапла тăваççĕ.

— Апла пулсан, çак юрăхсăр йĕркене пăрахăçлама çĕнĕ йĕрке тумалла. Ман шутпа, цех пĕтĕмĕшпе плана тултармасăр унта ĕçлекенсене пĕрне те преми памалла мар!

— Ăслă шухăш. Ăна хăвăрпа пĕрле ĕçлекен рабочисене каласа пăхăр, вĕсем мĕн тейĕç. Килĕшеççĕ пулсан, хăвăр шухăшăра директора та пĕлтерме пулĕ.

Инженер тăрăхласа кулнине те, рабочисем каплипе килĕшес çуккине те Валери питĕ аван туйрĕ. Çапах та парăнма шухăшламарĕ. Юрăхсăр йĕркепе çураçма юрамасть, ăна мĕнле те пулин пĕтермеллех. Мĕнле? Халлĕхе Слоновшăн ку паллă мар-ха, анчах пуç тавралла тĕплĕнрех çавăркаласан, мĕн те пулин шухăшласа кăларма май килĕ-килех. Çавна лайăх пĕлет вăл. Çавăнпа хĕр çине вăрахчен пăхрĕ те харсăррăн пÿлчĕ.

— Нора Сергеевна, эсир питĕ нумай пĕлетĕр, сирĕншĕн çак киревсĕр йĕркене мĕнле пĕтермелли те паллă ĕнтĕ. Мана каласа памăр-ши?

— Çук, Слонов юлташ, эпĕ ним те пĕлместĕп, пĕлес те килмест.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнчĕ каччă.— Сирĕн вара патшалăха пулăшас килмест-и?

— Эпĕ ăна хам пĕлнĕ пек халĕ те пулăшса пыратăп.

— Эсир пĕркун рационализаторла предложени пурнăçласан пысăк преми пани çинчен каланăччĕ. Сирĕншĕн çĕн йĕркене мĕнле тумаллине кăтартакан сĕнÿ пама йывăр пулас çук. Гонораршăн та пулин комбината пулăшсамăрччĕ. Тăван халăх уншăн тав тăвĕ.

— Халăх тав тунине эпĕ халĕ те сиссех тăратăп. Гонорар таврашĕ вара мана пачах кирлĕ мар. Цехра ĕçленĕшĕн панă укçа та мана ытлашшипех çитсе пырать. Рационализаторла сĕнÿ парас тесен, производствă ыйтăвĕсем çинчен ĕç вăхăтĕнче çеç мар, киле таврăнсан та пайтах шухăшламалла. Манăн апла тăвас килмест. Эсир çамрăк, вăй-халăр та çителĕклĕ. Вĕренĕр, ăс-тăнăра çивĕчлетĕр те çĕнĕ йĕрке тума сĕнÿ парăр. Эпир хамăрăнне тунă, çитĕ.

Слонов совет инженерне çапла каланăшăн намăслантарасшăнччĕ, йĕплĕ сăмах калас тесе çăварне те уçнăччĕ, анчах хĕрĕн куç тĕкĕсем çинче куççуль тумламĕсем шăрçаланса тăнине асăрхарĕ те хăйне-хăй вăхăтра тытса чарчĕ.

— Нора Сергеевна,— терĕ вăл улшăннă сасăпа,— сире темле хуйхă пуснă пек туйăнать. Сĕмсĕр тесе ан шутлăр, калăр-ха, эпĕ пулăшма пултараймастăп-и?

— Мана никам та пулăшма пултараймасть.

— Мĕншĕн?

Хĕр кăштах шухăшласа ларчĕ. Унтан çамрăк çын çине шеллесе пăхрĕ.

— Эпĕ те ĕçлетĕп хырăма тăрантармалăх, тата ăшă хватterте выртса-тăрса пурăнмалăх шалу илетĕп. Савăнăçпа телей мĕн иккенне пĕлейместĕп... Эпĕ çемьеллĕ пулма ĕлкĕреймерĕм. Ман пурнăç виçĕ пайран тăрать: кăнтăрла эпĕ ĕçлетĕп, унтан çиетĕп те çывăратăп. Урăх ним те курмастăп.

— Ыйтма аван мар та... кăмăлăр пулсан каласамăрччĕ, мĕншĕн эсир качча тухмастăр?

— Кая юлтăм.

— Мĕнле майпа?

— Вăтам шкултан эпĕ хĕрĕх тăваттăмĕш çулта вĕренсе тухрăм. Пирĕн класра пурĕ вăтăр сакăр ачаччĕ. Вун сакăр хĕрачапа çирĕм яш ачаччĕ. Арçын ачасенчен иккĕшĕ мана юрататчĕç. Шкултан тухсан, хĕр ачисем института вĕренме е ĕçлеме кайрĕç, арçын ачисене пурне те çара илчĕç. Тепĕр çултан вăрçă пĕтрĕ, анчах киле çирĕм ачаран улттăшĕ кăна таврăнчĕç, ыттисем Польшăпа Германире çĕре кĕнĕ, вăл шутра мана юратнă икĕ яш ача та... Çавăнпа эпĕ вата хĕр пулса юлтăм.

---

Яков Никифорович питĕ паха меслет тупнă. Мулкачсем юн шăршине инçетрен туяççĕ, юн шăрши пур çĕре пыма хăраççĕ иккен. Çакна пĕлнĕ Яков Никифорович улмуççисене выльăх пуснă чух илнĕ юнпа сĕрсе тухнă. Кун хыççăн пахчана пĕр мулкач та пырса кĕмен.

Пахчаçăн çуркуннехи, çуллахи, кĕркуннехи ĕçĕ çинчен каласа та пĕтерес çук. Ÿсен-тăран чĕрчун мар, хăйне хăçан мĕн кирлине ыйтма пĕлмест. Пахчаçă вара хăй лартса ÿстерекен йывăçа хăçан мĕн кирлине курса кăна мар, чун-чĕрипе туйса тăрать. Вăхăтра апат парать вăл ăна, вăхăтра шăварать; хăйĕн ачине пăхса ÿстернĕ пек пăхса, ачашласа ÿстерет. Ахальтен мар ĕнтĕ халăх хушшинче питĕ тĕрĕс каланă сăмах пур. Тепĕр чух ашшĕ-амăшĕ пирки: «Çавсем ывăл-хĕрне пахчаçă пек пăхса ÿстереççĕ», теççĕ.

Харпăр хăй ачине пурте юратаççĕ. Пурнăçа та, çутçанталăка та пурте юратаççĕ. Анчах пахчаçă вара пурнăçа та, çутçанталăка та этемĕн чи пысăк туйăмĕпе юратать. Чун-чĕрере çавăн пек таватлăх çук çын нихçан та пахчаçă пулаймасть. Ăна эпĕ Вăрманкас пахчаçине — Яков Никифоровича курнă хыççăн тата лайăх пĕлтĕм.

Акă вăл пире пахчари улмуççисене кăтартса çÿрет. Кашни улмуççи патне пырсан малтан улмуççийĕ çине ăшшăн-ăшшăн пăхса илет те, ÿсме кансĕрлес мар тенĕ пек, хăçан лартнине, мĕнле йышшине лăпкăн, кăмăл кайниллĕн каласа парать. Улмуççийĕ çинче типме пуçланă е хурт сиенленĕ çулçă пуррине курсан ăна хуллен пăт! татса илет те çĕре пăрахмасть, кĕсйине чикет. Çĕре пăрахсан кунта, улмуççи таврашĕнче çÿпленет-çке-ха! Ăна вăл хăй те асăрхамасла, чун-чĕри çавнашкаллипе тăвать. Шуçăмла килсе тĕттĕм пуличчен ĕçленĕ чух мĕнле ачашлать-ши вăл ку улмуççисене.

Яков Никифоровичпа пĕрле çÿренĕрен çÿрес килет. Çак пахчана лартса ÿстерес пирки хăçантанпа ĕмĕтленсе пурăнни, лартса ÿстерме тытăнсан мĕнле чăрмавсем пулни çинчен каласа пачĕ вăл. Паллах, кунти пур ĕçе те вăл пĕр-пĕччен туман. Çавăн чухлĕ улмуççи, чие, хăмла çырли лартса ÿстересси, пахча тавра çавăн чухлĕ йывăç лартса, виçĕ километр ытла карта тытасси, паллах, ку ĕçе ытти колхозниксем те кар тăрса тухмасăр пулман.

Пахча ĕç бригадинче 15 çын. Акă, паçăр эпир тĕл пулнă хĕрарăмсем халь хăмла хушшине çумлаççĕ, çĕрне кăпăшкалантараççĕ. Икĕ гектар ытла хăмлана та пахчара ĕçлекенсемех пăхса ÿстереççĕ. Эпир, тусăмпа, кунта та çитсе куртăмăр. Пире курсан пĕр хĕрĕ, темшĕн-çке, кăштах вăтаннă пек пулчĕ те хăмла çырлисем хыçне пытанчĕ. «Çав, çĕркаç шăпчăксен юррине итлеме юлни мар-ши ку?»— шухăш çиççе илчĕ ман пуçра.

Манăн тусăм хĕр çине тинкерсерех пăхса илчĕ те:

— Институтран вĕренсе тухсан ĕçлеме Вăрманкаса килетĕп,— терĕ.

— Питĕ аван пулать. Туй сăрине тума хăмли пур, сĕтел çине лартма — улми-çырли. Каçсерен шăпчăксем юрлаççĕ...—меллерĕм эпĕ.

Ман тусăм хăмла çулçисем хыçне пытаннă хĕр çине ытараймасла тепре пăхса илчĕ те:

— «Шăпчăксем айăплă мар»,— терĕ.

Вăрманкас пахчинче пулса курни ман асăмран халĕ те каймасть. Элĕк районĕнче пулатăп-и эпĕ, Вăрнар е Канаш районĕсенче пулма тÿр килет-и, унти çап-çара çутсене, тумлам шыв юлмиччен типсе ларнă çырмасене курсан: «Эх, Чемейпе Вăрманкас колхозĕсен пахчисем мĕнле çĕр çинче ÿснине кăтартасчĕ ку ял çыннисене. Тен, вара вĕсем те çак çутсем çинче пахчасем лартса ÿстернĕ пулĕччĕç. Ун чух пирĕн çĕршыв тата илемлĕрех, тата пуянрах пулĕччĕ»,— тетĕп.

Шăпчăксем мĕнле савăнса юрлĕччĕç-ши ун чух çав пахчасенче!

Телейсĕр çынна Слонов яланах хĕрхенетчĕ, Чернышевăна та вăл чун-чĕререн шеллерĕ.

— Вилнисем хисепе тивĕç ĕнтĕ, анчах чĕрĕ юлнисен уншăн ĕмĕр-ĕмĕр хуйхăрса пурăнмалла мар, хăйсем çинчен те шутламалла. Сирĕн те урăх каччă тупмалла пулнă.

— Ăçтан? Вăрçă хирĕсенче сахал выртса юлнă-и вĕсем? Хамăр комбинатах илер ак. Унта мĕн пурĕ пилĕк пин çынна яхăн ĕçлет, вĕсенчен арçынсем пин çурă çеç, теççĕ. Пĕтĕм хулипе илсен те çавăн евĕрлех, пĕтĕм çĕршывĕпе илсен вара ман йышши ытлашши хĕрарăмсен шучĕ вăтăр миллионран иртет тенине илтнĕччĕ. Куратăр-и, хĕр пуçăн ĕмĕр ирттересси кăна юлнă манăн.

Çак вăхăтра телефон шăнкăртатрĕ те, Чернышевăна главнăй инженер хăй патне чĕнет иккен, çавăнпа калаçăва пĕтерме лекрĕ.

— Пуçăра ытлашши ан усăр, телей тупăнма кирлĕ, шанчăка çеç ан çухатăр,— хĕре лăплантарма пăхрĕ Слонов.

— Эсир миçе çулта?

— Çирĕм виççĕре.

— Эпĕ вăтăр пиллĕк тултартăм. Сире вунă çул каярах тĕл пулнă пулсан, хама юраттарма тăрăшмаллаччĕ пулĕ.

— Халĕ тăрăшма юрамасть-и? — кула-кулах ыйтрĕ Валерик.

— Юрамасть.

— Мĕншĕн?

— Çук япалана çухатма çук, теççĕ те, çапах манăн çук упăшкама та çухатас килмест. Хăвăрах шухăшлăр-ха, эсир ман çула çитнĕ чух эпĕ карчăк пулса тăрăп. Вара сирĕн ытти арçынсен йăлипе çамрăк арăм тупас килĕ. Вăт мĕншĕн пирĕн хушăмăрта юлташла çыхăну çеç пулма пултарать. Çавăнпа хам хăвăр çумма çыпçăнма пултарассинчен шикленсе ан тăрăр, вăхăт тупăнсанах кунта килĕр. Сирĕнпе калаçса ларма питĕ аван. Халĕ сывă пулăр!..

Проходнойра Слонов хăйпе пĕрле ĕçлекен юлташне тĕл пулчĕ. Вăл çÿп-çап купи çинчен фанер татăкĕсем пуçтарнă та карçинккăпа çĕклесе пырать. Слоновăн çак рабочи премиш пирки мĕнле шухăшланине пĕлес килчĕ. Çавăнпа вăл хăй шухăшне ăна каласа пачĕ.

— Çук, тусăм,— терĕ рабочи,— премиш илес тесен пирĕн ытти бригадăсем мĕнле ĕçленине пăхса тăмалла мар, хамăр плана ытлашшипе тултартăмăр пулсан, парне таврашне те пире çеç паччăр. Сана мĕн, эсĕ пĕр пуç та пĕр кут, пĕтĕм цех плана тултарасса кĕтсе тăма та пултаратăн. Анчах ман çакăр ыйтаканĕсем килте пиллĕк çын. Пурте вĕтĕр-шакăрсем, çитменнине амăшĕ те вĕсен чирлĕ. Çитмĕл тенкĕпе тăрантарса-тумлантарса пăх-ха вĕсене, мĕнлерех пек туйăнĕ? Патшалăха пулăшмалла, унпа кашни рабочиех килĕшет. Анчах эсĕ ăна пурнăçа йывăрлатса мар, тата лайăхрах юсаса, çăмăллатса пулăшмалли меслет шухăшласа кăлар. Вара сан сĕнÿшĕн эпир икĕ алăпа та сасăлама хатĕр.

Валери ним те чĕнмерĕ, юлташĕпе сывпуллашрĕ те урампа хуллен утрĕ.

## 9. ТĂВАН ШЫРАКАНСЕМ

Быковпа Слонов часах туслашрĕç. Валери хăйĕн пÿлĕмне ремонт туни çинчен асăннăччĕ ĕнтĕ эпир. Тепĕр канмалли кун комендант пурне те общежитие юсама чĕнчĕ. Рабочисем пÿлĕмсене, коридорсене пĕр харăсах илем кĕртме, тасатма, дизенфекци тума тытăнчĕç. Валерин бригадира пулăшмалла пулчĕ. Çав кун Прохор ăна хăй арăмĕпе паллаштарчĕ.

— Ашшĕ унăн çамрăк чух музыкçă пулма ĕмĕтленнĕ. Вара асăнмалăх юратнă хĕрне Ари тесе ят хунă. Эпĕ кĕскетсе Ри тесе чĕнетĕп. Вăл санран аслăрах, çавăнпа та ăна Ри инке е Ари Артемьевна тесе чĕнме пултаратăн. Эпир виççĕмĕр çывăх туслашассăн туйăнать,— терĕ Быков.

Слонов ун арăмне хулана килнĕ кунах курнăччĕ. Унăн яка та кăмăллă сăнĕ асра юлнăччĕ. Çавăнпа Валери ун çине халĕ сăнаса пăхрĕ. Вăл йăнăшман иккен, Ари чăнахах тĕлĕнмелле хĕрарăм. Хитре сăнлă хĕрсем тĕнчере сахал мар ĕнтĕ, хула гаврашĕнче вĕсем уйрăммăнах йышлă пулаççĕ. Быков арăмĕ вара ытарма çук чипер хĕрарăм пек кăна мар, темле уйрăммăнах шап-шурă та çапçутă сăнлă курăнчĕ. «Тин çеç çунă çемçе юр пек йăлтăртатса тăрать», шухăшларĕ Валери.

Сăрланă урай типиччен Быковсен икĕ кун Слонов пÿлĕмĕнче пурăнмалла пулчĕ. Яланхи йăлипе, хытă ĕшеннĕ хыççăн, Прохор, каçхи апата ларсан, эрех ĕçрĕ те тĕттĕм пулнă-пулман выртан сарса пама ыйтрĕ. Кил хуçи хăнасене хăйĕн кравачĕ çине вырнаçтарчĕ, хăй диван çине вырнаçрĕ те çутă сÿнтерчĕ. Анчах темшĕн пĕрин те çывăрас килмерĕ. Ари ыйтнипе Слонов çарта виçĕ çул хушшинче асăнма тивĕçлине — мĕн курни-илтнине каласа пачĕ, Прохор хăйĕн пурнăçĕнче юлашки çулсенче мĕн пулнине пĕлтерчĕ.

— Ман атте Чăваш совнархозĕнче снабженец пулса ĕçлет, анне унтах машинкăпа пичетлесе пурăнать,— терĕ вăл.— Шупашкарта пирĕн тăватă пÿлĕмлĕ пÿрт, анчах висĕм çул мана килтен хăваласа ячĕç.

— Аçу-аннÿне хытă кÿрентертĕн пулĕ? — ыйтрĕ Слонов.

— Кÿренессе самаях кÿренчĕç ĕнтĕ. Хăйсенчен ыйтмасăр çак юнашар выртакан пикене качча илнĕшĕн нимпе те каçарасшăн пулмарĕç. Хамăр ун чух Хусанти политехнически институтра вĕренеттĕмĕр — Ри виççĕмĕш курсра, эпĕ унран аслăрах пулсан та — иккĕмĕш курсра çеç. Вĕреннисĕр пуçне иксĕмĕр те активлă общественниксемччĕ: хама профком председательне суйланăччĕ, арăм, гимнастикăпа пĕрремĕш разряд илнĕ хыççăн, тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнатчĕ. Пĕр сăмахпа каласан, пурнăç тулăхах мар пулин те питĕ тулли пулнă темелле. Пĕрре, тренировкă вăхăтĕнче, инструктор айăпĕпе Ари чуллă урайне пуçхĕрлĕ хытă вăркăнса ÿкрĕ. Ăна, тăнран кайнăскере, больницăна леçрĕмĕр. «Миме хускалнă», терĕç врачсем. Икĕ эрне пурнăçпа вилĕм хушшинче асапланса выртнă хыççăн сывалма пуçларĕ, вара ăна санаторие ячĕç. Спортсмен çирĕп сывлăхĕ ăна вилĕмрен хăтарчĕ, анчах пуç çаврăнни халĕ те иртсе кайман-ха. Ирĕксĕрех академически отпуск илме лекрĕ. Килтен пулăшмасăр пĕр стипендипе иккĕн пурăнма çукки каламасăрах паллă ĕнтĕ. Мĕн тăвас, эпĕ заочнăй факультета куçрăм та, Ри çуралнă хулана килсе, комбината ĕçе кĕтĕм. Çанна тавăрсах ĕçлерĕм. Вара эпĕ мĕнле çын иккенне асăрхарĕç те мана бригадира суйларĕç. Халĕ, хăвах куратăн, ятăма кунта çеç мар, пĕтĕм районĕпе чыслаççĕ.

— Ари Артемьевна кăçал института таврăнмалла-и?

— Отпускне тепĕр çуллăха тăсма лекет пулмалла — сывлăхĕ юсанса çитеймерĕ. Тепĕр чух утса пынă чухнех сулăнса каять те çĕре туплетсех ÿкет. Пĕччен килтен кăларма та хăрушă. Унăн вара пасара та, магазинсене те çÿреме лекет. Хам сменă хыççăн та киле час-часах вăхăтра таврăнаймастăп. Кашни кун тенĕ пекех тĕрлĕ пуху-канашлăва чĕнеççĕ. Халăх дружинине çырăннăранпа вара тепĕр чух тул çутăлсан тин киле таврăнатăп. Кирек епле ĕçе те тимлĕ тума хăнăхни пĕтерет: хăшĕсем дружинăна ятне туса çеç çырăнчĕç, эпĕ вара вăрă-хурахпа, хулигансемпе, тĕрлĕ харам пырсемпе кĕрешес ĕçе чунăма парсах туса пыратăп. Пĕр-пĕр тĕттĕм паттăрне милицие тытса парассишĕн çĕрĕ-çĕрĕпе вокзал çывăхĕнче хураллама лекет. Пĕлетĕн-и, ун пек чух чĕрем йĕппе йĕпленĕ пек ыратать: килте манăн савнă Ри пĕччен вĕт, вăл çĕре ÿкме те, урăх инкек курма та пултарать-çке. Эх, пурнăçăм, çăмăл килмерĕн эсĕ мана!

— Ăна-кăна питĕ аван чухлатăп, пурнăçра хура-шур курман мар, пайтах курнă. Кун-çулăма уяр тÿпе пек илемлĕ тĕс кĕртес килет, анчах вăл кĕтмен çĕртенех хăмăрланма тытăнать, тепĕр чух хăрăм пекех хуралса каять,— терĕ Слонов. Унтан Ари ыйтнипе хăйĕн биографине тĕплĕн каласа пама лекрĕ. Хăйне çак хулари вокзалта тупса Шупашкарти ача çуртне яни çинчен каласанах, Ари, хытă хумханса, вырăн çине тăрса ларчĕ.

— Хăçан пулнă вăл? — чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ хĕрарăм.

— Хĕрех пĕрремĕш çулта. Ача çуртне мана июль уйăхĕн улттăмĕш числинче илсе пынă. Унччен çак хулари вокзалта миçе кун тытса тăни паллă мар. Ачисене кайса пăрахакан хĕрарăмсем ун çумне хушамачĕпе ятне, вăл хăçан çуралнине кăтартса хут çырса чикекенччĕ, ман çумра нимле хут та тупăнман, çавăнпа эпĕ хамăн чăн хушамата та, хăçан çуралнине те пĕлместĕп,— хуравларĕ Валери.

— Прошă, вăран-ха,—упăшкине хулĕнчен лăскаса каларĕ Ари.— Астăватăн-и, эпĕ сана мăнакка йăмăкĕ патне янă çырăва кăтартнăччĕ.

Быков пĕр тапхăр хăйĕнчен мĕн ыйтнине чухлаймасăр ним чĕнмесĕр выртрĕ. Арăмĕ Слонова вокзалта тупнине аса илтерсен тин вăл ăнланчĕ пулмалла, пĕр хушă иккĕшĕ çеç ăнланмалла япаласем çинчен калаçрĕç.

— Эсĕ шаллу пулĕ тетĕн-и? — ыйтрĕ Прохор.

— Кам пĕлет. Вĕт вĕсен ячĕсем... тата сăнран пăхсан та эпир иксĕмĕр пĕр евĕрлине хăвах асăрхатăн. Хамăр пÿлĕме кайса шкатулка илсе кил-ха, çав çырăва тепре вуласа тухар.

Быков тумланмасăрах коридора тухрĕ. Ари вырăн çинчен тăрса çутă çутрĕ те халат тăхăнчĕ. Валери вĕсем мĕншĕн хумханнине пĕлеймерĕ пулсан та, пижамне тăхăнчĕ.

Вĕсем çыру вулама хатĕрленнĕ вăхăтра эпир вулакана Ари кун-çулĕпе кĕскен паллаштарар. Унăн ашшĕ çамрăклах музыкăна хытă юратнă, çар службине кайсан, духовой оркестрта кларнет каласа пурăннă. Киле таврăнсан вăл Шупашкара вĕренме кайма ĕмĕтленетчĕ, анчах çирĕммĕш çулсенче Хĕрлĕ Çартан килекенсене час-часах районта пысăк ĕçе кĕртес йăла пулни хупланă. Вара унăн вĕренес вырăнне парти райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлеме лекнĕ. Артем Волков — Ари ашшĕне çапла чĕннĕ — пултаруллă çын пулнă пирки часах районта авторитетлă çынсен шутне кĕнĕ. Уйрăммăнах вăл çирĕм тăххăрмĕш-вăтăрмĕш çулсенче колхоз тăвассишĕн хĕрсе кĕрешнĕ чух ăнăçлă ĕçленĕ. Вара ăна Хĕрлĕ профессурă институтне вĕренме янă. Мускавра вăл университетра вĕренекен чăваш хĕрĕпе паллашнă. Вĕсем, пĕр районра çуралса ÿснĕскерсем, малтан çывăх туслашнă, унтан пĕр-пĕрне хытă юратса пăрахнă та, вĕренсе тухиччен мăшăрланса, пĕрле пурăнма пуçланă. Çавăн чух вĕсен пĕрремĕш ачи — Ари çуралнă.

Студент чухнех Артем Волков чăваш ялĕсемпе хулисенче совет влаçĕ епле пуçланса кайни çинчен пĕчĕк кĕнеке пичетлесе кăларнăччĕ. Тÿрех каламалла, хакла ларнă çав кĕнеке авторне. Вăтăр çиччĕмĕш çулта ăна чăваш çĕршывĕнче революци мĕнле пулнине «буржуалла националистсем пек çутатса панăшăн» айăпласа тĕрмене лартнă та, вăл, унтан тухаймасăрах, хĕрĕх иккĕмĕш çулта вилнĕ. Ари амăшĕ упăшкине арестленĕ чух йывăр çын пулнă. Ултă уйăхран унăн ывăл ача çуралнă. Ăна Валери ятлă хунă. Йывăр килнĕ çамрăк хĕрарăма пĕччен икĕ ача пăхса ÿстерме. «Халăх тăшманĕн арăмĕ» тесе, ăна хваттертен те кăларса янă, университет пĕтернĕ пулин те, шкула уборщицăна ĕçлеме кăна илнĕ. Пуринчен ытла телейсĕр хĕрарăма упăшки çинчен нимле хыпар та çукки хытă пăшăрхантарнă тата хăйне çынсем шанманни хурлантарнă. Паллакан çынсем май килнĕ таран пăрăнма тăрăшнă, «халăх тăшманĕн арăмĕ», тесе кусран каласа хăртакансем те сахал пулман.

Волковăн тăванĕсем юлман, анчах унăн арăмĕн икĕ аккăшĕ пулнă. Асли Мускавра вĕреннĕ чух качча тухнă та унтах никĕсленнĕ, кĕçĕнни тăван районта колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăннă. Кĕçĕн аккăшĕ тăрăшнипе ĕнтĕ Ари амăшне шкула урай шăлма ĕçе илнĕ. Те йывăр хуйхă тÿсеймесĕр, те сывлăхĕ çирĕпех пулманран, Ари амăшĕ упăшкине тытса хупнă хыççăн час-часах чирлекеленĕ. Вăрçă пуçланас умĕн вара икĕ ачине тăлăха хăварнă. Арипе виçĕ çулхи Валери районтах, аппăшĕ патне пурăнма юлнăччĕ, анчах Мускавра пурăнакан мăнаккăшĕ ывăл ачана хăй пăхса ÿстерме пулнă та ăна илме килнĕ. Çав вăхăтра ĕнтĕ нимĕç фашисчĕсем пире хирĕç вăрçăпа тухнă. Икĕ эрне хушши киле тухса каяймасăр пурăннă вăл çак пĕчĕк хулара. Июль уйăхĕнче тин ăна чукун çул çинче ĕçлекен пĕр паллакан çын пуйăс çине ларма пулăшнă.

Ари ун чухне, ултă çулхи кăтра пукане пек хитре хĕрача, шăллĕнчен уйрăласшăн пулман, анчах ăна мăнаккăшĕ часах йăпатнă.

# ВИÇĔ САВĂ

Георгий ЕФИМОВ

## ШŸТЛЕСЕРЕХ

*Вун саккăрта, вун тăххăрта*
*Сиртен камах пулса курман?*
*Çут уйăх айĕнче чунтан*
*Хĕре камах ыталаман?*

*Юратнă, ним тума та çук.*
*Мĕн чухлĕ çĕтнĕ-ши пушмак?*
*Сăмах шăраннă пыл та çу,—*
*Пултарнă ĕнтĕ каласма!*

*Шусăм килсессĕн, уйрăлсан,*
*Пуçлатчĕ йăшмашкăн чун.*
*Кĕскелме мар-çке,*
*Тăсăлса*
*Пырать пекехчĕ ĕçлĕ кун.*

*Такам ман савнă хĕр çине*
*Туяттăм пăхнăн ăмсанса.*
*Çĕн уйăх пек куç харшине*
*Ăш çил ан кайтăр чуп туса.*

*Ăшра çинса тăратчĕ вут,*
*Хыт кĕвĕçеттĕм, тупата.*
*Çав çут хĕвелĕн пĕреххут*
*Кĕресчĕ, теттĕм, ман хута.*

*Çакки пулсассăн, эп ăна*
*Çÿл тÿперен анăçалла*
*Çын сисиччен самант кăна*
*Пĕр туртса çеç антармалла.*

*Çав вăхăтра чун çуннине*
*Йăлтах шута илес пулсан,*
*Халь куçармашкăн ватт çине*
*Меслет пеккиĕ тупăнсан,*
*Пĕр-икĕ кас Шупашкара*
*Ним мар, тен, çутатма пулать.*

*...Хĕре куран та вăйăра*
*Тинех-çке ăшăм тамалать.*

*Ай, хытă çавăрнă пуçа,*
*Юратмаллах юратнă çав.*
*Пăсăк пулмарĕ ман шăпа,*
*Пĕр мăшăр пултăмăр уппа.*
*Лăпланчĕ канăçсăр чĕрем*
*Ăна курсассăн пÿртĕмре.*

*...Анчах пĕр çирĕм çул иртсен,*
*Тăнлав çине шур юр ÿксен,*
*Арăм мана куçран пăхса,*
*Илет тек ассăн сывласа.*
*Вун саккăрти пек, çĕнĕрен,*
*Савма пуçларĕ чĕререн.*
*Юри хам сисмĕше хыватăп,*
*Уни-куни пăхса ыйтатăп:*
*— Мĕн пулчĕ арăм?*
*— Ним те мар..*
*— Кала, манран эс ан пытар?*

*Арăм пăхать те йăл кулать,*
*Мана çапла хурав парать:*
*— Эс чĕртнĕ çулăм явăнать,*
*Ху çумра чух вăл лăпланать.*
*Пĕр хамăн çеç-çке сан çине*
*Пăхас килет çĕрне-кунне.*
*Çил сан çÿçе арпаштарать,*
*Темме ман чунăм хурланать.*
*Санăн çÿçе арпаштарма*
*Эп çеç пек тивĕç туйăнать.*
*Ан кул.*
*Пĕр сана çеç савма*
*Эп ирĕк панă чунăма.*

*Çапла иккен вăл юратсан...*
*Çунан,—*
*Ун çулăмĕ чуна*
*Çамрăклатса тăрать ялан;*
*Халь ир, тет, ватăлма сана,*
*Пурнăç епле вĕрет сăна,*
*Чи çирĕп юрату кăна —*
*Телей те чыс кÿрет çынна.*

* *

*Улмуççи пан улми памасассăн,*
*Кам йĕр хывĕ-ши ун патне?*
*Йăрăс çĕмĕрт çеçкесĕр пулсассăн,*
*Кам-ши хуçĕ çара туратне?*
*Çурхи кун,*
*Çĕршыв ешĕл чухне,*
*Кĕр çинчен, мĕншĕн илтĕр аса?*
*Çамрăк чун,*
*Юн вылянă чухне*
*Шутламасть çав туя тытасса.*

* * *

*Куçĕ тулли-тулли куççулĕпе*
*Кĕç-вĕç йĕрсе ярас салху хĕр пек*
*Аран тÿссе тăрать кĕрхи тÿпе:*
*Кăшт тĕкĕн çеç,—*
*Тÿсеймĕç пĕлĕтсем,*
*Тăкмашкăн пуçлĕç çутă тумламсем.*
*Вăрман кăна*
*Япшаррăн курăнать,*
*Кĕрен те хĕрлĕ тутăрсем çыхать.*
*Пилеш,*
*Палан,*
*Сар майăр вăл сĕнет:*
*«Татса юлсамăр умра пур чухне!»*
*Тăрнасемпе хур кайăк картисем*
*Савăлланса вĕçеççĕ малалла.*
*«Кайри — мала, малти — кая»,— тесе*
*Эп кăшкăрмастăп халĕ ачалла.*
*Çулĕ ахаль те йывăр-çке вĕсен.*
*Çитес çĕре пурин те çитмелле.*
*Кайран,*
*Ушкăнпала кăнтăр енчен,*
*Хăйсен çемçе çунаттисем çинче*
*Çурхи куна илсе-çке килмелле.*
*Унччен сыв пулăр!*
*Эп кĕтеп сире...*
*Çемçе, ачаш çил вĕрнине туйсан,*
*Хĕвел куçа шартмашкăн тытăнсан,*
*Сире часрах курасшăн тÿпере*
*Эп тĕмсĕлсе-çке пăхăп чĕререн.*
*Хаваслă та янравлă юррăра*
*Эп илтĕп, тусăмсем, пин çухрăмран.*
*«Телейлĕ пул!..»*
*Йĕрсе ярать тÿпе,*
*Вăл уйрăлать хитре çу кунĕпе.*
*Çулçă ÿкет...*
*Кайăк карти вĕçет.*
*Çĕн шухăш киввине сирсе килет.*

*Вулакансен очеркĕсем*

# ŸСĔМ ÇУЛĔ ТАКĂРЛАНТĂР

Георгий КРАСНОВ

Шурăмпуç Атăл леш енчен Лапсар еннеллех çывхарчĕ. Юнашар вăрманти кайăксем те кĕске ыйхăран вăранчĕç, часах вĕсем пĕчĕк уçланкăсенче вуншар саспа чĕвĕлтетме тытăнчĕç.

Тул çути вăрман хĕрринчи вăрăм витесене те кĕчĕ. Унтан ĕнесем пĕр пек кавлени илтĕнет. Çавăнтах вите çумĕнчи лăпсăркка йывăç тăрринче куккук авăтса ячĕ.



Ĕне ферминче ĕçлекенсем шурăмпуç çутине ура çинче кĕтсе илме хăнăхнă. Уçланкă çумĕнчи пĕр типтерлĕ çурт кантăкĕсенчен пасăрах хĕрсен çинçе сассисем янăраççĕ. Тухăçран хăпаракан хĕвел пайăркисем, йывăççем хушшипе тухса, çурт умĕнчи симĕç çерем çине ÿкнĕÿкменех хĕрсем пÿртрен чупса тухаççĕ те вите еннелле васкаççĕ. Ир-ирех хаваслă вĕсем, ара, çамрăклăх пурне те пĕрмай хаваслă пулма хистет мар-и?..

Часах унта та кунта сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Йывăççем айне пулнă пĕчĕк çырмаран Мефодий Охотников слесарь кулса хăпарчĕ.

— Хĕрсем, çăвăнма çырмана анăр, унти шыв çав тери сиплĕ,— сĕнчĕ вăл, питне пĕчĕк шурă тутăрпа шăлса.

— Эпир пасăрах çăвăннă-ха, эсĕ ĕнесем валли шыв çителĕклех хатĕрлерĕн-и?

Çырмара çăл пур. Унта насус вырнаçтарса лартнă. Мефодий çав насуспа таса шыва уçласа башньăна тултарать. Кайран пăрăхсем тăрăх витесене шыв каять. Кашни ĕне умĕнчех автопоилкă.

— Ĕнесем валли çеç мар, сире шыва кĕме те çитет-ха шывĕ,— шÿтлет слесарь.

Хĕрĕсем те çепĕç чĕлхеллĕ. Ĕçсем ăнса пынă чух мĕншĕн кăмăллă пулас мар? Акă, кăпăкланса тăракан ирхи сĕтпе тулнă витре йăтнă хĕр. Тепĕр аллипе вăл çамки çине усăнса аннă сарă çÿç пайăркине тÿрлетрĕ те тантăшĕпе пуплеме пуçларĕ:

— Ĕнесем сĕт хушсах пыраççĕ, ĕнер ирхинчен каллех нумайрах суса илтĕм,— терĕ.

Ку вăл Елизавета Федотова, Шупашкар çывăхĕнчи Вăрманкас хĕрĕ. Тантăшĕ — хуп-хура куçлă Галина Федорова, Лапсар ялĕнчен. Иккĕшĕ те ĕне ферминче ĕçлеççĕ.

— Эпĕ ĕнер 14-шар литр сурăм, паян вара тепрер литр ытларах пулать тесе шутлатăп,— терĕ Галина та.

Хĕрсем, шăкăл-шăкăл каласса, сĕт йышăнакан пункт еннелле утрĕç. Кунта ăмăртура малта пыракан Агафия Корнилова мĕн чухлĕ сĕт суса илнине шутласа пăхнă иккен. Ун çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах. Хăй пăхакан ĕнесенчен вăл куллен пĕрер пăт сĕт суса илет.

— Хăш-пĕр ĕнисем кунне 20-шер литр сĕт антараççĕ,— тет Агафия, темĕншĕн кăштах вăтаннă пек пулса.

Вара виççĕшĕ те Людмила Иванова паян сунă сĕтпе интересленеççĕ. Çак çамрăк хĕр (вăл фермăра ĕçлеме пуçланăранпа çулталӑк кăна çитнĕ) чунтан тăрăшса ĕçлет пулин те, халлĕхе сĕт вĕсенчен сахалтарах сăвать-ха, мĕншĕн тесен вăл пăхакан ĕнесенчен тăваттăшĕ çывăх вăхăтра тин пăруламалла. Çавăнпах-и, тен, совхозăн аслă зоотехникĕ Николай Саблин ăна йăпатма тăрăшать.

— Ĕнен мана,— тет вăл яланах,— кун пек тăрăшса ĕçлесен, эсĕ пуринчен те иртсе каятăн. Асту, сан ĕнÿсем мĕнлереххисем!..

Людмила зоотехник каланине ĕненет те, ĕненмест те. Анчах тăрăшать. Ÿркенмест вăл. Çулталăк пуçланнăранпа çамрăк хĕр хăй пăхакан ĕнесенчен 1700-шер литр сĕт суса илнĕ. Халĕ вара ун ĕнисем питĕ хăвăрт сĕт хушса пыраççĕ. Ахаль каламасть пуль çав аслă зоотехник! Чăнах та, ун ĕнисем пеккисем фермăра урăх çук. Вĕсемшĕн унăн каллех зоотехнике тав тумалла. Хăйĕн ĕçне чĕререн юратса тăвакан, пултаруллă специалист вăл, Николай Иванович Саблин. Комсомолец. Пĕлтĕр çеç Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Çавăнпа ун биографийĕ те пысăк мар. Пĕчĕк чух сумкă йăтса ялти шкула чупнă, каникул вăхăтĕнче ытларах колхоз уй-хирĕнче ирттернĕ.

— Вăрçă çулĕсенче лашасем çитмен пирки вăкăрсемпех сухалаттăмăр,— аса илет Николай. Унтан кулса:— Вăкăрсем çине утланса вăрăм мăйракисенчен тытсах чупаттăмăр,— тесе хурать.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн каччă каллех колхозра ĕçленĕ. Унтан Совет Çĕрĕнче

Килмерĕ-и? Қаçар эс ăна, Катя. Эс ăна пула...

Антонина Павловна. Ухмах. Сӳпĕлтететĕн. Катькăсăр йывăç ӳкнине курмастчĕ-им?

Петр Тимофеевич. Çынсем каланине калатăп.

Антонина Павловна. Çынсем... çынсем калĕç вĕсем тем те. Çынсем, вăн, Катя юриех Альберта айăпласшăн йывăç айне выртнă, теççĕ.

Катя. Суятăр!

Антонина Павловна. Эс ан пăлхан. Çынсем калĕç вĕсем.

Катя. Мĕн кирлĕ сире? Ма килтĕр?

Антонина Павловна. Хăвалатăн-им? Альберт ăçта? Ăçта пытартăн эс ман ывăла? Ăçта чикрĕн? Киле çитнĕ-çитменех тухса чупрĕ...

Катя. Кайăр, халех тухса кайăр!

Антонина Павловна. Ан кăшкăр! Петьăна вырăнтан сирпĕтрĕн... Ун вырăнне йышăнтăн. Вăл çитмест...

Катя. Альберт çук кунта.

Антонина Павловна. Ёненсех лартăм. Чечек? Чечек çыххине кам пачĕ?

Петр Тимофеевич. Хĕрхенет пуль...

Антонина Павловна. Ăçтан сана çын юраттăр. Мĕн тутăр вăл санпа, чăлахпа, ухмахскерпе. Тухтăр сана ĕмĕр вырăн çинчен тăраймасть, тет.

Катя. Суятăр, суятăр! Тухса кайăр! Утатăп эпĕ! (Тăрать.) Мана нимĕн те пулман! Нимĕн те ыратмасть. (Қаллех ларать.) Ыратмасть!

Петр Тимофеевич. Қаяр, Антонина!

Антонина Павловна. Эсĕ...

Петр Тимофеевич. Катя, эс Альберта каçар. Эпир те сана манмăпăр... пулăшăпăр... Укçан-и унта...

Катя. Кайăр, кайăр! (Маринкка аппа кĕрет.)

Маринкка аппа. Мĕн пулчĕ?

Петр Тимофеевич. Қаяр, каяр, Антонина.

Маринкка аппа. Ирсĕрсем! Тухса кайăр!

Антонина Павловна. Ан кăшкăр! Каятпăр, каятпăр. Истеричкă! Каяр, Петенькă.

Петр Тимофеевич. Сывă пулăр! (Каяççĕ.)

Маринкка аппа. Катя, лăплан эс, лăплан. Çын-и вĕсем? Лăплан. Выльăхсем. Сур вĕсем çине.

Катя. Мĕн кăна каламарĕç!

Маринкка аппа. Сашă таврăнса ĕлкĕреймерĕ-çке. (Варук чупса кĕрет.)

Варук. Катя, Катюшă! Тумлан. Эсĕ те тумлан, Маринкка аппа. Эпир сире илме килтĕмĕр. Çырăнма каятпăр, Катюша!

Маринкка аппа. Қампа, Варук?

Варук. Упапа, Маринкка аппа, Матвипе.

Катя. Саламлатăп. Туйĕ хăçан пулать?

Варук. Тумлан, тумлан. Çĕнĕ клуб туса пĕтерсен, клубра, Катя!

Катя. Паян пыраймастăп пуль, Варук. Туйна пыратăп. Пысăк туй тăвăпăр. (Семкăпа Матви кĕреççĕ.)

Семкă. Çиетри, вылятри, кулатри?

Пире çиме чĕнетри?
Чĕнмесен?
Чĕнмесен хамăр сире чĕнĕпĕр.
Тумланăр, тумланăр, тумланăр,
Эпир сире кĕтетпĕр,
Варук туйне чĕнетпĕр.

Матви, туш! (Юрлаççĕ.) Ма кулмастăр? Кулăшла мар-им? Паллашăр. Матвей Арсентьевич, паянччен каччă шутĕнче тăнăскер, паянтан Варук чури. Матви, туш!

Матви. Машин кĕтет, Варьă. Катерина Ивановна, тумланăр.

Катя. Қаçар, Матви. Ман паян, те ĕнер ытларах çӳренĕрен... пуç ыратать.

Семкă. Лайăх мар та... Сăлтавĕ, мĕнле калас, шута илме тивĕçлĕ.

Варук. Маринкка аппана илсе каятпăр, Матви.

Матви. Атя, Маринкка аппа. Эпир халех таврăнатпăр.

Маринкка аппа. Тем тумалла?

Катя. Кайса кил, Маринкка аппа. Хăвăртрах эс, ан кĕттер.

Маринкка аппа. Қаясах-им эппин?

Варук. Атя, атя. (Маринкка аппа тепĕр пӳлĕме тухать.)

Семкă. Чи çывăх юлташ, мĕн тери лайăх, ăслă çын пĕтрĕ. Эпĕ савăнатăп. Йĕр, Семкă, шăтăк Семкă, макăр! (Макăрнă пек тăвать. Кулаççĕ. Маринкка аппа çĕнĕ тутăр çыхса тухать.) Макăр! Ӳле!

Анисса. Лăплан, Семкă... ан йĕр... Эс те вун çичĕ çулхиех мар... Эпĕ те...

Маринкка аппа. Эпĕ нумаях тăмастăп. Эсĕ асту, ниçта та ан кай.

Варук. Пурте килетпĕр. Кĕт, Катя. (Каяççĕ.)

Катя. Хăвăртрах эсир! Лайăх мăшăр. Пуç ыратать. Çук, çук! Ыратмасть. Пуç та, ура та ыратмасть. Суятăп. Хăвна алла ил, Катенькă. Эс текех пĕчĕк ача мар. Тантăшусем качча тухаççĕ. Савăн, Катенькă савăн!.. Эпир халех, Катенькă, çак чертежа ӳкерсе илĕпĕр... Халех пур хуйха-суйха манса кайăпăр. Ёç — чи лайăх эмел. Юрла, Катенькă, юрла-юрла ĕçле. (Ёçлеме ларать. Алăка шаккаççĕ.) Кĕрĕр, питĕрмен. (Альберт кĕрет. Вăл чемодан йăтнă.)

Альберт. Катя!

Катя. Альберт?!

Альберт. Кĕтменччĕ-и?

Катя. Хăçан таврăнтăн?

Альберт. Паян.

Катя. Çынсем ĕнерех терĕç.

Альберт. Çук, паян. Нумай пулмасть. Салам. Санпа калаçма килтĕм.

Катя. Мĕн çинчен?

Альберт. Пурнăç çинчен... Иксĕмĕр çинчен...

Катя. Аçупа аннӳ ячĕç-и?

Альберт. Çук. Эп чемодана йăтрăм та çăла кайса çăвăнтăм. Сивĕ, таса шывпа çăвăнтăм та сан патна чупрăм, Катя. Эп сана юрататăп.

Катя. Мускаври хĕрне ăçта хуратăн? Сана авланнă темерĕç-и?

Альберт. Қам каларĕ? Çук ман Мускавра хĕр. Сана хĕрхенсе мар, юратса, таса чĕрепе юратса килтĕм эпĕ сан патна, Катя...

Катя. Мĕн ĕмĕр тăршшĕ ӳпкелесе пурăнăн. Чăлах пулса юлсан...

Альберт. Пурпĕрех. Сансăр пурнăç та пурнăç мар, пĕртен-пĕр телей ман эсĕ... Эпĕ яла таврăнатăп, сан патна. Ёмĕрлĕхех. Акă чăматан. Ан хăвала.

Катя. Сан вĕренсе пĕтерес пулать.

Альберт. Эпĕ вĕренетĕп. Заочнă. Ёçлетĕп те, вĕренетĕп те. Пĕрле ĕçлĕпĕр... Ну, мĕнле?

Катя. Эпĕ те сана юратнă.

Альберт. Халĕ, Катя, халĕ?

Катя. Пĕлместĕп. Эсĕ те ан васка. Сывалсан курăнĕ. (Альберт приемник патне пырать, включателе пăрать. Юрă илтĕнет. Ку юрра пĕрремĕш картинăра Катя юрланăччĕ. Çав юрăран Альберт çĕнĕ юрă тунă.) Тăхта-ха, мĕнле юрă ку?!

Альберт. Сан юрру...

Катя. Хитре юрă... Эсĕ çырнă-и?

Альберт. Эпĕ... Итлер-и? (Альбертпа Катя калаçмасăр итлесе лараççĕ. Чӳречерен сĕтел çине чечек çыххи кĕрсе ӳкет. Çакна Катя асăрхать.)

Катя. Қам унта?

Ваçça. Эпĕ, Екатерина Ивановна.

Катя. Ыттисене те...

Ваçça. Пĕтĕмпех эпĕ...

Катя. Спасибă, Ваçça. Кĕр пӳрте.

Ваçça. Кĕресех-им?

Катя. Кĕр, кĕр! (Ваçça чӳречерен кĕме тăрать, Альберта курсан кĕмест.)

Ваçça. Çил вĕрет. Чӳречине хупас-и?

Катя. Ăшă çил вĕрет..

Ваçça. Вĕртĕрех эппин?

Катя. Вĕртĕрех... (Юрă итлеççĕ.)

Ваçça. Хитре юрă...

Катя. Альберт çырнă. (Чечек çыххине Альберта парать. Альберт Катьăна ыталать. Юрă вăйланать. Ваçça ерипен чӳречине хупать те çухалать).

Чаршав.

# Малтанхи сăвăсем

Валентина ЯТРИНА

## МАНĂН ТУТĂР

*Мамăк тутăр çыхатăп
Хĕл кунĕнче.
Қăпăш юрне тытатăп
Уй-хирсенче.*

*Шап-шурă юр пĕрчисем
Манăн тутăр пек;
Ытарайми вăхăтсем
Çĕнĕ юрă пек.*

*Эп çуркунне
Симĕс тутăр çыхатăп
Тантăшсемпе васкатăп
Колхоз садне.*

*Çырла-йывăç çулçисем
Манăн тутăр пек;
Ытарайми вăхăтсем
Çĕнĕ юрă пек.*

*Тĕрлĕ тутăр çыхатăп
Çу кунĕнче.
Улăх утти çулатăп
Атăл енче.*

*Манăн шур тутăр пек
Таврари шур чечексем,
Ытарайми вăхăтсем
Çĕнĕ юрă пек.*

*Кĕр кунĕнче,
Сарă тутăр çыхатăп
Панулмисем пухатăп
Сад пахчинче.*

*Пиçсе çитнĕ улмасем
Манăн тутăр пек;
Ытарайми вăхăтсем
Çĕнĕ юрă пек.*

## УЙĂХПА ХĔВЕЛ

*Хутлам пĕлĕтсем тӳпе аркинче
Кĕрен хăюпа çĕнелсен,
Шăрçа-çăлтăрсем каç тумĕ çинче
Сут-кĕмĕл çиппе çĕленсен,*

*Шур уйăх анать çыран хĕррине,
Чăмать тарăн кӳлĕ тĕпне.
Шырать вăл унта савни çĕррине,—
Çухатнă Хĕвел парнине.*

*Анчах тупăнмасть çĕрриниепле,
Қамран ыйтмалла ăçтине?
Ах, каçĕ кĕске, часах килмелле
Хĕвел те тăр кӳлĕ çине.*

*Çĕррисĕр мĕнле тухас ун умне
Ăçта халь ăна тупмалла?
Çут уйăх тăкать мерчен-куççульне:
«Ах, калăр-ха, мĕн тумалла?»*

*Хĕвел, ав, кулса килет тухăçран
Баскать савнă Уйăх патне.
Савни кайнине курса аякран
Пухать ун мерчен-куççульне.*

## КИМĔ ЮХАТЬ, ХУМĔ ВЫЛЯӀЬ

*Мăн шыв урлă çĕн кĕпер,
Қарлăкĕсем пит чипер.
Эп ку енче, эс леш енче,
Курнăçăлăр ир çинче.*

*Кимĕ юхать, хумĕ вылять
Сăнчăрĕ çыра юлать;
Тусăм килет, ăшшăн пăхать,—
Сăнĕ асăмра юлать.*

*Йĕкĕр çыра шыв чуптуса,
Юхса выртать юрласа.
Мăшăр чĕре пĕр пек тапсан,
Пурнас килет савăнса.*

---

Андрей НИКОЛАЕВ

## ЧУН САВНИПЕ ПĔРЛЕ

Тăван хирте ĕçлерĕмĕр
Чун савнипе пĕрле.
Кунне-çĕрне сисмерĕмĕр,
Ывăннине пĕлмерĕмĕр
Юратнă ĕçпеле.

Яра куна ирттертĕмĕр
Хĕрӳллĕн тăрăшса.
Сана эпир уй-хирĕмĕр,
Çĕн тĕшĕсем пиллерĕмĕр,—
Халь ӳсчĕр кашласа.

Ёнтĕ тăван уй-хирĕмĕр
Ешертĕр çĕнĕлле.
Тыр-пул — пирĕн телейĕмĕр
Çĕршывшăн, пултăр, терĕмĕр,
Савнипеле пĕрле.

## ТУХ ЭС, ТУСĂМ, УЙ-ХИРЕ

Тух эс, тусăм, уй-хире
Хĕвелтен те иртерех:
Кайăксен юррисене
Чи малтан итлер пĕрле.

Тух эс, тусăм, уй-хире;
Уй пусси кĕтет пире.
Икĕ çамрăк яш-чуна
Хушăпăр мăшăр çунат.

Тух эс, тусăм, уй-хире,—
Çунатланĕ сан чĕре
Ыраш, тулă, кукурус—
Вĕсем пурте — пирĕн тус.

Тух эс, тусăм, уй-хире,
Ăмăртса ĕçлер пĕрле.
Кĕр çитсен, кĕрекере
Савăнтăр ик яш чĕре!



# ВИҪҪӖМӖШ ФАБРИКĂ ӖҪЕ КӖРЕТ



Тулăх пурнăҫпа пурăнать Шупашкарти пир-авăр комбиначӗ. Унăн малашлăхӗ, ыранхи кунӗ татах пуянтарах. Халӗ вăл куллен виҫ ҫӗр сакăр вун пин метр хатӗр пир-авăр тӗртсе кăларать, ҫичӗ ҫуллăх вӗҫӗнче комбинат хальхинчен виҫӗ хут ытларах ҫӗршыва паха продукци туса памалла. Кунта ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ производствă корпусӗсем ӗҫе каяҫҫӗ.

Арлакан пӗрремӗш фабрикăпа юнашар ҫӗнӗ ҫурт ӳсет, кунта виҫҫӗмӗш фабрикă хута каймалла. Ку вăл комбинатри чи пысăк фабрикăсенчен пӗри пулать, унта декораци тумалли пир-авăр тӗртсе кăлараҫҫӗ. Фабрикă ҫуртне те пачах ҫӗнӗлле — тимӗр-бетон блоксемпе кӗленче панельсенчен тăваҫҫӗ. Халь кунта строительствă ӗҫӗсемпе пӗрле монтаж ӗҫӗсем те пыраҫҫӗ, ҫывăх вăхăтрах фабрикă малтанхи продукци пама пуҫлать.



Акă пӗр цехпа сменă маҫтăрӗ Александр Егоров пырать. Вăл Ольга Александрова ҫип арлакан патне пычӗ те ăна тем ăнлантарчӗ.

— Ӗҫчен хӗрсем ӗҫлеҫҫӗ кунта,—терӗ Егоров савăнăҫлăн.—Пирӗннисем канма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Халь сăнавсем пыраҫҫӗ, кӗҫех ҫип арлама пуҫлатпăр.

Чăнах та кунта ӗҫчен ҫынсем пухăннă. Александр Егоров, Ольга Александровăпа пӗрле, вунă ҫул каялла ҫип арлакан пӗрремӗш фабрикăра ӗҫлеме тытăннă. Халӗ вӗсем виҫҫӗмӗш фабрикăна та хута яма хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те коммунизмла ӗҫ ударникӗсем, иккӗшӗ те ăста техник, ҫип арлас ӗҫе питӗ лайăх пӗлеҫҫӗ.

Монтаж ӗҫӗсене Ивановăри монтаж Управленийӗнчен килнӗ рабочисем туса пыраҫҫӗ. Вун икӗ арҫынтан тăракан бригадăна Коль юлташ ертсе пырать. Халь вӗсем ҫип арлакан 75 машин тата сулчă ҫип хатӗрлекен 18 машин вырнаҫтарса хута янă.



Гарри Иосифович Коль—пултаруллă та ăста монтажниксенчен пӗри. Ҫак ӗҫре вăл ҫирӗм ҫул ытла ӗҫлет ӗнтӗ. Вăл халь монтаж ӗҫӗсене вӗҫлесен Шупашкар комбинатӗнчех юлма ӗмӗтленет.

Ҫавăн пекех, пулас ремонтировщиксем те (халь вӗсем монтажниксем) тăрăшса ӗҫлеҫҫӗ. Н. Яшин, А. Клементьев, П. Николаев, В. Конюхов, Г. Грибоедов ҫамрăксем пӗлтӗр кăна комбината ӗҫе кӗнӗ, халӗ вӗсем ăста монтажниксем пулса тăчӗҫ.

Кăҫалхи ҫулталăк вӗҫӗнче комбинатри ҫип арлакан виҫҫӗмӗш фабрикăри ҫитмӗл пин йӗке ӗҫлеме тытăнать. Промышленноҫра е халăх хуҫалăхӗн ытти отраслӗсенче кирлӗ илемлӗ пир-авăр пиншер метр кăларма пуҫлаҫҫӗ.

**Е. ЛЕОНИДОВ.**

Укерчӗксенче: (ҫӳлтен аялалла) а) ҫип арлакан 3-мӗш фабрикă; б) цехра монтаж ӗҫӗсем пыраҫҫӗ; в) А. Егоров маҫтăрпа О. Александрова прядильщицă; г) монтажниксем Г. Коль, Г. Грибоедов, В. Конюхов ӗҫ чертӗжӗсемпе паллашаҫҫӗ.

А. Припалов ӳкерчӗкӗсем.

# Ф. П. ПАВЛОВ

*(Çуралнăранпа 70 çул тултарнă май)*

Федор Павлович Павлов чăвашсен литературăпа искусствин пирвайхи деятелĕсенчен пĕри пулнă. Вăл хальхи Çĕрпӳ районĕнчи Патăръелĕнче 1892 çулхи сентябрĕн 13(25)-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ялти тăватă çул вĕренмелли шкула пĕтерсен, 1904—1907 çулсенче Иккассинчи икĕ класлă училищĕре вĕреннĕ.

1907—1911 çулсенче Ф. Павлов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн ученикĕ пулнă. Çав вăхăтра вăл тăван халăхăн юрри-сăввисене пухма тытăнать, чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырма пикенет. Унăн сăввисемпе класра çырнă сочиненийĕсене вырăс чĕлхин преподавателĕ пулнă Н. И. Колосов мухтаса ырланă, çавăн çинчен вăл Иван Яковлевича 1909 çулхи çуркуннех çырса пĕлтернĕ (майăн 3(16)-мĕшĕнче çырнă документ).

Çав хушăрах Ф. Павлов музыкăпа та интересленнĕ. Музыкă грамотипе теорине тăрăшса вĕреннĕ май, вăл сĕрме купăс та ăста каланă, шкулта иртterekен музыкăпа литературă каçĕсене те тăтăшах хутшăннă. Çакна вара юрлама вĕрентекен И. М. Дмитриев преподаватель асăрханă: 1910-мĕш çултан пуçласа, вăл Ф. Павлов ученика шкул хорне ертсе пыма та шаннă.

Ф. Павлов шкултан вĕренсе тухсан, И. Я. Яковлев ăна çавăнтах ĕçлеме хăварать. И. М. Дмитриевăн юратнă ученикĕ халĕ хăй юрă ĕçне вĕрентме пуçлать.

Чĕмпĕрти шкулта ĕçленĕ çулсем (1911—1913) Ф. Павловăн телейлĕ вăхăчĕ пулнă. Вăл хăйне пĕтĕмпех музыкă, литературă ĕçне парать: вĕренекенсен хорне ертсе пырать, сĕрме купăспа каласа, симфони оркестрне тата квартета хутшăнать, «Вĕлле хурчĕ», «Шет хитре хĕр» (Экспромт), «Савнă хĕр, хитре хĕр» (В. П. Эхмер) сăвăсем тата «Йăсăрка» балладă çырнă. Композици ĕçне те вăл çав вăхăтрах тытăнать, ку тĕлĕшпе «Легендă», «Шур кăвакал вĕçтертĕм» юрăсене, солист, хор тата оркестр валли çырнă «Чӳк», «Вăйă» ятлă произведенисене палăртмалла.

Музыкă енĕпе малалла вĕренес тесе, Ф. Павлов 1913 çулта Мускаври синодальнăй училищĕне кĕме ĕмĕтленет. Анчах та, пурнăçри тĕрлĕ сăлтавсене пула Чĕмпĕр хулинчех юлса, духовнăй семинаринче вĕренме пуçлать.

Семинарирен 1916 çулта вĕренсе тухсан, Ф. Павлов пĕр хушă Етĕрне уездĕнче — Кушлавăшра тата Палтайра учитель пулса ĕçлет. 1917 çулхи август уйăхĕнче ăна Шупашкар уездĕнчи Шемшер вулăсĕнче мировой судья пулма суйлаççĕ.

Шемшерте ĕçленĕ вăхăт та (1917—1919) Ф Павлов пурнăçĕнче паллă тапхăр пулнă. Унта вăл учительсен хорне тата драмă коллективне йĕркеленĕ, вĕсем валли халăх юррисене илемлетнĕ, «Сутра» пьесă çырнă.

Октябрьти социализмлă Аслă революцие Ф. Павлов хавхаланса кĕтсе илнĕ. Çак вăхăтран уншăн та çĕнĕ пурнăç пуçланнă. Çĕнĕ пурнăçпа пĕрле çĕнĕ юрăсем, литературă произведенийĕсем çуралнă

Хăйĕн юррисене шапирографпа пичетлесе, автор вĕсене совет влаçĕн малтанхи çулсенчех халăх хушшине сарма тăрăшать (1919 çулхи «Чăваш юррисем», 1921 çулта тухнă «Ача-пăча сасси» сборниксем т. ыт. те). 1922 çул пуçламăшĕнче Ф. Павловăн чи пысăк произведенийĕ—«Ялта» пьесă пичетленсе тухать. Тепĕр икĕ çултан унăн юррисене эпир «Сăрнай» ятлă пысăк сборникре куратпăр. Хаçатсемпе журналсенче Ф. Павлов çырнă статьясемпе фельетонсем тăтăшах пичетленеççĕ.

Анчах та тĕрлĕ енлĕ художник-гражданин Ф. Павлов çав çулсенче пĕр творчествă ĕçĕпе çеç пурăнмасть. Чăваш çĕршывĕнче çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçе вăл çав тери хастаррăн хутшăнать Облăçри çут ĕç пайĕн музыкă секцине ертсе пырса, Ф Павлов чăвашсем хушшинче музыкă пĕлĕвĕсене сарассишĕн, классикăллă произведенисене пропагандăлассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе 1920 çулта Шупашкарта музыкă шкулĕ уçăлать, чăваш хорĕ, концертсем паракан ушкăн тата Чăваш театрĕ çумĕнчи салон оркестрĕ йĕркеленеççĕ. Ф. Павлов хăй те, юрăсен авторĕ, дирижер пулса тата сĕрме купăс каласа, концертсене хутшăнать

Ф. Павлов ертсе пыракан чăваш хорĕ 1923 çулта Мускавра ял хуçалăх выставкинче пулать, Кремльте Свердлов ячĕпе хисепленекен залра юрлать. Çав коллективран пуçланнă та ĕнтĕ Чăваш государствă хорĕ — хальхи юрăпа ташă ансамблĕ. Çирĕммĕш çулсен вĕçĕнче Ф. Павлов государствă хорĕпе Мускавра тата тепĕр хутчен пулнă Ун чух та вăл ертсе пыракан хора çав тери ăшшăн кĕтсе илнĕ

1930 çултанпа Ф Павлов Ленинградри консерваторире композиторсем хатĕрлекен факультетра М. О. Штейнберг профессор класĕнче вĕреннĕ. Композитор тата драматург çĕвĕ пысăк произведенисем çырма ĕмĕтленнĕ. Анчах та йывăр чирленĕ хыççăн 1931 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче Ф. Павлов вилсе кайнă. Ăна Сочире хула çăвине пытарнă.

**В. ИЛЮХИН**

---

## Ламар

(Пуçламăшĕ 17-мĕш страницăра)

(Пуçламăшĕ 17-мĕш страницăра)

### ШЫВ ПЫРĔСЕМ

1

Шывсем тумламăн сăрхăнаççĕ
Çак Çĕр — анне кăкăрĕнчен,
Шыв пырĕсем тулсах пыраççĕ,
Хула ĕрчет пыр хĕрринче.
Ĕмĕртенхи шыв çулĕпе
Çӳрет сар ылттăн, мул вылять;
Çул уçакан — хутаç çакать,
Танккать вăл кĕлмĕç туйипе.
Вилсен те «çĕр çутилĕх» ун
Çук пилĕк пус... Телейсĕр чун!
Патши, тӳри-шари, улпучĕ
Çаратнă хăйĕн халăхне,
Вута пăрахнă, юн ăшне...
Çапла шăпамăр ĕлĕк пулчĕ.

2

Чулхулара та çавнашкал —
Ока шыв-шурĕн пырĕнче —
Ĕç халăхĕ ялан авал
Тертленнĕ хăй ĕмĕрĕнче.
Лаша сӳсменĕ пек йăлмак
Бурлакĕ тăхăнса шыв ашнă,
Çав йăлмака хам куртăм ак,
Шыв, пылчăк, хăйăр, юн пăтрашнă...

3

Тем çӳлĕш кремĕл тунă паттăр халăх;
Ока пырне хальччен вăл сыхласа
Тăрать, тĕреклĕ аллине тăсса.
Вилми пĕр эпос çырнă-мĕн çав алă!
Ăна хăмсарнă Атăлçи пăлхарĕ,
Эшкер-эшкер вăл курнă тутара,
Хăй — халăх эпопейи пек тăрать,
Шутлатăп: ĕмĕрех тăма пултарĕ!

*Горький, 21/22. 7. 62.*

* * *

Чуна çĕклентерсе ăсатрĕ Атăл,
Иртеççĕ тĕлĕкри пек çырансем...
Хусан шыва пăхать, пуçне пĕксе,
Килен-каян хăнасене вăл хапăл.

Ĕмĕрсенчен те ватă Шупашкарĕ
Кĕтет таврари шыв хăпарасса,
Çырансене таçтах сарăласса,
Вара вăл хитререх пулма пултарĕ.

Чулхулари чул пашнесем калаççĕ:
Чăнах та аслă пулнă халăх çак,
Вăл тӳснĕ пусмăра, вăрçа-харçа,
Ун мухтавне халь тĕнчипех кураççĕ.

* * *

Мускавăн тӳпине-мĕн каркалана
Йăлтах антеннă та пралук кăна.
Хăш чух, çӳлтен пăхсассăн, куçăм манăн
Мираж пекех курать çак хулана...
Сыв пулăр, пĕлĕш кăвакарчăнсем,
Мана ирсеренех вăратнисем!
Пăлхар çĕрне вĕçсе каятăп эпĕ
Сиртен кăшт пысăкрах кайăкпала.
Кунта ман тавтапуçăм, ман хисепĕм
Кĕвĕленсе, тен, çитĕ сăвăлла.
Сăввăмсенче çĕршывăмăн чĕри,
Ун ырă чунĕ çĕкленсе çуталĕ;
Çĕклекенни вăл — Атăл, ун юрри,
Тата çак халăх — ĕмĕрсен хуралĕ!

*Мускав, 25/26. 7. 62.*

---

ЯЛАВ № 9 (395)
СЕНТЯБРЬ—1962

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ.
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ КНИЖНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

Редактор: Г. А. Ефимов. Редколлегия: В. О. Алагер, А. Д. Калкан, В. Я. Канюков, П. К. Львов (отв. секретарь), А. В. Лукин, М. Д. Ухсай М. Д. Шумилов-Уйăп.

*Рукописи не возвращаются.*

НТ 02527. Подписано к печати 19. IX. 1962 г. Объем 5,82 п. л. Формат 70×108 1/8. Тираж 22.300 экз. Заказ № 1728. Цена 20 коп.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 1. Телеф 8—36.

*Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.*

**1963 çулшăн „ЯЛАВ“ журналпа „ТĂВАН АТĂЛ“ альманаха**

**çырăнса илĕр!**

# „ЯЛАВ“

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре кăларакан илемлĕ литературă тата обществăпа политикă журналĕ.

**ХАКĔ:**

12 уйăха—2 тенкĕ те 40 пус; 6 уйăха—1 тенкĕ те 20 пус; уйрăм номерĕ—20 пус.

# „ТĂВАН АТĂЛ“

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн икĕ уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикăпа искусствă тата историпе публицистикă альманахĕ.

**ХАКĔ:**

12 уйăха—1 тенкĕ те 80 пус; уйрăм номерĕ—30 пус.

**Республикă тулашенче пурăнакансен подпискă укçине çак адреспа куçарса памалла:**

***Чебоксары, Дом связи, „Союзпечать“.***

# КĔТСЕ ИЛ...




К. Архипов музыки.

А. Лукин сăвви.

Шурă шупăр уртнă çамрăк улмуççи,
Тунсăха сирсемччĕ, пулччĕ чун уççи.
Ах, улмуççи уçмарĕ çамрăк кăмăла.
Ăш вăркать пĕлмесĕр канлĕх-çăмăла.
Çамрăксен юрри те, çамрăксен ташши,
Кăмăла çĕклетчĕ, пулччĕ чун ăшши.
Ах, юрă юраймарĕ çамрăк чĕрене,
Ташă татаймарĕ сар хĕр тунсăхне.
Чун юратнă тусăм питĕ катара.
Вăл хĕлле çул тытрĕ Казахстан таран.
Ах, ма пĕрле каймарăм эпĕ ун чухне.
Кӳрентертĕм хытă тусăмçăм чунне.
Çурхи çил, çунат хуш, юррăм-кăмăла,
Чун савни патне, çил, вĕçсе кай, капа:
Эх, сан тусу кипет, те, çĕнĕех çĕре
Вăл сана манман, те, тытнă чĕререх.